Е.Е.Ерагин

# ЮНКĂПОÇ
# тата СПИРИДОН ЯНДУШ



Чăваш халăх академийĕ

**Е.Е.ЕРАГИН**

# ЮНКĂПОÇ ТАТА СПИРИДОН ЯНДУШ

Шупашкар
«Çĕнĕ вăхăт» издательство
2006

554-79

УДК 821.512.111
ББК 83.3(2Рос=Чув)
Е 69

*Пичете Чăваш халăх академийĕн комиссийĕ 14.12.2006 çĕннĕ.*

Кĕнекене кăларма МСО «Моргаушская» ЗАО тĕп директорĕ
*Виталий Владимирович Коротников* пулăшнă

Кĕнеке тишкерӳçи: Гуманитари ăслăлăхĕсен Чуваш патшалăх институчĕн этнологи пайĕн пуçлăхĕ, истори ăслăлăхĕсен кандидачĕ *Г.Б.Матвеев.*

Кĕнеке хаклавçи: Чăваш таврапĕлӳçисен пĕрлĕхĕн ертӳçи, Гуманитари ăслăлăхĕсен Чăваш патшалăх институчĕн сăмахлăх пайĕн пуçлăхĕ, чăваш халăх ăсчахĕ *В.П.Станьял.*

Ерагин Е.Е.
**Е 69** Юнкăпоç тата Спиридон Яндуш. — Шупашкар: «Çĕнĕ вăхăт», 2006. — 144 с.

ЧР Муркаш районĕнчи Юнкăпуç ялĕнче Вăтам Атăлçи халăхĕсен пĕрремĕш таврапĕлĕçи, этнограф-çыравçи, историкĕ, Раççей географĕсен пĕрлĕхĕн членĕ Спиридон Михайлович Яндуш (1821—1861) çуралса ӳснĕ. Кĕнекере паллă ăсчахăн кунçулĕнчи самантсем, несĕл-тăванĕсем, тăван ялĕ пирки каласа панă, пултарулăхĕн хăшпĕр енĕсене, яндушиана аталанăвне тишкернĕ.

РГУ "Госархив печати Чувашии"
Минкультуры Чувашии
Обязательный бесплатный экземпляр
"29" января 2007 г.
№ 79

© Ерагин Е.Е., 2006.
© Чувашская народная академия, 2006.

# ЮНКĂ ТАТА ЮНКĂПОÇ ЯЛĔ

Юнкă шывĕ Муркаш районĕнчи Янăм, Чемей, Юнкă ял тăрăхĕсенче пуçланса Туçиçармăс районĕнчи (Марий Эл) Мăнъял (Когосола, с.Троицкий Посад) тата Покра ялĕ (Похросола, с.Покровское) хушшипе сылтăм енчен Атăла юхса кĕрет. Юханшыв тăршшĕ 60 çухрăм, бассейнĕ (унпа çыхăннă çĕрсен лаптăкĕ) 450 тăваткал километр шутланать. Чăвашъенчи тăршшĕ – 24 км, бассейнĕ – 176 тăв. км. Шыв калăпăшĕ нумаях мар пулин те кунта Юнкă-Хораçка тăрăхĕнче кăна 1907 ç. 6 шыв арманĕ (талăкра вăтамран 60 пăт авăрту хăвачĕллĕ) ĕçленĕ[1].

Юханшыв ячĕ икĕ-виçĕ пин çул каяллах пулнă, ун чухнехи халăхсенчен пирĕн чĕлхесене куçнă. Пайăр ятсен тĕпчевçисем ăна ханты чĕлхинчи *йынк* «шыв» сăмахпа çыхăнтараççĕ. Хальхи вăхăтри чăвашла ăна Йăнкă, Йункă; çармăсла та Йăнкă (Йынгы), Йункă теççĕ. Вырăсла та вăл çаплах куçнă: Йункă (Юнга). Ун пек вĕçленӳллĕ шыв ячĕсем Чăвашъенче сахал мар: Штранкă, Рункă, Ронкă, Онкă, Танкă, Вянкă, Коршанкă, Слюнкă т.ыт.-те. Юханшыв ячĕ ял тăрăхĕн ятне куçнă. Кӳршĕри Туçиçармăс районĕнчи çак шыв çинчен ялсем те Юнкă ятпа тăраççĕ: Йăнкă Кушĕркĕ (Юнго-Кушерга), Йăнкоттă (Юнготы), Йăнкă Парнинкяш (Юнго-Пернянгаш), Иси Йăнкă (Малая Юнга), Ӳл Арйăнкăвуй (Нижнее Сарлайкино) т.ыт.те[2].

Хăй вăхăтĕнче çул çинчи сыншăн çак юханшыв пĕлтерĕшлĕ пулнă, асра юлнă. Çакна Куçма Турхан çыравçă та хăйĕн XVI ĕмĕрхи Атăл тăрăхĕнчи лару-тăрăва сăнлакан романĕнче палăртать: «Тукай... хăй суйласа илнĕ вуникĕ тĕкĕрçипе çула тухрĕ... Шупашкара çитиччен вĕсем казаксен ушкăнĕпе пĕрле пычĕç. Шупашкартан иртсен, аслă çултан пăрăнас, терĕç. Иккĕмĕш кунĕнче турханпа ун сыннисем Юнкă шывĕ хĕррине çитрĕç...»[3]

С.М.Яндуш 150 çул каялла çырнă тăрăх, Юнкăпуç ялйышĕн несĕлĕ, тĕп аслашшĕ Янтуш шутланать. Çак сыннăн тач тăванĕ Янтим (е Янтимĕр) пулнă, унăн тăхăмĕсем те хальхи Юнкăпуçне килсе вырнаçнă[4]. Вĕсем çуралса ӳснĕ вырăна халĕ Киçорт теççĕ, ун патĕнче Киçорт вăрманĕ, Тăмвар поçĕ, ялтан пĕр виçĕ çухрăмра. Тата малтан кунти сынсем Çоркампӳрт варĕнче, Текерле кокри патĕнче пурăннă. Çоркам пӳрт тесе юнкăсем ун чух пӳрчĕсене йывăça вăтаран çурса тунăран каланă. Çакăнтан юлашки çемьесем (Тьоппи, Ваçик, Текерле килйышĕсем) кайран Явăльня вырăнне куçса ларнă. Çавăнпа




Юнкă çĕрĕ-шывĕ. XX ĕмĕр вĕçĕ.

та маларах ăна Явăльня та темен-мĕн, Çоркампӳрт тенĕ[5]. Вĕсем ял вырăнĕ ытла шурлăхлă пулнăран куçса кайнă. Кунти вырăна 1957 ç. археологсем (А.П.Смирнов, Н.В.Трубникова) тĕпченĕ, çывăхра ун чух утар та пулнă. Вĕсем ала тата чăпта евĕр эрешлĕ чăм катăкĕсене тупнă, пĕрене юлашкисем, хуралтăсем, çăлсем пулнă вырăнсене асăрханă. Археологсен пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх, Çоркампӳртре çынсем икĕ пин çурă каялла пурăннă, археологири Апаш культурине çывăх йăхсем пулнă[6].

Юнкăпуçсен çĕрĕ çинчех, ялтан пĕр тăват çухрăмра, Тăмварĕнчен лерелле, Поп çĕрĕ хыçĕнче, халь вăрман чăтлăхĕнче Холавар пур, ялтан кăнтăр-анăçалла. Ун пирки С.М.Яндуш та палăртса хăварнă. Кунти Холату вырăнне (хăйне евĕр крепость) археологсем тĕпченĕ. Вăл 12-15 м çӳллĕш сăмсах çинче, йĕри-тавра тарăн çырма, тӳрем енче валсем, хушшисенче урсем (çĕр шăтакĕ, канав). Крепость сарлакăшĕ 20-36 м, тăршшĕ – 115. Валĕсене купаланине шута илсе кунта пĕр пин-икĕ пин çул каялла халăх самаях шавланă[7].

Юнкăпуç çумĕнчех, Тӳрорам хапхинчен пĕр çĕр метртра, 1 Май выççăлккине каякан çулпа Олăп тăпри (курган) пур. Уйра вĕçĕм сухаланипе-сӳреленипе, шел пулин те, вăл халь

ытлах палăрмасть. 1920 çç. ялтан хĕвеланăçнелле пĕр çухрăмра ун пек икĕ тĕмеске пуррине те палăртнă: çӳллĕшĕ пĕр аршăн çурă, сарлаккăшĕ пилĕк чалăш таран пулнă[8]. Киçорт çумĕнчех Валĕм-хоçа киремечĕ пур. Унта авалтан юнкăсем Çӳлти Торра асăнса пурăннă. Вăл вырăн сăваплă, таса шутланать[9]. Валĕм-хоçа тĕп киремечĕ (керемĕ) Пӳлерте (халь Тутар республикинчи Алексеевски районĕ) вырнаçнă, унта ĕлĕк питĕ пысăк хула, Атăлçи Пăлхарăн тĕп хули пулнă. 1236 ç. тутар-монголсем нумай çул çапăçнă хыççăн ăна аркатсан, сывă юлнă Пӳлер çыннисем ăçта-кирлĕ унта саланнă. Хăйсем çитсе вырнаçнă çĕрсенче вĕсем çĕнĕ Валĕм-хоçа киремечĕсене уçнă. Çав вырăнсенче çĕнĕ чăваш ялĕсем кайран йĕркеленнĕ. Валĕм-хоçан хăйсен ял тăрăхĕнчи сăваплă кĕтесне халь тата Анатри Экремре Ваймкуча теççĕ (Итăкачкассипе Ярапайкасси хушшинче), Тури Кĕнерте – Вармуча (Яраккассипе Калайкасси хушшинче) т.ыт.те. Нумай çĕрте вара – «Киремет варĕ» кăна, Юнкăри варианчĕ – Валĕмпоçай, Спиридон Яндушăн – (Палăн-хоçа е Валĕм-хоçа). Вĕсем пурте ял тăрăхĕсен малтанхи тĕп вырăнĕсем çумĕнче вырнаçнă[10]. Апла пулсан, юнкăсен малтан вырнаçнă кĕтесĕ те Мăнçолпа Холавар, 1 Май выççăлкки хушшинче пулнă. Юнкăпоç тени те çавăнти



Яндуш кокри. 26.11.2006.

Юнкă шывĕ юппинчи Киçорта çапла каланăран тухнă пулмалла.

1910–1920 çç., уйрăм выселок-хуторсене тухнă чухне, ахальтен мар теприсем малтанхи ял вырăнĕсене йышăннă. Юнкă ялĕнчен уйрăлса тухнă Чагаксемпе Крыловсем (Чаппи Иванĕ, Павăлĕ) вара пӳрчĕсене лăпах Янтуш çуралса ӳснĕ кил вырăнне лартнă пулнă. Вĕсен хуторне Чакак хуттăрĕ е Крылов хуттăрĕ тенĕ[11].

1730 çç. тĕлĕнче Янтушпа тăванĕсем, пĕр вунă кил, Киçортран (ун чух ăна Юнкăпоç тенĕ ĕнтĕ) Ваçки варĕпе Яшка (е тата Оличча) варĕ хушшинчи сăрта, вăкăр хыççăн килнĕ тет-и, пурăнма куçаççĕ, вăл вырăна халь Янтуш кокри теççĕ. Çырмара валаклă çăл алтаççĕ (Янтуш çăлĕ е Волаклă çăл), Ваçки варĕ тухнă çĕрте Кантăр кӳлли тăваççĕ т.ыт.те. Янтуш çăлне ĕлĕкхи çулсенче ялĕпех выльăх шăварма аннă, пĕр хĕрĕх çул каялла, ялта водопровод тусан, вăл çăла пăрахăçланă[12].

Хальхи Юнкăпуç вырăнĕнче Янтуш куçса лариччен те темиçе кил пулнă пулмалла. Кун пирки уйрăм юмах та пур. Юнкăпа çыхăннă сыпăкĕн кĕске содержанийĕ çакнашкалтарах. Каршлăх вăрманĕнче Сĕнтĕр шывĕн пĕр çӳллĕ сăмсахĕнче Сартон сăрчĕ е киремечĕ пур (унта пĕр XV ĕмĕрччен холату –



Тури коккăр. 26.11.2006.



Çĕнĕ пӳрт ĕçки чух. Малта: 1) Василий Семенович Яндушкин,2) Елена Ивановна Яндушкина, 3) Аркадий Алексеевич Яндушкин; хыçалта: 4) Владимир Алексеевич Яндушкин, 5) Лаврентий Алексеевич Яндушкин, 6) вĕсен кĕрӳшĕ Александр Ярдыков (Торайран). Тарасов сăнӳкерчĕкĕ.

çирĕплетнĕ вырăн пулнă, валĕсемпе урĕсем ку таранччен лайăх упраннă). Çавăнта Сартон ятлă хурах пурăннă пулать. «Вăл çывăхри ялсенчи пуянсене çаратса пурăннă. Илсе килнĕ пурлăха хăйĕн хӳшшинче упранă. Кунта Сартон хĕлле те, çулла та пĕчченех пурăннă, хăйĕн тăванĕсем патне йĕлтĕрпе кайса çӳренĕ. Пĕрре, ачисене пухса, амăшĕ çапла каланă пулать: «Халĕ ĕнтĕ, ачамсем, çитĕнсе çитрĕр, тĕреклентĕр. Аçуна вĕлернĕ Çеçмер ялне кайса пăхăр-ха. Унти ращари пĕр вăтă юман çинче пыл хурчĕсем пурăнатчĕç. Вĕсем вилсе пĕтнĕ пулсан – сире Çеçмер халăхĕ йышăнĕ. Кайиччен малтан, кассан этем юнĕ тухакан йывăçран йĕлтĕрсем тăвăр», – тет амăшĕ. Шырасан-шырасан, виçĕ ывăл кассан этем юнĕ тухакан хайхи йывăça шыраса тупаççĕ. Унтан каллех киле амăшĕ патне таврăнаççĕ те: «Кассан этем юнĕ тухакан йывăça тупрăмăр, аран-аран касса ӳкертĕмĕр, анчах та вăл татăлмасть», – теççĕ ачисем. Амăшĕ çапла вĕрентсе калать: «Апла пулсан, йывăç урлă пĕр кĕтӳ выльăх каçарăр, вара вăл татăлĕ», – тенĕ. Чăнах та, кĕтӳ каçсан, хайхи йывăçран питех те лайăх йĕлтĕр туса хатĕрленĕ.



Юнкăпоç çамрăкĕсем. Малти ретре: 7) Яндушкина Пелагея Ивановна; хыçалта: 9) Селюшкин Автоном Иванович (1 май выç.), 14) Яндушкин Михаил Федорович (1934 çç., токарь пулнă), 15) Яндушкин Захар Алексеевич, 16) Апроськин Михаил Федорович, 18) Яндимиров Гурий Алексеевич (1930–2005). Шулчă праçникĕнче (троица). Чирĕккасси-Оринă, 1960 ç.

Виçĕ ывăл Атăл урлă каçса, Çеçмер вăрманĕнчи ватă юмана шыраса тупнă та хăпарса пăхнă: хăвăлта пыл хурчĕсем пулман, вилсе пĕтнĕ. Çеçмер халăхĕ йышăнмасса пĕлсе, виçĕ ывăл, пĕр-пĕринпе сывпуллашса, виçĕ еннелле уйрăлса кайнă: асли – Йонкă – хальхи Юнкăпуç ялĕ вырăнне кайса вырнаçнă, вăталăхĕ – Вăртах хальхи – Ильинкăран тăвалларах Вăртах вăрри текен вырăна çитсе вырнаçнă, кил-çурт çавăрнă. Кĕçĕнни – Сартон – Каршлăх вăрманĕнчи хальхи Сартон сăрта килсе вырнаçнă...»[13]

Юнкăпуçра XX ĕмĕр варринелле темиçе кĕтес-урам пулнă. Янтуш кокринче пĕр вунă кил вырнаçнă. Анчах ăна çапла ытти юнкăсем каланă. Ялйышра вара ун чух Хĕр кокри ятпа çӳренĕ – кашни килте темиçешер хĕр çитĕннĕ. Вырăсла халь ăна «ул. Яндуша» тесе палăртаççĕ. Ку урам тĕлĕнче, çырма тепĕр енче, 1960 çç. вĕçĕнче лартнă хыр вăрманĕ ешерет. Мăнçол хĕрринченех ку кĕтесе Тӳрорам анать. Ку вăрăм урама халь «ул. Дружбы» тесе палăртаççĕ. Вăл Турикоккăрпа Анаткоккăр çине пайланать. Турикоккăрпа юнашар Мăнçол хĕрне

Митуш кокри тухать, кунта 10 кил ытла ларать. Митуш кокрипе МСО «Моргаушская» хушшинче Пăмкка кокри (унта ПМК лартнă çуртсем). Яшка варĕ (е Оличча варĕ) тепĕр енче пĕр енлĕ урам – Яшка екки (е Яшки екки) вырнаçнă. Ăна халь «ул. Солнечная» тесе çыраççĕ, кунта çирĕм виçĕ кил, малтан пĕр 15 кил пулнă. Яшка варĕнче çур ĕмĕр кăна каялла вăрман пулнă, шĕшкĕ, юман, çăка çитĕннĕ. Кунти мулкачсене тытма сунарçăсем те килнĕ. Митри еккинче те темиçе кил ларнă. Иртнĕ ĕмĕрте кунта пурăннă Митри Сорокинăн хăйĕн 5 ывăл пулнă. Марппи сăртĕнче те пӳртсем ларнă. Ячĕ Марфа ятран. Хăй, Сорокина М.И., 1990 ç. тĕлĕнче вилнĕ. Ялта ун чух пĕр Кантăр кӳлли анчах пулнă. Кайран вара Колхос пĕви, лаша витине хирĕç, хушăннă[14].

Малтанхи вăхăтра ял таврашĕнчи пĕр вырăн та ятсăр пулман. Акă Коминтерн еннелле: Çĕмĕртлĕх варĕ, Йĕтĕн варĕ, Çăва варĕ, Çемук варĕ, Охханяç варĕ, Хăртнă варĕ, Çĕнпӳ варĕ. Ĕлĕкхи ял вырăнĕ енче Раçка варĕ, Маркка варĕ, Тарăн вар, Хĕрлĕ вар, Вăрăм сăрт, Сиçăл олăхĕ, Çĕлту кĕперĕ т.ыт.те. Уйрăмах уйсем пĕлтерĕшлĕ пулнă: Илмечĕ кокри (Текерле варĕпе вăрман хушшинче), Пĕчĕк ой (Мăнçол çумĕнчех), Волк(кă) ойĕ (вăрман тепĕр енче, Тарăн вар çумĕнче), Поп çĕрĕ (Илмечĕ кокринчен тепĕр енче, Тăм варĕ çумĕнче, çӳреме инçе тесе Юнкă пачăшки ăна пĕтĕмпех çынсене тара панă), Сиçăл тепĕр екки (Киçорт вăрманĕнчен кунталла, çĕр га ытла), Çиларман ой (виçкĕтеслĕрех Явăльня енчи уй, унта явăльнясен икĕ арман ларнă), Ваçкивар айкки (Янтуш кокринчен тухсан), Çӳлти ой е Çĕлту ойĕ (пĕр çурри юнкăпуçсен, тепри явăльнясен пулнă). Улăхсем пирки те ялйыш самаях хумханнă: Касански олăхĕ (Коминтерн патнелле), Ониç çаранĕ, Тута-çута, Текерле варĕ, Хырлă варĕ. Вăрмансенчен: Йĕтĕн варĕ, Волк(кă) вăрманĕ, Явăльня вăрманĕ, Ванюшки вăрманĕ, Хачăк вăрманĕ[15].

1920 çç. Чĕке ту, Кур варĕ, Именийĕ кокри, Йаппони сăрчĕ, Киçол вырăнĕ, Волккă сăрчĕ пуррине палăртнă[16]. Яппони сăрчĕ (çĕрĕ) пирки истори халапĕ те пур: «1904 ç. Яппон вăрçи пуçланнă. Тытăнать хай патша халăха пуçтарма. Чăвашсенчен те вăл чылайăшне вăрçа илсе кайнă. Ун чухне халăх ытла та чухăн пулнă мар-и çав! Салтаксен фронта çитмелĕх те укçа пулман. Шутлаççĕ те вулăсра, призывниксене укçа тупса парас тесе, пĕр уй çĕрне сутаççĕ. Çав уй çĕрĕ вулăспа юнашарах



Юнкăпоҫсем ҫăва ҫине кайма пуҫтараннă. Алă ҫěклесе 1) Васюхин И.А. (1924 ҫ.ҫ.) тăрать, малалла: 2) Васюхина Марфа Петровна (1922 ҫ.ҫ.), 3) Яндушкина Таисия Ивановна (1927–2000), 4) Яндимиркина Галина Егоровна, 6) Яндимиркин Клементий Егорович (куҫлăхпа), умěнче 5) арăмě; 7) Атласкина Зоя Калистратовна, 8) Яндимиркина Лариса Егоровна; пăхса лараҫҫě: Сюльдеркина Анна Петровна (1914 ҫ.ҫ.), Алексеева Лидия Ивановна (1923 ҫ.ҫ.), Кузейкин Евгений Викторович.



Юнкăпоҫ туй халăхě. Малта лараҫҫě: 1) Яндушкин Захар Алексеевич, 2) Яндимиркин Михаил Нестерович, 3) Иванов Григорий Иванович (Орпашран), хыҫалта тăраҫҫě: 3) унăн арăмě Иванова (малтан Яндимиркина) Лидия Алексеевна, 5) Яндушкин Леонид Иванович, 6) Суворова Регина Никитична (1929 ҫ.ҫ., Ярославккăна к.к., малтан Яндимиркина) 7) Яндараев Тимофей Егорович (Ҫармăскассинчен), 8) унăн арăмě Яндараева Мирония Алексеевна (1928 ҫ.ҫ., малтан Яндимиркина), 9) Суворов Николай Филиппович (Ярославккăран), 10) Яндимирова Мария Прокопьевна (1929-2001), 12) Яндимиров Гурий Алексеевич (1930-2005). Ҫармăскасси, 1959.

выртнӑ, тет. Ҫавӑнтан пуҫласа ҫак ҫӗре Яппон(и) ҫӗрӗ теме пуҫланӑ...»[17]

Юнкӑпуҫ ҫӗрӗ-шывӗ, ялйышӗ, ял ӑшши кунти хӑшпӗр ҫынсене поэзи патне те туртнӑ, сӑвӑсем хывтарнӑ. Чи малтанах ӗнтӗ С.М.Яндуш пулнӑ. 1852 ҫ. вӑл Юнкӑпуҫ хӗрӗ ячӗпе, юратнӑ ялтан ют ҫӗре качча тухса кайма тивнишӗн хурланнине палӑртса, А.С.Пушкин пекех ҫапла ҫырнӑ:

«О ты, Юнга, родной мой край,
Где колыбель меня приняла,
Лью слезы, говоря: прощай!
Я сиротой печальной стала.
Прощай, страна моих отцов,
Прощайте, дни мои младые!
К тебе я сохраню любовь,
В пределы удалясь чужие.
Мой конь не всю меня увлек:
Здесь я часть жизни оставляю,
Прими, прими ее навек,
Тебе в дань сердце обрекаю!»[18]

XX ӗмӗр вӗҫӗнче Геннадий Кулген ҫырнӑ «Юнкӑпуҫ» сӑвӑ та кӑсӑклӑ:

«Вӑрман урлӑ шурӑмпуҫ
Ҫул тӳпене ҫутатать.
Чӑваш ялӗ – Юнкӑпуҫ,
Ырӑ кунпа вӑранать.

Каҫса кайса автансем
Ӑмӑртмалла автаҫҫӗ.
Ир вӑраннӑ куракседм
Ӗҫлӗ пулса вӗҫеҫҫӗ.

Тӑван яла курасшӑн
Хӗвел тухать васкаса.
Шевлисене ачашшӑн
Сапалать вӑл савӑнса.

Ах, мӑнтарӑн ялӗ те
Ӗмӗр пекех мӑнаҫлӑ.
Асаттесен йӗркипе
Ҫич сӑрт ҫинче вырнаҫнӑ.

Йӗри-тавра, уй-хирте,
Пуян тырӑ ҫӗкленет.
Ҫырмари ҫут ҫӑлкуҫран
Юнкӑ шывӗ вӑй илет.

Ытарайман курӑнать,
Турри тавра илемне
Пичетленӗ туйӑнать
Ялти ҫынсен сӑн-питне.

Ҫӗре ҫити таймапуҫ,
Тайӑлать шуралнӑ пуҫ.
Эс пурришӗн тавтапуҫ,
Чӑваш ялӗ – Юнкӑпуҫ!»[19]

1781 ҫулччен Юнкӑпуҫ, пӗтӗм Юнкипе пӗрлех ӗнтӗ, Етӗрне уесӗнчи Етӗрне вулӑсне кӗнӗ, хыҫҫӑн, 1920 ҫулччен, Чикме уесӗнчи Тутаркас (малтан Олчиҫ) вулӑсне. 1920 ҫ. ку вулӑс Шупашкар уесне куҫнӑ. Уес-вулӑссене 1927 ҫ. пӗтерсен ял Тутаркас (1939 ҫ. хыҫҫӑнхи ячӗ – Сӗнтӗр) районне кӗнӗ, хыҫҫӑн пӗр ҫул ытларах – Етӗрне районне. 1964 ҫултанпа Юнкӑ ялӗсем Муркаш районне кӗреҫҫӗ. Юнкӑ ялӗсем мӗн 1900-мӗш ҫулсемччен пӗр Юнкӑ ялӗ шутланнӑ, вырӑсла ячӗ – Юнго-Ядрино. 1909 ҫ. темиҫе общество ҫине пайланнӑ (сельское общество). Унччен пӗтӗм Юнкин пӗр староста, пӗр хырҫӑ шутлакан пулнӑ пулсан, хыҫҫӑн кашни обществон – хӑйӗн. 1908 ҫ. декабрьте Юнкӑпоҫ обществине (Юнго-Ядринское сельское общество) Юнкӑпуҫ (60 кил) тата Явӑльня (55 кил) кӗнӗ, Мӑнъял обществине – Б.Чуваки (138 кил), Чоккасси обществине – М.Чуваки (50 кил), Ҫармӑскасси обществине – Ҫармӑскасси (64 кил) тата Кӗҫӗн Кӑпас (105 кил). Йолккӑнсем икӗ улпутӑн пулнӑ пирки 1-мӗш Юнкӑ обществи (24 кил) тата 2-мӗш Юнкӑ обществи (38 кил) ҫине пайланнӑ[20]. XIX ӗмӗртех пысӑк ялӑн уйрӑм касӗсене уйрӑм ялсем пек шутлама пуҫлаҫҫӗ. 1928 ҫ. кӑна ҫак ялсене (малтанлӑха кӑпассемсӗр пуҫне) пӗр Юнкӑ сельсоветне (халь – тӑрӑхӗ) пӗрлештереҫҫӗ. Унччен пӗр ҫул юнкӑпуҫсем Юнкӑпуҫ сельсоветӗнче пулнӑ, унта тата 1 Май выҫҫӑлккипе Явӑльня, колхозсем тӑвиччен пулнӑ Белов (е Крылов) хуторӗ кӗнӗ[21].

1740 ҫҫ. Юнкӑ тӑрӑхӗнче 140 ят (арҫын) шутланнӑ. 1781 ҫ. – 222 ят (ун чухне ӑна ҫармӑс ялӗ тесе палӑртнӑ)[22]. XVIII ӗмӗр вӗҫӗнче Юнкӑпуҫӗнче 17 кил шутланӑ (Явӑльняра – 14 кил, Мӑнъялта – 30 кил, Чоккассинче – 30 кил, Кӑпаскассинче – 19 кил, Ҫармӑскассинче – 13 кил). Тӗп касне (ялне) «Большая Юнга, Ядрино тож» тесе кӑтартнӑ[23]. 1859 ҫ. Юнкӑпоҫӗнче 29 кил пулнӑ, 88 арҫынпа 94 хӗрарӑм пурӑннӑ (Мӑнъялта – 56 кил, Чоккассинче – 35 кил, Мӑн Кӑпасра – 51 кил, Кӗҫӗн

Сюльдеркин Виталий Петрович (1929 ç.ç.), Яндушкин Василий Яковлевич (1930 ç.ç.), Яндимиркин Гурий Алексеевич (1930 ç.ç.). 1952 ç.





Малта тăраççĕ: 1) купăспа Поляков Меркурий Ефремович (1926—1996), 2) Аргандеева Матрена Ивановна (1925 ç.ç.), 3) Гаврилова Александра (1927 ç.ç., кĕленчепе, 1 Майран килнĕ); хыçалта: 5) Кузьмина (Илугина) Альфа Ивановна, 6) Ефимова Валентина, 7) Гаврилов Александр Иосифович (1956 ç.ç.), ун умĕнче 8) Салдакеева Алевтина (Явăльняран), 9) Аргандеев Василий (Мăнъялтан). 1970 çç.

Кăпасра – 25 кил, Явăльняра – 27 кил; Йолккăнта – 38 кил)[24]. 1899 ç. Юнкăпоçĕнче 57 кил, 154 арçынпа 160 хĕрарăм пулнă. Çав вăхăтрах Юнкă салинче 161 кил шутланнă, Йолккăнта – 55 кил, Явăльняра – 45 кил, Çармăскассинче – 53 кил, Кăпасра – 130 кил. Ун чух Юнкă салинче виçĕ пуçламăш шкул ĕçленĕ: чиркӳ прихут шкулĕ (29 арçыначапа 8 хĕрача), земство шкулĕ (39 арçыначапа 6 хĕрача) тата хутпĕлӳлĕх шкулĕ. Ун пек шкул 1899 ç. Йолккăнта та пулнă (16 арçыначапа 6 хĕрача)[25]. 1907 ç. умĕн юнкăпуçĕнче 324 çын пурăннă, Юнкă тăрăхĕнче пурĕ – 2997 çын (вăл шутра: Б.Чуваки – 677 çын, Мăн Кăпасра – 558 çын)[26]. 1923 ç. вĕçĕнче Юнкăпуçра 71 кил тата 266 çын шутланнă, сельсовет та кунта пулнă[27]. 1926 ç. перепись тăрăх, кунта 78 кил, 169 арçын тата 208 хĕрарăм пулнă. Явăльняра ун чух 73 кил, 317 çын пулнă; Кĕçĕн Кăпасра – 62, 292; Çармăскассинче – 78, 405; Чакак хуттăрĕнче – 1, 6; Мăнъялта – 82, 387; Чоккассинче – 58, 253; Олăхра – 80, 346 (Олăх, вырăсла «Ларготы», ялне хутсем çине революци хыççăн кăна палăртма пуçланă); Мăн Кăпасра – 132, 612; Йолккăнта – 76, 326[28]. Тепĕр çулне, сельсовет председателĕ М.Яндушкин каланă тăрăх, Юнкăпуçĕнче 83 кил, 402 çын пулнă[29]. 1985 ç. пуçламăшĕнче Юнкă тăрăхĕнче 2250 çын пурăннă:



Сулахайран сылтăмалла лараççĕ: 1) Борзаев Порфирий Иванович (Яшкиеккинчен), 2) ун майра арăмĕ, 3) Куликова (хĕрача), 5-6) Куликов Николай Василевичпа Алевтина ачисем Кольăпа Вадим, хыçалта 8) Куликова Евдокия Ивановна (1914 ç.ç.) тăрать. 1996 ç.



1 ретре: 1) Васюхина Рикса Ивановна (1948 ç.ç., халь Шаламкова), 2) Надежда (Яндушкин В.И. арăмĕ) ачипе, 3) Яндушкин Николай Васильевич (1905 ç.ç.), 4) Яндушкин Иван Васильевич (1895 ç.ç.), 5) унăн мăшăрĕ Евдокия (Орпашран пулнă); хыçалта тăраççĕ: 6) Яндушкин Виталий Иванович (1932-2002) ачапа, 8) Васюхин Иван Алексеевич (1924 ç.ç.), 9) мăшăрĕ Марфа, 10) Куликова Нина Павловна (Куликов И.А. мăшăрĕ, Смоленскран пулнă), 11) Яндушкина Валентина Семеновна.

Юнкăпуçра – 246 çын (84 кил), Юнкă салинче – 904 (287), 1 Май выççăлккинче – 174 (59), Йолккăнта – 14 (7), Коминтерн выççăлккинче – 32 (15), Кăпасра – 489 (165), Çармăскассинче – 296 (92), Канаш выççăлккинче – 95 (34)[30]. 2002 ç. пуçламăшĕнче Юнкăпуçра 99 кил тата 281 çын шутланнă[31].

Ялйышăн пĕрлехи пурнăçĕнче хальхи вăхăтра ялпуçĕсен (старостăсен) ĕçĕ-хĕлĕ витĕмлĕ. Матанхи Совет влаçĕн çулĕсенче ăна колхоз бригадирĕсем туса пынă. Юнкăпуçĕнче, темиçе çул ĕнтĕ, ялпуçĕ пулса обществăлла майпа Василий Митрофанович Илугин ĕçлет. Хăй вăл «Моргаушская» МСО-ри шофер пулин те тăван яла тирпей-илем кĕртессине, тĕрлĕ ĕçсене йĕркелессине пултаруллă туса пырать. Газ кĕртес тĕлĕшпе те сахал мар тăрăшнă. Ахальтен мар Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Васильевич Ермаков унăн ĕçне яланах пысăк хак парать, чи лайăх ялпуçĕсен шутне илет[32]. Çакна май çитмĕл çула яхăн каялли ялти суйлав кампанийĕн пĕр протоколĕпе паллаштарас килет. Вăл суйлав Совет влаçĕ вăхăтĕнчи чи ирĕклĕ

суйлав пулнӑ, кандидатурисене пӗтӗмӗшле малтанах парти органӗсем пӑхса тухнӑ пулин те.

«Протокол (№ 16) предвыборного собрания крестьян-колхозников и единоличников д. Юнгапоси Юнгинского сельсовета Сундырского района ЧАССР от 16.11.1939. Присутствуют 90 человек и представитель РК ВКП (б) Кузейкин Николай Петрович... Постановили выдвинуть колхозника Яндушкина Федора Максимовича, 1894 г.р... постановили выдвинуть вторую кандидатуру в депутаты Юнгинского сельского Совета депутатов трудящихся тов. Апроськину Елизавету Михайловну, 1916 г.р., трактористку-стахановку. Слушали выступление Апроськиной Елизаветы Михайловны. Она выставляет третью кандидатуру из 9 округа тов. Илугину Раису Александровну, члена ВЛКСМ, происходящей из бедняцкой крестьянской семьи. Поддерживают кандидатуру Илугиной Раисы Александровны тов. Салдакеев Е.И., Апроськина Елизавета, Яндимиркин Никита, Кузейкин Николай Петрович, Яндушкин Семен Тимофеевич. Слушали выступление Яндушкина Семена Андреевича. Он выдвигает кандидатуру Яндушкина Ивана Васильевича. Поддерживают кандидатуру Яндушкина Ивана Васильевича тов. Суворов Александр Иванович, Яндушкин Семен Андреевич. Постановили выдвинуть третью кандидатуру в депутаты Юнгинского сельского Совета депутатов трудящихся тов. Илугину Раису Александровну, 1921 г.р., учетчицу колхоза «Родник», проживающую в дер. Юнга-Поси.

Слушали выступление Суворова Николая



Васюхин Алексей Егорович (1896–1968) кинӗпе Марфа Петровнӑпа (1922 ҫ.ҫ.) тата мӑнукӗне Алешӑпа (1949 ҫ.ҫ.) лараҫҫӗ; хыҫалта Хыркасси-Моркашри тӑхлачи (кинӗн амӑшӗ) Сорокина Евдокия Захаровна тӑрать.



Ершов Михаил Иванович (1923 ç.ç., малта сулахайра ларать), 4) Яндушкин Егор Васильевич (1921-1983), 6) Ершова Хреттин (1925 ç.ç.) 5.06.1972.

Ивановича. Он выдвигает кандидатуру из 11 округа тов. Яндимиркина Егора Яковлевича, 1910 г.р., члена ВЛКСМ, председателя колхоза, проживающего в дер. Юнга-Поси. Поддерживают кандидатуру: Седлова Перасковья, Суворов Н.И., Салдакеев Егор Ис. Постановили выдвинуть кандидатуру из 11 округа тов. Яндимиркина Егора Яковлевича, члена президиума сельсовета.

III. Слушали о выделении доверенных (доклад тов. Салдакеева Е.И.). Выдвинуты: Кузейкин Ник. Петр. – Ефремова Е.П., Апроськина Елиз. – Суворова Е.П., Яндушкин Сем. Тим. – Суворов А. Ив., Яндимиркин Е.Як. – Кузейкин Исай Петрович, Гусев Федор Зах. – Яндушкин Семен Тим.

Постановили выделить доверенных по выбору в районные и местные Советы депутатов трудящихся: Ефремову Евгению Павловну, 1920 г.р., учительницу; Суворова Александра Ивановича, 1904 г.р., колхозника-агитатора; Кузейкина Исая Петровича, 1920 г.р., комсомольца, колхозника; Суворову Елену Павловну, 1923 г.р., колхозницу, комсомолку;

Яндушкина Семена Тимофеевича, рождения 1895 г.р., колхозника»[33].

Асăннă пухăва ун чух (16.11.1939) çак çынсем хутшăннă: Яндимиркин Егор Яков, Илугина Раиса, Ефремова Евгения П., Кузейкин Николай, Салдакеев Егор Исаевич, Суворов Николай Иванович, Суворов Поликарп П., Суворова Елена Павловна, Изонова Наталия, Яндушкина Анисия Ефремовна, Тепеев Степан Павлович, Анчиков Василий, Яндушкин Иван Васильевич, Яндушкина Татьяна Васильевна, Яндимиркин Николай Сергеевич, Сорокин Иван, Суворов Александр Иванович, Яндушкин Михаил Иванович, Апроськина Елизавета, Яндушкин Иван Васильевич (II), Яндушкин Ефрем Степанович, Яндушкин Варфаломей, Яндушкина Марфа Михайловна, Андреев Иван Андреевич, Куликов Алексей, Фролов Григорий, Суворов Павел Иванович, Ефремова Наталия, Лазарев Иван, Яндушкин Яков Герасимович, Смирнова Анастасия, Седлов Прокопий, Яндушкин Лаврентий, Сюльдеркина Федосия, Еремеева Татьяна, Яндимирова Лариса, Седлова Перасковия, Яндушкин Семен Тимофеевич, Яндимиркин Федор Петрович, Изонов Матвей, Янди-



Юнкăпоç каччисем похха кайсан: 1) Фролов Никифор Ефимович (1937 ç.ç., Микуш), 2) Яндушкин Виталий Федорович (1929 ç.ç., шлепкепе), 3) Яндимиркин Гурий Васильевич (1932 ç.ç.), 4) Яндушкин Василий Яковлевич (1930 ç.ç.). 1957ç.

миркин Петр Ник., Фролова Елена, Сюльдеркина Матрена, Яндушкин Федор Мак., Яндимиркин Петр Ф., Кузейкина Анна Гр., Каршева Александра, Кузейкин Григорий, Яндимиркин Алексей Ив., Яндимиркина Лидия Ал., Изонова Мария, Лазарева Анастасия, Кондрятев Василий, Шурнеев Александр, Фролова Нина, Сорокин Михаил, Яндимиркина Наталия Ник., Яндимиркина Матрена П., Седлова Варвара, Смирнова Сира, Сюльдеркин Антон, Яндимиркина Евдокия Кирилловна, Гусев Федор Захарович, Яндимиркина Ксения Яковлевна, Яндимиркина Марина Яковлевна, Чуркина Анна Ивановна, Атласкин Калистрат, Ершова Ирина, Ершова Лидия Ивановна, Фролов Гаврил Ф., Фролов Алексей, Апроськина Фекла, Яндушкин Семен Андреевич, Антипов Григорий, Лазарева Анна Егоровна, Яндимиркина Дария Ник., Яндимиркина Мария Петровна, Яндушкина Анна Архиповна, Фролов Яков, Сюльдеркин Матвей, Яндимиркина Пелагея, Сорокина Васса, Журина Матрена, Гусева Мария, Яндушкина Иустина, Ефремова Зоя, Яндимиркина Евдокия С., Апроськина Любовь, Сорокина Фекла[34].



1) Яндушкин Николай Васильевич (1905–1993), 2) Васюхин Алексей Иванович (1949 ç.ç.), 3) Селюшкин Николай Геннадьевич (1950 ç.), 4) Яндушкин Леонид Иванович (1939-2006) ачисемпе. 1975 ç.



1959 ç.ç. юнкăпоçсем 8 класс хыççăн, 1974 ç. июнь: Ефимова (Миронова) Тамара Ефимовна, Яндимиркина (Данилова) Галина Витальевна, Яндушкин Валерий Иванович, Поляков Вениамин Меркурьевич (1996 ç.ç.), Ефремова Татьяна Витальевна, Алексеев Виталий Антонович, Олгашова Эмма Владимировна.

Ял кунçулĕнчи çавра çул тесе 1990 çулта юнкăпуçсем уява пуçтараннăччĕ. Ял сăрине ял Совечĕпе колхоз, партипе комсомол организацийĕ çине тăрса хатĕрленчĕç. Акă, кĕтнĕ кун çитрĕ. Хурăн вăрманĕ çумĕнчи уçланкăна колхозниксемпе пĕрле ĕçпе вăрçă ветеранĕсем, ял çыннисем – ватти-вĕтти пурте пухăнчĕç. Уçланкăри илемлетнĕ сцена, хаваслă юрă-кĕвĕ, ăшшăн кулса пăхакан хĕвел çĕклентереççĕ, чăн-чăн уяв çитни çинчен пĕлтереççĕ. Тенкел çине вырнаçнă çынсем пĕр-пĕринпе хаваслăн калаçаççĕ. Кĕçех уява пухăннă ача-пăчасене илĕртсе карусель çаврăнма пуçларĕ.

Юнкăпуç столовойĕнче ĕçлекенсем З.Яндушкина, С.Сорокина тата Л.Ястребова çынсене пăсланса ларакан така шӳрпипе хăналаççĕ. Техĕмлĕ тутлă апата çисе пурте кăмăллă юлчĕç, поварсене чун-чĕререн тав турĕç...

Колхоза 1936 çулта пĕрремĕш трактор уйăрса панă, ăна Мăн Сĕнтĕрти машинăпа трактор станцийĕнчен илсе килекенĕ Юнкăпуç хĕрĕ – Е.М.Апроськина трактористка пулнă. Елиза-

вета Михайловна халĕ тивĕçлĕ канура, Мăн Сĕнтĕрте пурăнать.

Халĕ, ĕлĕкхипе танлаштарсан, пӳрчĕсем те кермен пек, эрешлесе капăрлатса пĕтернĕ пирки аякран чаплăн курăнса лараççĕ, ял илемне çĕклеççĕ. Пĕрин хыççăн тепри çĕнĕ çуртсем лартаççĕ, ял та çĕнелсе пырать... Уйра кашласа babaкан тырпул чуна савăнтарать. Колхоз выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес енĕпе ăнăçлă ĕçлесе пырать. Кăçалхи пĕрремĕш çур çул планĕсене аш-какайпа 104 процент, сĕт сутассипе 116 процент пурнăçланă.



Хальхи яш-кĕрĕм. Малта 1) Яндушкин Александр Леонидович (1971 ç.ç.), 2-ретре: 2) Суворов Андрей Николаевич (1976 ç.ç.), 3) Сахаров Андрей (1970 ç.ç.); хыçалта тăраççĕ: 5) Муркаш хĕрĕ, 6) Столярова Зоя, 7) Суворова Нина.

Ял Совет ĕçтăвкомĕн председателĕ, вăлах жюри членĕ, Н.В.Чернов ял урамĕсен тирпей-илемĕ, ял сăн-сăпачĕ çинче чарăнса тăчĕ, чи тирпейлĕ те илемлĕ çуртсен хуçисене палăртрĕ. Вĕсем – В.П.Сюльдеркин ĕç ветеранĕ тата И.А.Васюхин ĕçпе вăрçă ветеранĕ пулчĕç. Чи илемлĕ палисадник П.Е.Яндушкинăн иккен, вĕсене пурне те дипломсем парса чысларĕç.

Кунтах картинăсен выставкине йĕркеленĕ, унпа паллашма та кăмăллă пулчĕ. Талантлă çынсем пурăнаççĕ Юнкă таврашĕнче. Художество пултарулăх коллективĕ те уява çине тăрсах хатĕрленнĕ»[35].

## ЮНКĂПУÇСЕМ 1774 ÇУЛТА

1773–1775 çç. Атăлçи Пăлхар çĕрĕ çинче вăрçă кĕрленĕ. Хырçă-марçăсене пысăклатнипе, улпутлăхпа вырăс колонизацине, атăлçи халăхĕсене вăйпа хĕреслетнипе хирĕç пынă ку пысăк пăлхава Дон казакĕ Е.И.Пугачев ертсе пынă. Чăвашъенчи халăх 1774 çулхи июль-августра чиркӳсем, кантурсем патĕнче пухăнса шавланă. Юнкăсем те унта йышлăн хутшăннă. Етĕрне уесĕнче кăна ун чух пăлхавçăсем 38 вырăса тĕп тунă, пурте вĕсем чиркӳ çыннисем пулнă. 20-30 çул каялла çеç лартнă чиркӳсене те тустарнă-çунтарнă. Нумай ялсенче, вăл шутра Юнкăра та, пăлхава путарма килнĕ çарсем çынна çакмалли таканасем лартнă. 1774-1775 çулхи кĕркунне-хĕлле кунта ялйыша пухса допроссем ирттернĕ, пĕтĕм арçынна тенĕ пекех темиçе çĕршер хут хулă-патаксем ислетнĕ, сăмсисене çурнă, хăлхисене каснă, пуçаруçă-ертӳçисене тупса Çĕпĕре янă[36].

Уес çыннисем ун чух тата Етĕрне хулине тĕппипех аркатасшăн пулнă – колони влаçĕн çыннисем, тӳри-шари унта пурăннă-çке[37]. Етĕрнере тата Чикмере пурăнакансем пăлхава путарма хастар хутшăннă пирки С.М.Яндуш Юнкăпуçĕнчи ватăсемпе калаçса ятарлă «Пугачев вăхăчĕ пирки» («Воспоминания о пугачевщине») статья çырнă[38]:

Ватă çынсем халĕ те пулин Пугачев пăлхавне асра тытаççĕ, чăвашсем те, çармăссем те çулсене çав вăхăтран шутлаççĕ: мучисем хăйсен ватлăхне, халăхри тĕрлĕ пулăмсене Пугачев саманине тĕпе хурса палăртаççĕ. Пăлхава куçкĕрет курнă мучисем каланине ача чухне эпĕ сахал мар илтнĕччĕ, анчах, шел пулин те, вĕсен халапĕсене тимлемен, çырса илме вара шутламан та. Халĕ вара хăшĕ-пĕрне аса илсе тата вĕсен чăнлăхĕ пирки тупăшмасăр çак хайлава калăпларăм.

Пушкин «История Пугачевского бунта» ĕçĕнче çырать: «Бибиков прибыл в Казань 25 декабря (1773 года). В городе не нашел он ни губернатора, ни главных чиновников. Большая часть дворян и купцов бежала в губернии еще безопасные. Бывший тогда в Казани губернатором генерал-аншеф фон-Брант был тогда в Козьмодемьянске...» Мĕн тунă вăл Чикмере – паллă мар. Чикмери ватăсем каланăран, Пугачев хăйĕн эшкерĕпе Чулхуларан тухса Чикме еннелле çул тытсан, вĕсен çар пуçĕ çывăхри Чулхула кĕпĕрнинчи Чĕпĕле (Сăрвăррине) тарма пикенет-мĕн, анчах çынсем ăна çул çинчен тавă-

раççĕ. Чикмесем хăрушлăхран çăлăнма Турăпа Амăшĕнче кăна хӳтлĕх кураççĕ, вара хулипех килĕшсе 5 çухрăмри Владимирски Пăсăрман чиркĕвĕнчен Владимирти Турамăшĕн авалхи асамлă турăшне илсе килеççĕ. Тĕрлĕ синкер пулсан çынсем халĕ те унран пулăшу ыйтаççĕ. Турăша чаплăн, рехетленсе кĕтсе илнĕ хыççăн чикмесем хăйсене пăлхавçăсенчен хӳтĕлеме ыйтса çӳлти Турă Амăшне кĕл тунă, асамлă турăша хула тавра çаврăнă. Чикмесем хăйсен хулине хӳтĕлеме кар тăни çинчен илтсе Пугачев Чикмерен 15 çухрăм анатарах Атăлăн сăртлă енне каçать, вара Кĕçĕн Сĕнтĕр ялĕпе тухса Етĕрне еннелле каять. Чикмене тивмест.

Пугачевччен пĕр 25 çул малтан çеç пĕр пайне хĕреслĕхе куçарнă, ыттисем вара, пĕтĕмпех хăйсен халăхлăхĕпех юлнă туçи çармăссемпе чăвашсем хапăлласах йышлăн каппайланса çӳреççĕ, ултавçăпа пĕрле пулма килĕшменнисем вара килĕсене хăварса ун чухнехи сĕм вăрмансене кайнă. Пăлхавлă ушкăна ку тата меллĕ пулнă. Вак халăхсен ялĕсем тăрăх çĕмĕрттерсе çӳресе вăл вĕсен пурлăхне çаратнă, вĕллесенчи паха пыла иленсе утарĕсене аркатнă. Ваттисем каланă тăрăх, пăлхавçăсем чăвашпа çармăс ялĕсенче çуллă çатма çинчи чăкăт пекех ярăннă. Вĕсем валли яланах тулăх сĕтел пулнă: юрай сăри, йӳçĕтнĕ пыл, тĕрлĕ выльăх, кайăк-кĕшĕк, çăмарта, çу тата ытти те. Чăваш çĕрме пуянĕсем вĕсене çăкăр-тăварпа кĕтсе илнĕ евĕр укçапа та кĕтсе илнĕ.

1838 çулта пĕр чăваш мана хăйĕн аслашшĕ Пугачева кĕмĕл укça тултарса пуç тайнă, шĕшкĕрен тунă пысăк тирĕке кăтартнăччĕ. Пуринпе те кăсăкланакан пĕр чиновник çав тирĕке питĕ туянасшăнччĕ, анчах лешĕ сутмарĕ. Чăвашсем авалхи япаласене питĕ хаклаççĕ-çке, турăш вырăннех хураççĕ, темелле. Аслашшĕ кĕмĕл укça шутне пĕлменнине ăнланса, çак чăваш çавнашкалах мул ыйтса хăйĕн авалхи тирĕкĕнче вĕçĕм çурта çутнă. Тем-ха, кăсăклă тирĕк ăна пуянлăх памасть пулмалла...

Вак халăхсен вулăсĕсенчи хĕреслĕх тĕнĕн ĕçченĕсене пĕтерни Пугачев эшкерĕн тĕп тискерлĕхĕ пулса тăрать. Тин çеç туса лартнă пĕчĕкрех йывăç чиркӳсене ун чухне çаратса пĕтернĕ, теприсене çунтарнă та, тĕн çыннисене çакса вĕлернĕ, килĕсене çаратнă, арăмĕсене пусмăрланă.

Чикме уесĕнчи чăвашсемпе çармăссем хушшинче ун чухне чиркӳсем ытла пулман, хурахсенчен тарса ӳкеймен ялти тĕн çыннисен пĕр пайне вара уес варринех вырнаçнă чиркӳллĕ

çармăс ялне, Кошăваша тытса пуçтарнă пулнă. Хăйсене çакмалли такансем хатĕрленинe курса сăнчăрланă тата йывăç кўпчекпе тăллaнă тыткăнри çынсем темиçе кун чăтнă, тĕрлĕ асап тўснĕ. Вырăнти пăлханакан халăхăн таппи Кошăвашра пулнă, унтан вĕсем христианство çыннисем çине кăна мар, Чикме, Шупашкар, Çĕрпў тата Етĕрне çине те кайма шутланă. Çак уессенчи пĕтĕм халăхăн вăрçи-пăлхавĕ хатĕрленнĕ.

Пĕр пачăшкине пăлхавçăсем Сĕнтĕр пасарĕ патĕнчи хыртан (ку синкерлĕ хыр халĕ те пур, вăл Шупашкартан килнĕ чух Сĕнтĕр пасарĕнчен иртсен сулахай енче) çакнă та ĕнтĕ, анчах çав хушăра тыткăнра тертленекенсем Чикмери çар пуçĕ патне Кошăвашри тапă пирки, хăйсен хурлăхлă шăпи çинчен пĕлтерме пĕр çынна яма ĕлкĕреççĕ. Нимĕн пĕлмен çар пуçĕ самантрах мăнастирĕн çывăхри тăвайккисенчи Красногорка, Болониха, Гаврениха, Сосновка тата ытти ялсенчи вырăс хресченĕсене, çавнашкалах Троицки салинчи çынсене пухать те, мĕн май килнĕ таран çавăнпа хĕçпăшаллантарса чикмесем ертсе пынипе, Кошăваша ярать. Вырăссем ўсĕр те шавлă ушкăн çине тăрук тапăнса, тĕн çыннисене хăратаççĕ, тарма пуçланă пăлхавçăсенчен нумайăшне ярса илеççĕ. Вĕсем çаратса тултарнă пурлăха нумай пăрахса хăварнă пулнă.

Çĕнтерўпе таврăннă чикмесем пăлхавçăсене хупаççĕ, кайран вĕсене пурне те вĕлернĕ пулнă. Каланă тăрăх, вĕсенчен нумайăшне çакнă, ыттисене пушă-саламатпа хĕнесе вĕлернĕ. Хулари Тихвин чиркĕвĕ çумĕнче пурăнакан ватăсем халĕ те «Чухăн килсем» текен ĕлĕкхи вилтăприсенчен инçех мар пĕрлехи вилтăприсене кăтартаççĕ. Кунта, вĕсен шучĕпе, асплантарса вĕлернĕ пăлхавçăсене пытарнă пулать.

Çав пăтранчăк вăхăтра Етĕрне уесĕнчи чăвашсем те Пугачев эшкерĕпе пĕрле хăйсен пачăшкисене хирĕç кайса, пысăк ушкăнпа Сăр çыранне çитсе, çыннисене, тăвар лавккисене тата хупахсене çаратас тесе Етĕрне хули тĕлне пухăнаççĕ. Етĕрнесем парăнма килĕшнĕ пек пулса, вĕсене Сăр урлă каçма пулăшма пулаççĕ, анчах пăлхавçăсене сахалшаррăн каçарса, хулара вĕсене тўрех ярса илнĕ, хăйсене çакăн пек шăпа тивиччен те леш енче юлнă чăвашсем çак сĕмсĕр ултав пирки ăнкарайман.

Çак ĕмĕрĕн вăтăрмĕш çулĕсенче Пугачев чухне Етĕрнерен тарса хăтăлнă пĕр чăваш пурăнатчĕ. «Етĕрнесем пире пўртсенче тĕтĕмпе чыхлантаратчĕç, выçăпа аптрататчĕç, урасенчен çакатчĕç, алăсемпе пуçсене пăратчĕç, çурăма тăвар сапса тата сурансем

çине эрех тăкса саламатпа хăрушла ислететчĕç», – тесе аса илетчĕ вăл. «Манăн çурăм тăварланнă та, спиртланнă та», – тесе мухтанатчĕ çак старик, пур хĕн-хура пăхмасăр ăна тарма май килнĕ-мĕн. Пĕррехинче вăйлă асплантарса мăшкăлланă хыççăн вăл вилнĕ пек пулса выртать, çĕрле вара арантан темле вăй пухса хуллен Сăр хĕрне шуса çитет. Кунта унăн пĕр хушă чарăнмасăр çӳресе темиçе пичке сăра ĕçсе янипе суранĕсем сипленнĕ-мĕн.

## ЮНКĂПОÇÇЕМ 1941–1945 ÇУЛСЕНЧЕ

Хаяр вăрçăн пĕрремĕш çулĕ пынă вăхăт. Ун чухнехи Сĕнтĕр районĕн «Ĕç ялавĕ» хаçатра çапăçакан çарти пĕр полк комиссарĕ З.Мавлютов райком секретарĕ ячĕпе çырнă çырăвĕ пичетленнĕ: «Сирĕн районти «Родник» колхозри Борис Федорович Гусев фронтра нимĕç оккупанчĕсемпе çапăçнă çĕрте хăюллă та паттăр командир пулнине кăтартса пачĕ. Пĕр çапăçура вăл çичĕ боецпа пĕрле тăшман çулне татнă, нимĕçсен 18 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Унтах боеприпаспа вăрçă пурлăхне тиенĕ обоза тытса илнĕ. Б.Гусев группинчи боецсем пурте сывă юлнă. Хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Б.Гусев аслă лейтенанта правительство наградине илме тăратнă, хăйне батальон командирĕ тунă».

Çак çыру килсенех колхозра пуху пухăççĕ. Колхоз членĕсем, пĕр шухăшлă пулса, Б.Гусев патне парти райкомĕ пулăшнипе хатĕрленĕ çыру яраççĕ. Вăл та район хаçатĕнче тухать: «Хаклă Борис Федорович. Фронтра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн пысăк чыс та мухтав сире. Фашистсемпе хăюллă çапăçни пире те колхозра хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарать.

Эпир СССР оборона фондне 141 килограмм çăм, 38 тир, 2300 çăмарта тата ытти япаласем патăмăр. Хĕрлĕ Çар валли икĕ тиха, пĕр пăрупа така, 16 чăх, хур-кăвакалсем çитĕнтеретпĕр. кунсăр пуçне «Комсомолец Чувашии» бронепоезд тума укçа, боецсем валли парнесем пухса патăмăр. Çуракинче пирĕн Н.Яндимиркин, Ф.Лазарева, И.Яндушкин, Я.Яндушкин, М.Суворова сухаçăсем, Ф.Сорокина, Т.Яндушкина сӳрелекенсем, А.Яндимиркин, П.Яндимиркин акакансем нормăна яланах ирттерсе ĕçлесе пычĕç. Сире, Борис Федорович, сывлăх сунса

нимĕçсен йытă кĕтĕвĕсене тата хытăрах çапма чĕнетпĕр. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене чыс та мухтав! Нимĕç оккупанчĕсене – вилĕм!

Пуху хушнипе алă пуснă: Н.Гусева (Борис амăшĕ), П.Суворова, И.Шмелев, П.Яндимиркин, А.Седлова (Борис аппăшĕ), Ф.Лазарева, Н.Иданова, А.Яндимирова, М.Суворова, А.Яндимиров».

Хăйĕн ентешĕсен çырăвне Б.Гусев хумханса вуланă, ĕнтĕ. Чĕри тапнă чух фашистсене пĕр шеллемесĕр пĕтерме тупа тунă. Б.Гусев батальонĕ кашни çапăçурах тăшманпа вирлĕ кĕрешнĕ, ахальтен мар ăна Хĕрлĕ Çăлтăрпа Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе наградăланă. Анчах тăшман пулли ăна та шеллемен. Б.Гусев капитан 1942 çулхи сентябрь уйăхĕнче Смоленск облаçĕнчи Рудня патĕнче пынă пĕр çапăçура паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ[39].

**Яндушкин Федор Яковлевич** (1918 ç.ç.) 1942 ç. августра Хосан университечĕн дипломне илнĕ, октябрьтенпе Хĕрлĕ çарта пулнă. Малтанах Чолхолари çар радисчĕсен шкулĕнче вĕреннĕ, унпа пĕрлех кунта чăвашсен паллă музыковечĕ Ю.А.Илюхин та вĕреннĕ. Хыççăн 3-ш гварди танк çарĕн 56-мĕш танк бригадинчи мотомеханизациллĕ батальонĕн радисчĕ пулса Воронеж тата 1-ш Украина фрончĕсенче çапăçнă. Вĕсен ушкăнĕн батальон командирĕпе бригада штабĕ хушшинчи çыхăнăва тытса тăмалла пулнă. Йĕпе-сапара пысăк раци вырăнтан вырăна куçса çӳреймен пирки Федорпа юлташĕсем пĕчĕк хăватлă рацие çурăм çинче йăтса шунă. Çапăçусенче танк çине ларса пыма тивнĕ. Днепр урлă каçнă чух паттăрлăх кăтартнăшăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденне тивĕçнĕ. Çапăçура йывăр аманнă, çулталăк ытла госпитальсенче сипленнĕ. Хыççăн ӳтри снаряд ванчăкĕпех килне янă. Вăрçăра унăн Матвей пиччĕшĕ те, ашшĕ Яков Герасимович та пулнă. Аманса таврăнсанЁ Федор Яковлевич хĕрĕх çул Орпашри вăтам шкулта вĕрентнĕ. Тăванĕсем патне янă çырăвĕсенчен[40]:

20.09.1943. «Пурне те ырă кун пултăр! Ку вăхăтра эпĕ сирĕн пата çырусем çыраймарăм, мĕншĕн тесессĕн çаплах çул çинче...

Халĕ хĕвеланăçнелле, Сумы, Чернигов облаçĕсем урлă Киев патнелле каятпăр. Нимĕç хытă тарма пуçларĕ, хăваласа çитме те çук. Халĕ эпир Киевран çĕр çухрăмра, татах малалла каятпăр.

Пурнăçсем манăн аптрамаллах мар. Анчах аттепе пичче çинчен нимĕн те пĕлместĕп. Атте унтах пулсан, çăкăр леçсе

пама тӑрӑшӑр. Пахчаҫимӗҫсене шӑнтса ан ярӑр, пиччепе атте патне ҫырусем вӑхӑтра ҫырса тӑрӑр, ман пата ҫырма та ан манӑр.

Манӑн адрес: полевая почта 09357-Е. Сирӗн пиччу Ф.Яндушкин. Ҫырӑва вӑхӑтра ярайманӑм, паян акӑ октябрӗн 4-мӗшӗ. Халӗ эпир Днепр патне ҫитрӗмӗр. Ҫырусем час-часах ҫыраймӑп. Сывӑ пулӑр».

19.10.1943. «...Ыран каллех малти рете каятпӑр. Эпир халь Днепрӑн тепӗр енче, Киевран кӑнтӑртарах. Шыв урлӑ ҫӗрле танк ҫинче пӗчӗк сулӑпа каҫрӑмӑр. Днепр шывӗ ҫулӑмпа тата металпа хутӑш вӗресе тӑчӗ.

Халӗ пока сывах-ха, ҫимелли япӑх мар. Ҫыру никамран та илместӗп, килти пурнӑҫ ҫинчен нимӗн те пӗлместӗп. Эпӗ сире адрес пӗлтернӗччӗ, ҫав адреспах ҫырӑр.

Ваҫка, шкула ҫӳреме пуҫларӑн пулӗ, вӑхӑт тупас пулать шкула ҫӳреме те. Мӗнле хыпарсем пур, ҫырса пӗлтерӗр. Сывӑ пулӑр, эпӗ сывӑ юлатӑп. Сирӗн пиччу Ф.Яндушкин.»

9.11.1943. «Ырӑ кун пултӑр сире пурне те! Ку ҫырӑва госпитальтен ҫыратӑп. Октябрӗн 23-мӗшӗнче мана мина осколэкӗ ҫурӑмран амантрӗ. Суранӗ пысӑк, анчах осколокне халӗ те эпераци туса кӑларман-ха, тен, операци тума урӑх госпитале яраҫҫӗ, мӗншӗн тесен кунта операцисем тумаҫҫӗ. Халӗ ун ҫинчен нимӗн те калама пултараймастӑп...

Хӑҫан киле пырасси паллӑ мар-ха. Ҫыру сирӗнтен атте салтака кайнӑранпа та илмен, ӗнтӗ 4-5 уйӑх ҫитрӗ ҫыру илменни. Аттепе пичче ҫинчен нимӗн те пӗлместӗп. Ҫыру ҫырӑр. Сывӑ пулӑр. Ф.Яндушкин. Воронежская область, ст. Сомово, полевая почта 78109-В.»[41]

**Яндушкин Матвей Яковлевич** (1911–1983). 1933–1935 ҫҫ. ҫарта артиллерист пулнӑ, вӑрҫӑ пуҫланиччен Чӑваш ялхуҫалӑх техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ, Мӑн Сӗнтӗрте районти ҫӗрӗҫ пайӗн инструкторӗнче ӗҫленӗ. Ҫав вӑхӑтрах ашшӗ-амӑшне, шӑллӗне вӗренме пулӑшнӑ, хӑй вара ялхуҫалӑх институтне вӗренме кӗме хатӗрленнӗ. Вӑрҫӑ пуҫлансан вӗсем – салтакра пулнисем, Порфирий Суворовпа Василий Куликовпа пӗрле – виҫҫӗн тепӗр куннех ҫара тухса кайнӑ.

Матвей 43-мӗш ҫарӑн 590-мӗш гаубицӑллӑ артиллери полкӗн 7-мӗш батарейине лекет, Калинин фронтӗнче Мускава хӳтӗлет. Аслӑ Главнокомандовани Резервӗн 392-ш танксемпе кӗрешекен уйрӑм дивизийӗпе Курск пӗккинче пулать, дивизион раз-



Федор тата Матвей Яковлевич Яндушкинсен,
3) Марина Яковлевна Яндимиркина. 1960 ç.ç.

ведчикĕ пулса Малоархангельск çывăхĕнчи çапăçусене хутшăнать. 40-мĕш уйрăм гварди миномет дивизионĕпе 2-мĕш Украина, 3-мĕш Украина, Байкал лешъен фрончĕсенче çапăçать, планшетист пулнă. 1946 ç. декабрьте тин яла таврăнать. Тăван колхозра счетовод, ревизор пулса ĕçлет. Мăшăрĕпе Клавдия Михайловнăпа пилĕк ача пăхса çитĕнтернĕ: Георгий, Фаина, Ирина, Евгения тата Александр. Пурте вĕсем лайăх пĕлӳ илнĕ, тивĕçлĕ çынсем пулса тăнă[42].

Яндушкин М.Я. çартан янă çырăвĕнчи йĕркесем:

25.10.1941. «Эпир халлĕхе Мускава хӳтĕленĕ çĕрте. Хĕллехи тумтир илтĕмĕр, çипуç енчен аптрамастăп. Халлĕхе сывах, малаллине пĕлме хĕн. Тăшман самолечĕсем Мускав çине кашни кунах вĕçеççĕ...»

14.11.1941. «Сывах-и, тăвансем. Салам яратăп. Эсир октябрĕн 23-мĕшĕнче çырнă çырупа открыткăна илтĕм, анчах вăхăтра ответлеймерĕм. 13–16-мĕшĕсенче çапăçусенче пултăмăр. Пирĕн полк 43-мĕш армине кĕрет, вăл Малоярославец çывăхĕнче çапăçакан арми. Çырмалли нимех те çук, эпĕ чĕрĕ-сывах, манăн юлташсем те...»

28.12.1941. «Эпир халĕ Нарофоминск патĕнче. Ку хулана ĕнер пирĕннисем ирĕке кăларчĕç. Хăрушă самантсем пулка-

лаççĕ кунта, хăш чух нимĕç снарядсемпе перкелешет, халлĕхе ăна аяккарах хăваласа янă...»

10.02.1943. «Пĕлтĕр çулла, паллах, эпир нумай тӳсрĕмĕр. Икĕ уйăх пĕр вĕçĕм çапăçусенче тата çул çинче пултăмăр. Питĕ йывăр çула тӳссе ирттертĕмĕр. Нимĕçсем бомбăсем питĕ вăйлă тăкрĕç. Ку вара вăрçăра чи хăрушши. Ытти аплах мар».

14.04.1943. «Халĕ çул çинчен çыратăп. Тарăн тыла лейтенанта вĕренме хам ирĕкпе мар, хушнипе каятăп. Çул Çĕпĕре, Томск хулине выртать. Хамăн юлташсене хăварма тивнишĕн шеллетĕп, вĕсемпе пĕрле икĕ çула яхăн службăра пулнă вĕт».

22.05.1943. «Томск хули. Кунне 9-шар сехет вĕренетĕп. Паллах, вĕренӳ йывăр, нумай пĕлмелле».

22.01.1944. «Халлĕхе чĕрĕ-сывах, Украинăра, Кировоград хули çывăхĕнче...»

15.03.1944. «1943 çулта эпĕ утса тухнă çул-йĕр тĕрлĕ тĕслĕ пулчĕ, Союзăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче пулса куртăм... Халĕ пирĕн пурнăç кăшт та пулин пурнăç пек туйăнать. Пĕлтĕрхи ноябрь-декабрь уйăхсенче вара вăл темиçе хут япăхрахчĕ. Çав кунсенче эпĕ киле çырман та, вĕçĕмех çул çинче, çапăçусенче пулнă...»

24.04.1944. «Одесса облаçĕ. Уйăха яхăн ĕнтĕ çырусем те çырман, сирĕнтен илсе вуламан, 300 яхăн километрлă походра пултăмăр. Халĕ эпир Бессараби чикки çывăхĕнче, пĕр молдаван ялĕнче.

14.07.1944. «Топографипе интересленетĕп, çакăн пек отделенире тăратăп. Тен, сире мĕн тĕслĕ хĕç-пăшалпа çапăçни интереслентерет, анчах халĕ мар, тепĕр хутĕнче, халлĕхе хăвăр тавçăрăр...»

28.07.1944. «Эсир «катюша» тенине илтнех тесе шутлатăп. Вăт çавăн çинче çапăçатпăр та...»

20.09.1944. «Юлашки уйăх çурăра вĕçĕмсĕрех çул çинче. Ăçта кăна пулмарăмăр пулĕ. Чикĕ леш енчен çыратăпĕ»

18.10.1944. «Эпĕ халĕ инçетре-инçетре, темиçе чикĕ леш енче. Хăш çĕршыврине çырмастăп та, тен, ĕненмĕр те. Шучĕпе ку виççĕмĕш ют çĕршыв. Пĕлесех килет пулсан, тавçăрса илĕр: ку çĕршыв Румынипе юнашар выртнаçнă, Германипе пĕр союзра тăрать».

8.12.1944. «Çапла, пирĕн çул-йĕр те миçе чикĕ урлă иртрĕ. Сталин докладĕнче ун пирки каланă. Çиччĕмĕш удар – ку пирĕн çинчен, халĕ эпир Тиссăпа Дунай хушшинче».

9.02.1945. «Январьте пире питӗ йывӑр килчӗ, нимӗҫсем Будапешта тытса илме ӑнтӑлчӗҫ. Уйрӑмах 7, 19-мӗшсем асра юлчӗҫ, мӗншӗн тесен тӑшманпа ҫывӑххӑн пулса ҫапӑҫма тиврӗ. Будапештра хӑйӗнче темиҫе сехет пулма тӳр килчӗ...»

6.05.1945. Виҫҫӗмӗш кун ӗнтӗ эпир ҫапӑҫуран тухни, малашнехи паллӑ мар. Юлашки вӑхӑтра «шкода» заводшӑн ҫапӑҫрӑмӑр, эсир вӑл хӑш хуларинчине пӗлме кирлӗ».

27.05.1945. «Ҫӗнтерӳ кунӗнче кунӗпех ҫул ҫинче пултӑмӑр, каҫ енне Прагӑна ҫитрӗмӗр. Пире мӗнле кӗтсе илнине халӗ ҫырмастӑп, кӗрессе пысӑк чӑрмавсемсӗрех кӗтӗмӗр, хӑш чух машина сехетре 70-75 миля хӑвӑртлӑхпа каятчӗ. Ку тӗлпулу ҫинчен эсир хаҫатсенчен пӗлетӗр. Тата тепӗр самант ҫинчен. Прагӑна пырса кӗрсенех пирӗн пата икӗ хӗр пычӗҫ, тап-таса вырӑс чӗлхипе калаҫма тытӑнчӗҫ. Вӗсен ашшӗ-амӑшӗсем иртнӗ вӑрҫӑранпах кунта пурӑнаҫҫӗ, хӗрсем вырӑс гимназийӗнче вӗреннӗ иккен. Хӗрсем пирӗнпе хӑйсене господасем умӗнчи пекех тыткаларӗҫ, эпир господасем евӗр курӑнман пулин те. 230 километр-ҫула пысӑк хӑвӑртлӑхпа вирхӗнсе тухрӑмӑр, пурте тусан айне путнӑ... Хула ҫыннисем Хӗрлӗ Ҫар килнӗшӗн питӗ хавас, ҫийӗнчех нимӗҫсене тавӑрма-хӑвалама пуҫларӗҫ. Халӗ эпир Прагӑран 40 ҫухрӑмра тӑратпӑр. Йӗри-тавра шӑплӑх, хаяр та вӑраха пынӑ ҫапӑҫу хыҫҫӑн хӑнӑхма та йывӑр. Лайӑх пурӑнатпӑр, кӗҫех киле таврӑнатпӑр».

2.07.1945; «Салам Омскран. Эпир ҫаплах ҫул ҫинче. Европа хыҫа юлчӗ ӗнтӗ, Ҫӗпӗр айлӑмӗпе пыратпӑр. Иртнӗ ҫырӑва Сызраньтен ҫыртӑм, темиҫе сехет Куйбышевра тӑтӑмӑр. Халлӗхе Читана ҫити каясса ҫеҫ пӗлетпӗр. Тен, унта чарӑнӑпӑр. Акӑ, мӗн пулса тухать, Анӑҫра питӗ инҫетре пулнӑ пек туйӑнатчӗ, Тухӑҫра тата инҫерех пулма тивет. Икӗ ҫул каярах эпӗ ку ҫулсем тӑрӑх иртнӗччӗ ӗнтӗ. Вӗҫсе килен-каян кайӑксем тейӗн...»

19.09.1945. «Манчжури. Эсир пӗлетӗр ӗнтӗ, вӑрҫӑ ӑнӑҫлӑ вӗҫленчӗ. Эпир Пысӑк Хинган тӑвӗсем урлӑ каҫрӑмӑр. Американецсен машинисем ҫинче ҫулсӑр-мӗнсӗр, шывсӑр вырӑнсемпе кайрӑмӑр. Хыҫҫӑн 700 километр – КВЖД тӑрӑх.

Халӗ эпир вырӑнта. Япони тинӗсӗ хӗрринче (пӗтӗмпе те 100 метрта). Йӗри-тавра груша, панулми, виноград ҫитӗнекен садсем. Кунта ытларах китаецсем пурӑнаҫҫӗ, японецсем те сахал мар тӗл пулаҫҫӗ. Китаецсем – ӗҫчен халӑх, пире сахал мар пулӑшрӗҫ, эпир килнишӗн вӗсем хавас. Саламласа кӑшкӑраҫҫӗ: «Шанго!». Ҫӗршывӗ чухӑн тесе калаймӑн, анчах ҫӑкӑр ҫук, китаецсем ун ҫинчен пӗлмеҫҫӗ те. Ырашпа тулӑ акмаҫҫӗ,

тĕп культурăсем – кукуруза тата гаолян... Сирĕнтен çырусем мĕншĕн килменнине пĕлместĕп, тен, питĕ аякра пулнăран. Кунтан тухса пĕтме те çăмăл мар. Çул çинче мана уйăх çурăран кая мар вăхăт кирлĕ, тăршшĕпех чугун çул тăрăх...»

5.10.1945. «Инçет Хĕвелтухăç вĕçленнĕ тĕлте – Ляодун çурутравĕ çинче тăратпăр. Порт-Артур хули пирĕнтен 45 километрта. Дайрен хули (Дальний порт) – 32 километртра. Йĕркеллех пурăнатпăр. Вăрçăн манăçми те йывăр кунĕсем хыçра ĕнтĕ. Тăвату çул та тăвату уйăх эпĕ килте пулман...»[43]

**Михайлов (Яндушкин) Иосиф Михайлович** (1914–1992) тăлăха юлсан çичĕ çул Шупашкарти опытлă-кăтартуллă коммуна шкулĕнче, хыççăн Çĕрпӳри педучилищĕн истори уйрăмĕнчĕ вицĕ çул вĕренет. Çамрăк учитель вара Янăм шкулĕнче, Орпашри вăтам шкулта вăй хурать. 1936-1940 çç. Ленинградри кинопромышленность инженерĕсен институтĕнче вĕренет, «сасăна ӳкерчĕкре сăнлакан инженер-электрик» специальность илет, чăвашсен пĕрремĕш киноинженерĕ пулса тăрать. 1941 ç. июльте хăй ирĕкĕпе вăрçа каять. 11-мĕш гварди çарĕнчи 17-мĕш уйрăм стрелковăй дивизин аслă кинорадиотехникĕ, тепĕр çултан Воронеж, хыççăн 1-мĕш Украина фрончĕсен политуправленин снабжени пайĕн сасăллă кинорежиссерĕ пулнă. Çĕнтерӳ хыççăн вицĕ çул Австрири Совет çарĕсен ушкăнĕнче тăрать. Çарта чух 2-мĕш степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденне, «Берлина илнĕшĕн», «Прагăна ирĕке кăларнăшăн», «Германие çĕнтернĕшĕн» тата Польшăн пĕр медалĕсене тивĕçнĕ, 1948 ç. майор-инженер И.М.Михайлов запаса тухать. Чăваш республикин кинофикаци управленин аслă методисчĕ, культура министерствин тĕп киноинженерĕ пулса ĕçлет.

Иосиф Михайлович 1944 ç. Белоруссире килсĕр-çуртсăр, тăван-пĕтенсĕр юлнă ачаллă хĕрарăмпа пĕрлешет. Арăмне Орпаш ялне тахçанах пурăнма куçнă амăшĕ патне леçет. Антонина Никитична унта учительте ĕçленĕ. Вĕсем арăмĕпе вицĕ хĕрпе пĕр ывăл пăхса çитĕнтереççĕ. Шупашкара пурăнма куçаççĕ. Ачисем пурте аслă пĕлӳ илеççĕ. Măшăрĕ вицĕ хĕрĕпе тăван енне куçса кайсан (Виктор ывăлĕпе Инесса усрав хĕрĕ хăйсен çемйисемпе кунтах юлнă) Иосиф Михайлович Александра Ивановнăпа пурăннă.[44] Чăвашсен пĕрремĕш кинорежиссерĕ – чăвашсен пĕрремĕш таврапĕлӳçин тăваттăмĕш сыпăкри тăванĕн мăнукĕн мăнукĕ. Юлашки çулсенче вăл та самаях таврапĕлӳпе кăсăкланчĕ. Чи малтанах питĕ тĕплĕ Чăвашъенче кинофикаци



И.М. Михайлов майор. Австри, 1947 ç.

аталанăвĕн çул-йĕрне тĕпчерĕ, пичетлесе те кăларчĕ. Çав вăхăтрах тата хăйĕн чаплă несĕлĕн ятне-сумне çĕклес енĕпе, тивĕçлĕ асăмне тăвас енĕпе те самаях çӳрерĕ, çырчĕ. Ăратă йывăçне калăплассипе те ĕçлерĕ.[45]

Вăрçă кунĕсенче Иосиф Михайловича нумай паллă çынсемпе, çарпуçĕсемпе тĕл пулма тӳр килнĕ, курмалли сахал пулман. 1985 ç. асаилĕвĕнчен:

«В конце июля 1942 г. меня назначили на должность звукокиноинженера отдела снабжения политуправления формирующегося тогда Воронежского фронта. Работникам нашего отдела, в том числе и мне, приходилось выполнять самые разные задания. Мы отвечали за работу всех звуковещательных станций по агитации войск противника, киноустановок и радиоприемного хозяйства частей и соединений всего фронта, осуществляли снабжение политпросветимуществом, запасными частями и материалами, типографской бумагой и многим другим.

Со стабилизацией фронта нас перевели в большое село Анна. Военный совет и штаб фронта размещались в городке сельскохозяйственного техникума, в бывшем имении Баратынских. Наш отдел с фронтовой кинобазой размещался в частных домах поселка спиртзавода и бывшей птицеферме.

В начале 1943 г. к нам поступила мощная громкоговорящая установка МГУ-1000. Технический надзор за ней был возложен на специалистов отдела снабжения. Я изучил эту установку самостоятельно.

Вскоре меня вызвали к начальнику управления инженерных войск фронта генералу Галицкому. Там мне вручили коробку с «фильмом» – кинолентой с записью звука двигающихся танков и провели полный инструктаж по его

использованию. Дали полевую карту лесочка, где мы должны установить МГУ и демонстрировать «фильм».

На следующий день наша спецгруппа целый день пробиралась к месту будущей работы. В штабе 6-й армии нам дали несколько автомашин и солдат-саперов. С их помощью зарыли в землю машину с громкоговорящей установкой, благоустроили дороги вокруг и в середине лесочка для автомашин-иммитаторов, вырыли землянки для отдыха людей.

С наступлением темноты мы включили МГУ. Лес наполнился скрежетом подходящих танковых колонн. Одновременно в лесу и его окраинам стали ездить автомашины с зажженными фарами. К утру все утихло и курсирование светящихся точек постепенно прекратилось. Так продолжалось несколько ночей подряд.

Цель была достигнута. Немцы решили, что на нашем берегу началась концентрация танков для будущего наступления. Они приступили к минометному обстрелу Дона и лесочка. Несмотря на мороз, от мин на реке разбивался лед, и даже начался ледоход. В последующие ночи они перетащили сюда артиллерию и с других участков фронта.

Атласкин Семен, кассир, растратил до 409 руб., завхоз Чуркин проворовался и, совершенно, до их ухода в Кр. Армию не проверили, и теперь хотят их вызывать на отпуск. Предколхоза Яндимиркин приписывал себе деньги, как например, на имя мертвого печника 35 руб., без подписи (покойник не может подписаться!), в другом месте 40 руб. Корешков документов нет.

Урожай по культурам был достаточный, имеется на распределение, есть и в др. фондах. Хлеб давать с надбавкой для семьи. Давать 2: из общего дохода состарившимся, многосемейным, инвалидавм, семьям красноармейцев; втягивать в работу.

Прокормить лошадей на стороне, на готовых кормах – будет экономия дома. Выполнить лесозаготовку. Идти на встречу вызову о 3-ей пятилетке. Все сказанное проводить на днях же в жизнь. Годовой отчет запоздал. Организовать актив. При-

мириться с недостачами и помогать предколхозу, чтоб он больше не воровал, а работал честно. Уплатить все налоги!

Фролов И.И. Много на собраниях выступали о недостатках. Всегда старое воевало с новым. Старое у нас тоже еще есть, пережитки еще владеют многими. Много разговоров о воровстве, так например, что Семен Тимоф. украл 2 мешка муки, а молчат. Он может быть не украл, но хлеб пошел без выписки на мельницу. Без документов. Лишнего 1,5 тонны. Бригадир сдает хлеб и вывод, который-то бригадир вор. Так же Семен Тимофеевич направляет наилучшую мякину к себе домой. Это видел я, видели многие женщины и работавшие при молотьбе, как например, Ядушкин Фед. Максим. Бригадир дал дорогу воровству хлеба.

Растрата Атласкина по неопытности. Счетовод, предревизкомиссии с Атласкиным по 3 суток в Хачиках пили, не один раз, и все за счет колхозной кассы. Яндушкин Аф. по себестоимости получает дрова и продает в Нис-Касы по 40 руб. за кубм. Правление потеряло свой авторитет своим воровством и надеяться на него трудно. Акты ревкомиссии предколхоза Яндимиркина с плохими для себя выводами скрыл. (Тов. Музыкову предлагает проверить документы с прошлого года).

Суворов П.И.: Колхоз купил дубье для осей – ушло на ободья Яндушкину Афанасию.

Фролов И.И.: Во время посадки картофеля получали по 0,15 трудодней. Я сорганизовал звено из 8 человек – все смеются над нами и отошли, остались непроворные. Но я их расставил правильно и до полудня заработали по 1 трудодню. На другой день все ко мне, которые отказались, и среди них мать предколхоза...[73]

Протокол № 40 заседания членов правления колхоза «Родник» Юнгинского сельсовета, состоявшегося 9 января 1950 года. На заседании пристутствуют 6 членов и активисты колхоза 8 человек. Повестка дня: 1. О работе ревизионной комиссии колхоза; 2. О помощи МТФ; 3. О необходимости ссуды для строительства; 4. Вывозка школьных дров и для колхоза; 5. Рассмотрение заявлений.

Слушали о работе ревизионной комиссии тов. Захарова Ст. Дм. Он, как председатель ревизионной комиссии, отмечает, что инвентаризация еще не проведена. Яндимиркин Е.Як.: в состав ревкомиссии довыбрать еще двух человек. Постано-

вили предложить старому составу ревкомиссии немедленно начать ревизию и кончить ревизию к 20 январю.

2. О помощи МТФ. Заместитель председателя колхоза Изонов обрисовал трудное положение МТФ, что недостаточно доставляют солому и фураж, и водовоза. Постановили доставщиками фуража назначить Яндимирову Миронию Алексеевну и Еремееву Татьяну Егоровну, водовозом назначить Яндушкина Семена Андреевича с 10-го января 1950 года с окладом – за 100 ведер начислять один трудодень и выделить лошадь водовозу.

Высказывается зав. фермой Васильев Николай: Для фермы невыделен фураж, не хватает дров. Бык истощился и не ест грубый корм. Постановили быка-производителя забраковать и резать на мясо; предложить Сюльдеркину Матвею и Смирновой Анастасии сдать телку 10-месячную, живым весом не ниже 80 кг, до 20 января 1950 года; заставить продолжать работу Белову Татьяну на ферме...

4. Вывозка дров для колхоза и для школы. Слушали слова заместителя председателя Изонова, что наряды по вывозке дров не выполняются, бригадиры халатно отнеслись к вывозке дров. Высказывается зав. школой Захаров Ст. Д.: необходимо вывозить дрова как для колхоза, так и для школы. Зав. фермой Васильев Н.: для фермы недостаточно доставляют дрова. Бригадир Яндимиркин Алексей П.: колхозники не выполняют наряд. Ефремов И.Ег. вносит предложение, если колхозник не выполнит наряд бригадира, то ему лишить на месяц пользование лошадью, дать разрешение на лошадь только при наличии выполнения наряда правления. Постановили возвратить начальной школе дрова один кубометр, взятые еще в 1949 г.»[74]

«Протокол № 5 общего собрания колхозников колхоза «Родник», состоявшегося 29 мая 1950 г. На собрании присутствуют 77 человек. В президиуме: Яндимиркин Егор Яковлевич, Васильев Николай Вас., Суворова Елена Павловна. Повестка дня: 1. Утверждение решений заседаний правления колхоза; 2. О трудовой дисциплине колхозников.

Слушали решение заседания правления колхоза о назначении заместителя предправления колхоза в период учебы председателей колхозов на месячных курсах. Выст. Атласкин И. Он говорит, что если предправления тов. Ефремов не едет

учиться на курсы председателей колхозов злоумышленно, то направить в следственный орган. Постановили утвердить решение заседания правления о назначении зам. председателя на место Ефремова И.Е. Илугина Митр. Ал., на место Илугина – Ершова Михаила Ив. при «за» 30, «против» 4.

Слушали о дорожной работе. Слово имеет пред. правл. Ефремов Иван Егорович: дорожные работы закончить в кратчайший срок и участвовать всем трудоспособным колхозникам. Постановили утвердить решение заседания о дорожном строительстве, мобилизовать с 30 мая на заготовку камня и предложить правлению выделить бригады и бригадира дорожных работ, назначен Поляков М.Еф.

Слушали о конюхах 2-ой бригады. Слово имеет т.Ефремов, что лошади 2-ой бригады находятся без конюхов. Постановили утвердить решение заседания правления назначить конюхом Фролова Е.Н. В случае отказа, исключить его из колхоза и урезать усадебный участок.

Слушали о трудовой дисциплине колхозников. Слово имеет т.Ефремов И.Егорович, что колхозники не все участвуют в полевых работах и не выполняют минимум трудодней. К 15 июня колхозникам и колхозницам принять меры за невыполнение минимума согласно постановления Совета Министров, выполнять все наряды правления и бригадиров.

Слушали заявление колхозницы Яндушкиной Тат. И. с просьбой выделить два воза соломы для покрытия сарая из кассы взаимопомощи. Постановили оставить вопрос до решения заседания правления колхоза.»[75]

«Протокол № 8 заседания правления к-за «Родник» Юнгинского с/с Сундырского р-на Чув. АССР, состоявшего 3 июля 1950 года. Присутствуют 6 членов правления. Повестка дня: 1. О назначении в состав комиссии по Стокгольмскому воззванию; 2. Рассмотрение о выполнении минимума т/д за первый период членами колхоза; 3. Рассмотрение заявлений.

Слушали о назначении в состав сельской комиссии содействия Советскому Комитету Всемирного Конгресса сторонников мира. Постановили назначить в состав комиссии содействия Советскому Комитету Всемирного Конгресса сторонников мира следующих колхозников: 1. Яндимиркина Егора Яковлевича, 2. Сорокину Ольгу Петровну, 3. Илугина Митрофана Александровича.

Слушали о выполнении минимума трудодней за первый период членами колхоза. Постановили за невыполнение минимума т/дней за первый период 1. Яндушкину Перасковию Петровну предупредить, 2. Яндушкину Анастасию Ст. передать в судебные органы, 3. Фроловой Татьяне дать выговор с предупреждением, 4. Яндимиркиной Марине Яковлевне дать выговор с предупреждением, 5. Яндушкину Марию Максимовну предупредить, 6. Яндушкину Зинаиду Алекс. передать в суд, 7. Яндушкину Евдокию Алекс. передать в суд, 8. Яндушкину Хрестину Алекс. передать в суд, 9. Яндушкина Василия Яковлевича передать в суд, 10. По Яндушкиной Луизе Фед. ходатайствовать перед общим собранием об исключении ее из колхоза, 11. Яндушкину Татьяну Ивановну предупредить, 12. Суворову Марфу Михайловну предупредить, 13. Журину Пелагею Гавриловну предупредить, 14. Куликовой Евдокии Ивановне дать выговор с предупреждением, 15. Анчикову Марию Васильевну предупредить, 16. Сюльдеркину Матвею Матвеевичу дать выговор с предупреждением, 17. Сюльдеркину Тамару Матвеевну передать в суд, 18. Сорокину Ольгу Петровну передать в суд, 19. Сорокину Степаниду Михайловну предупредить, 20. Захаровой Юстинии дать выговор с предупреждением, 21. Смирнову Марию Васильевну предупредить, 22. Моисеевой Любови дать выговор с предупреждением, 23. Яндушкину Марию Ивановну передать в суд, 24. Яндушкина Виталия Федоровича передать в суд, 25. Ершова Анатолия Николаевича предупредить, 26. Тепееву Евдокию Егоровну предупредить, 27. Апроськиной Ольге дать выговор с предупреждением, 28. Яндушкину Таисию Ивановну предупредить, 29. Яндушкину Юстинию предупредить.

Слушали заявление Илугина Митрофана Ал-др. об освобождении от должности заведующего складом. Постановили оставить до следующего заседания.

Слушали заявление о помощи хлебом для постройки избы Апроськиной Феклы. Постановили отремонтировать дом за счет колхоза.

Слушали заявление Яндушкина Семена Андреевича с просьбой соломы для крытия крыши. Постановили отказать.

Постановили выданный Яндушкину Ивану Ал. хлеб, как помощь демобилизованным, занести на лицевой счет, так как он не работал и не участвовал в работе.

Слушали заявление Атласкина Ивана Николаевича о выделении хлеба в счет аванса для приобретения коровы. Постановили выделить в счет аванса 64 кг рожью.

Слушали заявление Фролова Ефима Никифоровича с просьбой выдать аванс. Постановили выдать в счет аванса 48 кг рожью.

Слушали заявление Яндимиркина Александра Сергеевича с просьбой выдать в счет помощи солому ржаную. Постановили отпустить 2 воза соломы Яндимиркину Александру Серг. в счет аванса 1950 года.

Слушали заявление Еремеевой Татьяны с просьбой выдать ржаную солому. Постановили выделить три воза в счет аванса.

Слушали заявление Яндушкиной Тат. Ив. с просьбой выдачи ржаной соломы. Постановили полученную рж. солому Яндушкиной Татьяны Ив. занести на лицевой счет в количестве два воза.

Слушали заявление Андреевой Софии с просьбой выдачи аванса хлебом. Постановили выдать в счет аванса 48 кг.

Заявление Васильева Николая Вас. с просьбой выдачи соломы, ржаную солому. Постановили выделить Васильеву Николаю Васильевичу в счет аванса 3 воза ржаной соломы.

Слушали заявление Яндушкина Семена Андреевича с просьбой выдачи ржаной соломы для крытия избы. Постановили выделить Яндушкину С.Андр. 2 воза в счет аванса 1950 года.

Выдать Алексееву Антону 2 воза соломы в счет аванса 1950 г.

Слушали о реализации поросят из фермы. Постановили создать комиссию для выбора поросят для реализации по цене 10 руб. за каждый кг живого веса своим членам к-за. В состав комиссии назначить Яндимиркина Е.Я., Гаврилова Иосифа.»[76]

«Протокол № 9 заседания членов правления к-за «Родник» Юнгинского с/сов. Сундырского р-на Чув. АССР, состоявшего от 7 июля 1950 г. Присутствуют 6 членов правления. Повестка дня: организация труда к уборочной кампании. Выступил член правления т.Яндимиркин Егор Яковлевич: В ближайшие дни, усмотря погоды, выйти на сеноуборку; на уборке зерновых организовать общественное питание. Постановили нанять шофера т.Андреева по трудовому соглашению от 16 августа 1949 года.

Распределение лугов на косовице. Распределить по бригадам. 1-й бригаде: 1. Истĕп вар олăхĕ, 2. Васьки варĕ, 3. Вальм поҫа ойĕ олăх (тăпра кĕперĕ таран), 4. Павăл варĕ; 2-й бригаде: 1. Казанский олăхĕ, 2. Чĕке ту олăхĕ, 3. Сивĕ ҫăл олăхĕ, 4. Оличча варĕ. Постановили пустить в ход двигатель и ближайшие дни найти мастера к движку»[77].

«Протокол № 8 общего собрания членов колхоза «Родник» Юнгинского с/с Сундырского р-на Чув. АССР, состоявшегося 18 июля 1950 г. Присутствуют 102 члена. Председатель собрания Поляков Ефрем Иванович, секретарь Васильев Николай Васильевич, член Кузейкин Виктор Петрович. Повестка дня: 1. Об объединении колхозов; 2. Разные.

Слушали. О слиянии колхозов выступил старший агроном с/х отдела т.Филиппов. По слиянии колхозов у нас будет выгодный и правильный семенной и травопольный севооборот. В районе уже многие колхозы объединились.

Выступление старшего землеустроителя района. Он в своей речи отмечает, что при слиянии колхозов будет побригадный севооборот. Поэтому ни один колхоз не останется необъединенным. Предлагает объединиться, например, с соседним колхозом «Новая Юнга», т.к. у вас самый лучший выход по земельному устроению. Распределение доходности будет побригадно.

Выступление т. Филиппова. Он отмечает, что в к-зе «Новая Юнга» есть трудовая дисциплина и вас дотянут к этому, разъясняет доклад Хрущева о слиянии колхозов.

Выступление Яндушкина Е.В. Он говорит, что нам выгодно слияние с соседним колхозом «1 Мая», так как у нас рядом земельный участок.

В прениях выступил Яндимиркин В.Як. Он отмечает, что есть предложение колхозников о слиянии с колхозом «1 Мая». Постановили по голосовании слиться с колхозом «1 Мая». Выбор счетчиков: Ершов Михаил Иванович, Яндушкин Егор Васильевич. Постановили предложить правению колхоза «Родник» ходатайствовать о слиянии с колхозом «Революция 1905 года»; В случае отказа со стороны колхоза «Революция 1905 года» предложить ходатайствовать перед исполкомом Райсовета. При голосовании о слиянии с колхозом «Революция 1905 года» «за» составляет 85 голосов»[78].

## МСО

Юнкӑ тӑрӑхӗнче ӗлӗк пысӑк предприятисем пулман, техника аталанӑвӗн тӳпи арман шутланнӑ. Кашни ялӑн тенӗ пекех вӗсем пулнӑ. 1908 ҫ. тӗлне Юнкӑпуҫ ялйышӗн пӗр шыв арманӗ тата икӗ ҫил арманӗ пулнӑ. Ыттисен унашкалах мар: Мӑнъялӑн – 2 шыв арманӗ, Чоккассин – 1 шыв арманӗ, Кӗҫӗн Кӑпасӑн икӗ ҫил арманӗ, Явӑльнян – пӗршер шыв арманӗпе ҫил арманӗ. Вӗсем пурте Юнкӑ шывӗ ҫинче ларнӑ, талӑкра 35–100 пӑт таран авӑртма пултарнӑ[79].

1920–1930 ҫҫ. вӗсем ҫумне ытти производствӑсем хушӑннӑ: Ҫармӑскассинче клепка, ҫуна, урапа кустӑрми тӑвасси (1935 ҫ. 4 ҫын ӗҫленӗ), Явӑльняра кантӑр ҫӑвӗ кӑларасси, Юнкӑра выльӑх ҫӑвӗ туса илесси (1935 ҫ. 9 ҫын ӗҫленӗ) т.ыт.те. Паллах, ҫак вак-тӗвек предприятисен ӗҫ калӑпӑшӗ те, пӗлтерӗшӗ те пысӑках пулман[80].

Халӗ вара Юнкӑпуҫӗнче вырнаҫнӑ «Моградушская» строительство организацийӗ Юнкӑ тӑрӑхӗнче ҫеҫ мар, районта та, республикӑра та паллӑ вырӑн йышӑнать. Ҫакӑнта Сӗнтӗр районӗнчи «Броневик», «Новая Юнга», Чкалов яч., «Заря», «Революция 1905 года» колхозсен 16.04.1959 пӗрлехи йышӑнӑвӗ-



МСО техника паркӗ. 1960 ҫҫ



МСО ĕçченĕсем ферма çуртне хăпартаççĕ. 1970 çç.



Малта МСО-ри хĕрарăм-строительсем. 1970 çç.

пе колхозсем валли строймателиалсем хатӗрлекен «Заря коммунизма» ятлӑ завод пуҫараҫҫӗ. Пая ҫывӑхри Жданов яч., «Знамя», Калинин яч., «Родина», Свердлов яч. тата «Новый путь» колхозсене илсе ун никӗсӗ ҫинче 6.03.1963 Етӗрне районӗн Юнкӑри МКСО организацийӗ йӗркелеҫҫӗ. Муркаш районне тунӑ май, 22.02.1965 виҫӗ МКСО («Коммунизм», «Дружба» тата «Заря») пӗрлештерсен те вӑл ҫакӑнтах юлать, «Моргаушская» МКСО ят илет. Хыҫҫӑн вӑл – «Моргаушская» СМУ (строительство-па монтаж управленийӗ, 5.03.1966), МПМК (17.01.1976), МСО (21.02.1987), АОЗТ МСО. 2000 ҫ. февральтен – ЗАО МСО «Моргаушская». Предприяти нумай ҫул хушши «Чӑвашколхозстрой» пӗрлешӗве пӑхӑнса тӑнӑ. Вӑл раствор, бетон, блоксем хатӗрлет, строительствопа монтаж ӗҫӗсене пурнӑҫлать, юлашки ҫулсенче тата суту-илӳпе ӗҫлет. Районта вӑл чӑх-чӗп фабрики, сыватӑшсем, шкулсемпе ача сачӗсем, клубсем, пурӑнмалли ҫуртсем, фермӑсемпе ампар-кӗлетсем т.ыт.те тунӑ ҫӗре хутшӑннӑ.

1970 ҫҫ. кунта икҫӗр ытла ҫын ӗҫленӗ, 1993 ҫул вӗҫӗнче – 137, халь – ялан ӗҫлекенсем пӗр сакӑр теҫетке. Предприяти ертӳҫи пулнӑ: Аркадий Петрович Ягодкин (16.04.1959–5.03.1963), Палладий Кузьмич Смирнов (20.09.1963–13.02.1965), Петр Георгиевич Скворцов (14.12.1966–10.08.1969), Иван Андреевич Андреев (11.08.1969–20.02.1973), Петр Дмитриевич Дмитриев (13.12.1974–13.08.1976), Николай Александрович Гусак (14.09.1976–20.06.1999). 2000 ҫултанпа предприятие Виталий Владимирович Коротников (Ҫӗрпӳ районӗнчи Тури Шорҫырмара ҫ.) ӑнӑҫлӑ ертсе пырать. Вӑл Юнкӑпоҫ ялне 2002 ҫ. газ кӗртнӗ чух та хастарлӑх кӑтартнӑ[81].

Ҫак предприяти нумай Юнкӑпуҫ ҫыннишӗн тӑван ӗҫ кӗтесӗ пулса тӑнӑ, теприсем хисеплӗ ятсене те тивӗҫнӗ. Кунта чылай ҫул ӗҫленӗ Захар Алексеевич Яндушкин «Тава тивӗҫлӗ механизатор» ятне илнӗ, Н.А.Гусак директор (1939–1999) – «Хура тӑпраллӑ мар зонӑри агропромстройӑн хисеплӗ строителӗ» (1995), М.Ф.Яндимиркин (1934–1998) – «Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ строителӗ» т.ыт.те. Михаил Федорович Яндимиркин Юнкӑри шкул хыҫҫӑн 1952 ҫ. Киселевскри сӑрт-ту промышленноҫӗн шкулне пӗтернӗ, 1953–1956 ҫҫ. ҫарта пулнӑ. МСО 1959 ҫ. пуҫланнӑранпах, виличчен, унта ӗҫленӗ: электрик, механик, слесарь, токарь пулнӑ. Шанса панӑ ӗҫе яланах вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа пурнӑҫланӑ. Хисеплӗ ятсӑр пуҫне «Хисеп палли» ордена (1977) та тивӗҫнӗ[82].



МСО купаланӑ «Новая Юнга» колхозри 18 хваттерлӗ ҫурт.



МСО ҫӗкленӗ Нискассинчи шкул ҫурчӗ. 1980 ҫҫ.




МСО Моргаушская ЗАО пуҫлӑхӗ
Коротников Виталий Владимирович. 8.12.2006



Антонова Надежда Геннадьевна – штукатур-маляр, Игнатьев Алексей Владимирович – мастер, Адамов Владислав Михайлович – каменщик.

# ЯНТУШ ĂРАТТИ[83]

**Янтуш ăраттине пуçаракансем.**

Янтуш ăраттине пуçаракансенчен малтантараххи **Сэпет** ятлă çын паллă. Спиридон Михайлович ăна Хаяр Иван вăхăчĕ хыççăнах (XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче) пурăннă пуль тесе шутланă. Сэпетăн ывăлĕ **Енкĕлтĕ** (е Янкилтĕ) пулнă. Ун ячĕпе вар та пур – 1 Май выçăлкки патĕнчи Енкĕлтĕ варĕ. Вăл пыл хурчĕпе выльăх питĕ нумай тытнă пулнă[84].

Енкĕлтĕпе пĕр вăхăтра çывăхрах, Юнкă тăрăхĕнче тата Атеней Маттюшки пурăнни паллă. Ку çын сумлă çын, сутуилÿпе аппаланнă пулмалла. Анчах пĕррехинче вăл Етĕрне хулинчи Гришка Беляева 30 тенĕ парăма кĕнĕ, вăхăтра татăрайман. Ун чухнехи хаксемпе – хăрушла пысăк сумма, темиçе ĕнелĕх. Лешĕ вара çавăншăн 1667 ç. Маттюшка кил-çуртне, пĕтĕм пурлăхне туртса илет, хăйне вара çемйипех Чĕмпĕр уесĕнчи Мертлĕ ялне тара парать. Ашшĕ, Атеней, унтах вилет, хăй тĕрлĕ хура ĕçсенче виçĕ çул пулать. Амăшĕ 1672 ç. та унтах пурăннă. Унсăр пуçне Г.Беляев Матюшкан Юнкă тăрăхĕнчех пурăнакан пиччĕшĕнне çĕнĕ кĕрĕкне туртса илет, кĕсрине çавăтса каять[85].

Енкĕлтĕн ывăлĕ, Сэпетăн мăнукĕ, **Тевел** ятлă пулнă. Ăна С.М.Яндуш хăйĕн ĕçĕсенче час-часах асăнать. Тевел Юнкă тăрăхĕнче паллă йĕр хăварнă пулмалла: çĕр çул иртсен те ялйышра ун çинчен сăмах çÿренĕ, вăл курса çÿренине пĕр-пĕрне каласа панă[86]. Акă мĕн çырать Тевелĕн мăнукĕн мăнукĕ Спиридон ун çинчен:

«Предки мои – служилые горные черемисы Ядринского полка. Пращур мой, Тевель в 1696 году был под Азовом вместе с козьмодемьянскими стрельцами»[87]. «...Под Азовом в сию войну (походы Петра Великого) был и прапрадед мой Тевель, живший после этого долгое время на родине и рассказывавший о своих подвигах подобным себе чувашам. Значит, Тевель был времен царей Алексея Михайловича и Петра Великого»[88].

Чикмесен çар ушкăнĕнче 240 çын пулнă. Ăнăçлă çарçÿревпе, çамрăк патша ĕмĕчĕсемпе хавхаланнă ветерансем çав пулăма асра хăварас теççĕ. Кĕçех вара, пĕр çура, уес хулинче, Спасски чиркĕвĕ умĕнчи Пасар лапамĕнче хăйне евĕр палăкчасовня, Стрелецкая башня, туса лартаççĕ. 1698 ç. августра



Муркаш районĕнчи учительсем
Чикмери Стрелецкая башня (часовня) умĕнче. 19.10.2006.

ăна уçнă чухне Азовран çĕнтерӳпе таврăннă стрелецсем кăна мар, пĕтĕм хула халăхĕ, Хусантан пуçлăхсем пулнă. Çак палăк халĕ те Атăл хĕррине илем кӳрет.

«Предания чуваш» очеркĕнче Спиридон Михайлович çак çын ăçта пурăннине те çырать, ăна унта «Тевеля» тенĕ[89]. Тевел пурăннă чăваш ялĕ Чикме уесĕн пĕр вăрманĕнчи сăрт çинче вырнаçнă, «Валĕм-хоçа» (авторăн: «Балын-Гозя» тата «Валим-хозя») киреметне хирĕç пĕр тĕлте ларнă-мĕн. Пĕррехинче Тевелпе юлташĕ лашасем çине тырă тултарнă михĕсем урлă çакнă та Чолхола тăрăхне сутма кайнă. Ăнăçлă суту-илӳ хыççăн вĕсем киле килме тухаççĕ. Пĕр ял витĕр тухнă чух пăхаççĕ: ялта пĕр чун та çук, пĕтĕм халăх усал мурпа (кассу чирĕпе) вилсе пĕтнĕ. Кусем вара вилнĕ çынсен килĕсене кĕреççĕ те темчуль пăхăр укçа тупаççĕ. (Ун чухне пăхăр укçа питĕ анлă сарăлнă пулнă). Вара çаксем хăйсен пушă хутаçĕсемпе миххисене тăп-тулли пăхăр тултарса киле таврăнаççĕ. Анчах вĕсем тупăшпа таврăнсан темиçе кунтанах усал мур кунти çынсене те хуçма пуçлать. Ялйыш Валĕм-хоçа вĕсене хур тăвать пулĕ

тесе, киремете лашасем, ёнесем пусса парса ыр тăвать – çапах усси çук: халăх çавнашкалах тăкăнать. Кĕç-вĕç вилĕм çитсе килессине сиссе, Тевелпе юлташĕ ку вырăнтан куçса кайса çăлăнаççĕ. Çак çав тери усал ерекен чир вĕсем илсе килнĕ йышлă пăхăрпа пĕрле яла килнĕ ёнтĕ[90].

Калас пулать, XVII ĕмĕр вĕçĕнче – XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнче Сăртлă Атăлçи тăрăхĕнчи чăвашсем самай сайраланнă, Мускав влаçĕн пусмăрне чăтаймасăр аякри çĕрсене куçса кайнипе анчах мар, тĕрлĕ хăрушă мурсемпе вилсе пĕтнипе те. Тевел малтан пурăннă ял е кас та çаплах пĕр-пĕр касу чирĕпе пĕтнĕ. Тевел малтан пурăннă вырăн Юнкă тăрăхĕнчех пулнă, куçасса вара вăл хальхи Юнкăпуç ялĕ вырăнне куçса ларнă. Ялти ватăсем каланă тăрăх, Тевел хальхи ялтан виç çухрăмри Киçортра пурăннă, унта нӳхреппе вучах пулнă лакăмсем те ĕлĕкрех пурччĕ теççĕ. Çав енчи Сиçăл тепĕр еккинчи вăрмана ялйышра тахçанах «Киçорт вăрманĕ» теççĕ, çывăхра Раçкаварĕ, Тăм варĕ, Маркка варĕ. Юнкăпуç ваттисем каланă тăрăх, Киçортран, Тăм варпоçĕнчен, кунта çынсем темĕнле вăкăр хыççăн куçса килнĕ-мĕн. Валĕм-хоçа вырăнĕ («Валĕм-поçай») халĕ те пур. Вăл – Илмечĕ кокри енче, Текерле варĕ çумĕнчи пĕчĕк ката[91].

Тевел ывăлĕсем **Янтушпа Янтимĕр** пулнă. Çаксем хальхи вырăна вырнаçса ял пуçарнă пулин те ашшĕ пурăннă вырăн вĕсен шутланнă, унта вĕсем кайран утă çулса пурăннă. Колхозсемччен унта Чакак хуттăрĕ пулнă, çак лайăх çĕре Юнкăри Чагаксем, Чаппи ывăлĕсем йышăннă пулнă. Ялта вара Янтуш пурăннă вырăна Янтуш çăлĕ (е Валаклă çăл) теççĕ. Юнкăран темиçе çухрăмри Нискасси çĕрĕнчи унтан пĕр виç çухрăмра Лешолăха сулахай енчен тухакан Янтушна варĕ те интереслĕ. «Янтушна» вар ячĕ «Янтуш» тата «ĕшне» сăмахсем çыхăннипе пулнă.

Янтушпа Янтимĕр XVIII ĕмĕрте пурăннă çынсем. Пурте пĕлеççĕ, çак ĕмĕр варринче чăвашсене Христос тĕнне кĕртнĕ. Çавăнпа Янтушпа Янтимĕре те хăйсен чăваш ячĕсемсĕр пуçне çĕнĕ тĕн килĕштернĕ ятсене вăйпа йышăнтараççĕ. Янтуш(ка) ун чухне Яндуш Тевелев вырăнне, Иаков Иванов е хальхилле Яков Иванович пулса тăнă[92]. Çакна та каламалла, çав вăхăтри чăвашсем юлашки хут хăйсен чăн-чăн ячĕсемпе çӳренĕ. Вĕсене, çав ятсене, вĕсен Христос тĕнĕн ячĕсемпе çӳрекен тăхăмĕсем яланлăхах астуса юлнă. Чăвашлăха хисеплесе-ши, вĕсем чăн чăваш ячĕпе çӳренĕ юлашки ватмаçаксен ятне хăйсен хушамачĕ

тӗпне хунӑ. Юнкӑпуҫӗнче те Янтушран тӑсӑлнӑ йӑха Янтуш ӑратти теҫҫӗ, хут ҫине Яндушкин тесе ҫырнӑ.

Хӑй пурӑннӑ чухне Спиридон Михайлович «Яндушкин» тесе алӑ пусайман. Вӑл «Спиридон Михайлов» тесе кӑна палӑртнӑ. Вӑл вӑхӑтри вырӑс чӗлхи правилисем тӑрӑх, «Михайлов» тени ашшӗ ятне кӑна пӑлтернӗ. Ӑратӑ ятне, хушаматне палӑртма та ун чух турхан (дворян) йӑхӗнчисем кӑна пултарнӑ. Паллах, вӑл хӑйӗн хушаматне те ҫырнӑ пулсан пуриншӗн те унӑн ячӗ килӗшмелле, ӗненмелле тата витӗмлӗ пулатчӗ. Спиридон Янтуш ун чухнехи самана тата вӑйлӑ Христостӗн ҫыннисем чӑваш ячӗсене ҫывӑха та яман пирки унашкал алӑ пусайман.

Спиридон Михайлович Янтимӗре хӑйӗн нихӑш статйинче те асӑнман. Анчах Янтимӗр чӑнах та Янтушӑн тӑванӗ пулнӑ тесе ялти ватӑсем пурте ҫирӗплетеҫҫӗ.

Ҫамрӑк чух Янтуш чухӑн пулнӑ, аякра, Хусан леш енчи тутарсем патӗнче ӗҫлесе пурӑннӑ[93]. Вӑл вӑхӑтра Юнкӑ ялӗсенчи (касӗсенчи) ҫынсем, ытларах ҫамрӑксем, Хусан е Чӗмпӗр енне чылаййӑн кайнӑ пулнӑ. Хӑшӗсем ялтан ӗлӗкрех куҫса кайнисем патне, теприсем тусӗсем патне вырнаҫнӑ. Ун чухне те хальхи пекех аякка ӗҫлеме ҫӳренӗ, лере хӑйсене ҫӑмӑл пулман, пылпа ҫура иштермен пулин те. Аякка кайсан час килеймен, ял тивӗҫӗсене те (чи малтанах ялйышпа пӗрле пӗрлехи хырҫӑкуланай тӳлесси) пурнӑҫлама васкаман. Вӗсене вара ялйыш (XIX ӗмӗрччен Юнкӑ тӑрӑх пӗр ял пек пурӑннӑ, шутланнӑ та, килӗсем кӑна ушкӑнӑн-ушкӑнӑн тӗрлӗ ҫӗрте ларнӑ) шыраттарнӑ, ялта юлнисем инҫете тарнисемшӗн те хырҫӑ тӳлесшӗнех пулман ӗнтӗ. Ҫак сӑлтавпа Етӗрне уесӗнчи Сорӑм, Выл, Етӗрне вулӑсӗсем патша ячӗпе 1701 ҫ. ҫӑхав та тӑратнӑ.

Аякка тарса пӗтнӗ юнкӑсем хӑйсене влаҫсем тупсан 1722 ҫ. панӑ хуравсем:

«Яманай Ямулӗ. 12 ҫул каялла нишлӗ пурӑннӑ пирки Юнкӑран тартӑм. Сӗве уесӗнчи Кӳлчӳк ялӗнчи Килкка Петӗрӗ тутар килӗнчи тарҫӑ пултӑм. Юнкӑна 1722 ҫулта таврӑнтӑм.

Алтэрек Янсэккейӗ. Чухӑн пурӑннӑран пӗр 10 ҫул каялла Юнкӑран тартӑм. Сӗве уесӗнчи Сойхӑн ялӗнчи Илтэряк Итэлейӗ чӑваш килӗнчи тарҫӑ пултӑм. 1722 ҫулта Юнкӑна таврӑнтӑм.

Иштэряк Алтэрекӗ (ашшӗ). Чухӑнранах пӗр 12 ҫул каялла Юнкӑран тартӑм. Сӗве уесӗнчи Сойхӑн ялӗнчи Илтэряк Итэлейӗ чӑваш килӗнче пурӑнтӑм.

Ахманей Полайĕ. Аттене пĕлместĕп, аҫаҫури атте Салмăшпа пĕр 30 ҫул каялла Юнкăран тартăм. Пĕр 5 ҫул Сĕве уесĕнчи Таттай ялĕнчи Тарпăш Ишмечĕ тата ытти тутарсем патĕнче тарҫăра пурăнтăмăр. Кайран хамăр килпе ҫав Таттай ялĕнчех тĕрлĕ ĕҫе тара кĕрсе, ыттисем пекех хырҫă тӳлесе пурăнтăмăр. Пĕр вун ҫул каялла атте вилчĕ... Хыҫҫăн Полай тутар хĕрне качча илет, ачисем Кулай (12 ҫулта) тата Хутайпирта (4 ҫулта). 1719 ҫулхи перепись чухне вĕсене ашшĕпе пĕрле Таттай ялйышне кĕртсе ҫырса хураҫҫĕ. Халь вара унтан кăларса ашшĕпе пĕрле Юнкă ялйышне кĕртнĕ. Полай Таттай ялĕнчи кил-ҫуртне сутма, выльăх-чĕрлĕхпе тырпулне илсе килес тесе кайсан, лере ăна нимĕн те парса яман.

Касанпай Пантĕкĕ. Вăл 65 ҫулта. Юнкăран пĕр 17 каялла тухса кайнă. Чĕмпĕр уесĕнчи Тойҫа ялĕнчи Роман Яшучĕ чăваш патĕнче тара кĕрешнĕ.

Окаттей Сакачĕ. Вăл 17 ҫулта. Пĕр 12 ҫул каялла ашшĕпе, Уреккей Окаттейĕпе, тата пиччĕшĕпе, Саватерпа, Юнкăран тухса тарнă. Хусан уесĕнчи Сивĕ Ҫăлсем ялĕнче Янкалыч Москейĕ тутар килĕнче тара кĕрсе 2 ҫул пурăннă. 10 ҫул каялла ашшĕ вилнĕ. Ашшĕсĕр унта вăл 8 ҫул ĕҫлесе пурăннă. Саватер пиччĕшĕ вара халĕ те унта, Москейшăн та карап йывăҫĕ хатĕрленĕ ҫĕрте ĕҫлет. Сивĕ Ҫăлсем ялĕнчен кайсан тепĕр 2 ҫул Хусан уесĕнчи Тинкеҫ ялĕнче Илай Ураскилти чăваш патĕнче тарҫăра ĕҫленĕ, нимле хырҫă та тӳлемен»[94].

Тевел Янтушĕ кунта асăннă хăйсен ял ҫыннисенчен чылай маларах тăван енне ҫитнĕ пулмалла. Тата ĕҫ пĕтерсе киле таврăннă чух вăл ҫул ҫинче ҫăвăр хурт тытать. Телее, Янтушăн пыл хурчĕсем ĕрчесе каяҫҫĕ. Кайран вăл темиҫе ҫĕр вĕлле тытнă, пуяна тухнă. Янтуша хисепленĕ. Хăй те ĕҫленĕ, пысăк килйышне те хăваланă. Ĕҫҫи вăхăтĕнче вăл уйсем тăрăх ларса ҫӳренĕ, кам мĕнле ĕҫленине сăнанă. Кахал-наяна асăрхасан, ăна саламатпа ислетнĕ, ĕҫе юратма вĕрентнĕ.

Янтушăн хĕрсем нумай пулнă. Вĕсем ҫӳллĕ те ҫирĕп пӳ-силлĕ пулнă, вăрҫма харсăр амазонкăсем евĕр юланутпа ҫӳренĕ. Янтуш арăмĕ вара чурăш («дичь») хыҫҫăн сунара кайма питĕ юратнă. Мĕн те пулин тытсанах вара ăна упăшки валли пĕҫернĕ. Вара утаралла: «Килях, Янтуш! Апат янтă!» – тесе кăшкăрнă, тет[95].

Янтуш хăй вăхăтĕнче Юнкă тăрăхĕнче хисеплĕ те чаплă ҫын пулнă. Ун пирки Спиридон Михайлович акă мĕн ҫырать: «...прадед Иаков Иванов Яндуш был при Екатерине II пове-



Авалхи утар.

ренным своего общества (Юнкӑ ял ушкӑнӗ) по земляным домам. Умный и богатый Яндуш оставил своему сыну и моему деду Симиону довольно пчел и скота[96]. ...В дачах деревни Юнги-Ядриной (хальхи Юнкӑ ял тӑрӑхӗ) в лесу чуваши показывают признаки, где обитали их знаменитый предок Янгильда, имевший довольно пчел и скота; а потом признаки дома строгого и благоразумного Яндуша, которого чуваши, по кончине его, летом повезли хоронить на 9 лошадях, запряженных в дровни (ҫара ҫуна), дабы на телеге не расстрясло прах великого их родоначальника. Яндуш помер после принятия святого крещения»[97]. Ҫавӑнпа ӑна юнкӑсем тӗне кӗриччен пытарнӑ Хосан кӗперӗ патӗнчи авалхи ҫӑва (Юнкӑпуҫпа Коминтерн выҫӑлкки хушшинче) ҫине мар, Чемей чиркӗвӗн ҫӑви ҫине пытарнӑ. Вӑл ватӑлсах пӗр 1760 ҫҫ. вилнӗ пулмалла.

**Малтанхи Яндушкинсем**

Янтушӑн ывӑлӗсем те пулнӑ: Ваҫли, Хветӗр тата Ҫимон. Ваҫлинчен хӑйӗнчен пӗр ывӑл Праньkka (Прокопий) ҫеҫ пулнӑ. Праньккан вара 4 ывӑл пулнӑ: Оҫӑп, Куҫма (1799 ҫулта ҫуралнӑ, унтан Яндушкинсем йышлӑ хунанӑ), Михти (кунтан та Ян-



Яндушкин Якку ывӑлӗсем: Василий (1930 ҫ.ҫ.), Матвей (1911 ҫ.ҫ.) тата Федор (1918 ҫ.ҫ.)

тушсем йышлӑ кайнӑ) тата Йокор (ҫарта 23 ҫул пурӑнсан вилнӗ). Янтуш Хветӗрӗнчен йӑх-тымар тӑсӑлни паллӑ мар.

Янтуш Ҫимонӗн, С.М.Янтуш аслашшӗн, Михалапа (Михалкка та тенӗ пулмалла) Охваниҫ ятлӑ ывӑлӗсем пулнӑ. Михала салтака Яндушкин (Яндуш) хушаматпа кайса килнӗ. 1815 ҫул хыҫҫӑн ҫеҫ вӑл Михаил Семенович (Семенов) пулса тӑнӑ[98]. Ҫарта чух вӑл Мускавра та пулнӑ. 1815 ҫулта е унтан кӑшт маларах Михаил Семенов Яндуш кирасир оставкӑна тухнӑ[99].

Янтуш Михалин хӑйӗн ӗмӗрӗнче икӗ хут авланма лекнӗ. Йывӑр ӗҫре чирлесе кайнӑ арӑмӗнчен Праски (Перасковья) тата Марок (Марья) ятлӑ хӗрӗсем юлнӑ[100]. Малтанхи арӑмӗ вилсен, Спиридон Яндуш ашшӗ тепре авланать. Иккӗмӗш арӑмӗ Сӑпани (Стефанида Николаевна) Юнкӑпуҫне Тутаркас вулӑсӗнчи Чӑрӑшкассинчен (халь Вомпӑкассине кӗрет) качча килет. Вӑл вӑхӑтра Юнкӑпуҫ (мӗн 1840 ҫулччен) Оринӑ вулӑсне кӗнӗ[101]. Сӑпани, хӑйсен тӑван ялӗ Шактенваж ҫармӑс ялӗпе юнашарах ларнӑран-ши, чӑвашпа вырӑс чӗлхисене пӗлнипе пӗрлех ҫармӑсла та пӗлнӗ. Ҫак чӗлхесене унран ачисем те вӗренсе юлнӑ. Спиридон Михайлович амӑшӗ 1846 ҫ. вилнӗ. Амӑшӗ хӑйӗн ӗмӗткӑмӑлне, халӑх йӑлисене хисепленине, тӑван тавралӑха юратнине ачисене вӑйлӑ витернӗ. Вӑл уйрӑмах Спирккана юратнӑ. Лешӗ йӑваш, итлекен ача пулнӑран кӑна мар, ытларах тӗрлӗ ӗҫ тума тӑрӑшнӑран[102]. Ҫичӗ ҫулта чухнех Спиркка тӑхӑр хуттӑр таран лапрашки ҫип арланӑ. Амӑшӗ витӗмӗпех вӑл хӑйӗн «Балдран-базар в Козмодемьянском уезде» статйине ҫырнӑ, ҫак

пухăра (тапăра) вăл хăй те, куккăшсем патне кайнă май, пулса курнă. Çак асамлă вырăна халь те Çичтӳпе вăрманĕ, çармăссем – Систывер, теççĕ.

**Янтуш Михали ывăлĕсем.**

Михалапа Сăпанин пилĕк ывăл: **Митри** (Дмитрий), **Крикори** (Григорий), **Спиркка** (Спиридон), **Илья** тата икĕ хĕр: **Татьокпе** (Татьяна) **Плаки** (Пелагея) пулнă[103]. Вĕсем пурте кайран Спиридонсăр пуçне çĕр ĕçлесе пурăннă, яштака та илемлĕ пулнă, «вырăс пек» тенĕ вĕсене ялта.

Спирккан аслă пиччĕшĕ Митри пĕр 1815-1817 çç. çуралнă, 1838 çулта салтака кайнă. Унта вăл ытларах Питĕрте пулнă – Охтăри тар завочĕ çумĕнче тăракан гварди бригадин резерв батальонĕнчи параппанçă. 1853-56 çулсенчи Çĕвастоппăль (Крым) вăрçине те хутшăннă[104]. Гвардире службăна ăнăçлă пĕтерсен, шăллĕ 1860 çулта çырнă тăрăх, **«теперь в отставке, женился и живет хорошо»**[105]. Митрин виçĕ ывăлĕнчен **Максăмпа Иванăн** тепĕр сыпăкран ăру татăлнă (Иванăн ывăлĕ **Николай**, 1919-1972 çç. пурăннă, Суворов хушаматпа çӳренĕ). **Михали** ятлă ывăлĕнчен кайнисем **(Элекçи, Петĕр** тата **Михали)** Сорокин хушамата йышăннă. Митри, мăнукĕ Н.И.Суворов аса илнĕ тăрăх, 80 çул таранах пурăннă[106]. Янтуш ăратти пирки упранса юлнă асаилӳсенчен чылайăшĕ пирĕн пата çак Митри урлă çитнĕ те[107].

Янтуш Михалин тепĕр ывăлĕ пĕр 1817-1820 çç. çуралнă. Крикори çинчен шăллĕ Спиридон ниçта та тĕллесе çырман. Пире вăл пĕрре шăллĕ 1861 çулхи январьте вилсен Митрипе иккĕш пытарма кайни çеç паллă[108]. Çапах та Спиридон Янтуш хăйĕн «Казанские губернские ведомости» хаçатра 1852-53 çапăннă «Чувашские свадьбы» статйинчи Крикори сăнарĕ интереслĕ. Спиридон Михайлович ĕçĕсенчи пур сăнарсене пăхсан та, вĕсем пурте унăн тăванĕсем е çывăх пĕлĕшĕсем пулни курăнать. Нумай çĕрте вăл çавăн пирки хăех çырать. Çакна та каламалла: илемлĕ литературăра, сăнарĕсем пур тĕпчев ĕçĕсенче, унта пĕрремĕш утăм тăвакансем ялан тенĕ пекех сюжетне кăна мар, сăнарсене те хăйсемпе çывăх çынсемпе пулса иртнинчен илеççĕ, ячĕсене те хăвараççĕ. Асăннă статьяра[109] кĕрӳ каччине сăнама автор Крикори пиччĕш авланнипе усă курнă ĕнтĕ. Статьяра унăн тăванĕсен сăмахĕсем, вĕсен хăтланкаларăшĕсем ĕмĕрлĕхех

çырăнса юлнă. Акă, малтанхи пайĕнчех **«молодец Григорий женится на Черной Дарье»** – тесе çырнă (кунта хура тени тиркесе мар, мухтаса, хитре тесе калани пулать). Кунтах ашшĕ (Михала ĕнтĕ) çураçса килнĕ чух каласа пыни те пур: **«Торă полăшрĕ пере хĕр çораçма. Манăн улăм Крикори пор, тятăп эпĕ; ăна торă полăштăр мана та пăхмашкăн, патшая та полăшма – аттяй-апай пак порнма торă калатăр ăна»**[110].

Е тата çакăнтах хĕрçумсем çураçса кайнă хĕр валли япаласем çĕленĕ чух юрланă сăмахсем: **«Пирĕн чипер, хитре ача пор Крикори, хора хĕрĕм Тарепи, Тарепи! Ай-яй-яй-яй-яй-ойяй-ях»**. Кунта хĕрсем Крикорин пулас мăшăрĕн Дарьян ятне чăвашлатса Тарепи тенĕ. Крикоринчен Яндушкинсем йышлă хунанă – унăн хăйĕн кăна ултă ывăл пулнă: **Хветĕр** (Чемее пурăнма куçнă), **Тимоххи, Онтрюшка** (Андрей), **Иван, Таççи** (Герасим) тата **Михала**.



Владимир Алексеевич Яндушкин (хыçалта, варринче) хăйĕн çемйипе: 1) Галина, 2) мăшăрĕ Елена (Шупоçран килнĕ), 3) хĕрĕ Людмила, 4) ывăлĕ Вячеслав, 6) кĕрӳшĕ Григорьев Александр. 1979 ç. декабрь.

Вăхăтпа шутласан, Крикори (Илья тесе шутлани иккĕлентерет) арăмне Корчак ялĕсенчен пĕринчен илнĕ. Çакă С.Яндуш çырнă «Ватă çын Павел Фролов çамрăк хăтине хăйĕн ашшĕпе 1769 çулта пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каласа парать» ятлă калавра палăрать. Тата вĕсен аккăш-йăмăкĕсем нихăш те вăл еннелле качча тухман. Спиридонăн хăти, пиччĕшĕн хуньстарикĕ вара калавра асăннă **Шатеряк Хролĕн ывăлĕ Павăл** пулать темелле. Шатеряк ятлă çын вăл вăхăтра хальхи Кăмăркассинче пурăнни паллă пире[111]. Çавăнпа та С.Яндуш «Чувашские свадьбы» статйинче Юнкăпуç каччи 6 çухрăмри Кăмăркасси хĕрне илнине кăтартнă теме пулать.

Миколапа Илья Спиркка шăллĕсем пулаççĕ. Миколана виççĕмĕш пиччĕшĕ темиçе хут та леш салтакра пулнă пирки асăнать[112]. Арçын çарта пулнине чăвашсем халь те, ĕлĕк те мухтанă, унта пулнă çынна яланах хисепленĕ. Çапах та XIX ĕмĕр варринче салтака кайма никамах та васкаман, пачах урăхла – унтан хăтălма тăрăшнă. Кавказра колонизаци вăрçи пынă, Европăра Раççей жандарм ĕçĕсенче пурнăçланă т.ыт.те.

Спиридон Михайловича та, ĕçре хăш-пĕрисем курайман пирки, кĕвĕçнипе, çара яма питĕ тăрăшнă. Виçĕ хут та ăна рекрут пулма тăратнă. Вăл юлашкинчен: «Манăн ахалех икĕ тăван çарта», – тесе аран хăтăлнă вĕсем тапăннинчен. Кун пирки С.Яндуш Хусана кайсах хăйĕн унти пуçлăхĕсене ĕнентернĕ, вара тин ăна чикмесем салтака хăвалама пăрахнă[114].

1848 ç. Хусана Спиридон ашшĕпе тата Миколапа Илья шăллĕсемпе кайнă пулнă. Ахаль те Спиридон ашшĕпе хутăшнă, хăй тăван Юнкăпуçне ытлах кайкаламан пулин те, ашшĕ ун патне пырсах тăнă[115]. Ашшĕ хăйĕн Спиркка ывăлне хытă юратнă, тата Чăвашра ун ывăлĕ пек ӳсĕмсемлĕ паллă çын çукки ăна савăнтарнă. Ахальтен мар ĕнтĕ Спиридон вилнĕ тенĕ хыпара илтсен вăл, хуйхăрнипе пуль, тӳрех вилсе кайнă[116].

Хусанта Михала хăйĕн кĕçĕн виçĕ ывăлĕпе хула нумай курса çӳренĕ, чылай вуланă, вĕреннĕ Спиркка ашшĕпе шăллĕсене хулари тĕлĕнтермĕшсене, кăсăклантаракан япаласене ăнлантарса кăтартса çӳренĕ. Малтанхи çулне (1847 çурла уйăхĕнче) уçăлнă чаплă Г.Р.Державин поэт палăкĕ патĕнче вара тăвансем чылайччен калаçса тăнă. Палăкран уйрăлнă чух Микола макăрса янă: **«Сывă пол, перĕн Хосанти аслă çын! Эп сана ĕнтĕ коримăп»,** – унăн кĕçех салтака тухса каймалла пулнă. Çакна кайран Спиридон Михайлович хăйĕн 1853 ç.



Хăйсен пахчинче Яндушкин Иван Степанович килйышĕ, 10.10.1971. Малта арăмĕ Яндушкина Анна Архиповна (1894-1977, Нискассинчен килнĕ) ларать, тăраççĕ: мăнукĕ Васильев Олег Илларионович (1949 ç.ç., халь кил тĕпкĕчĕ), ывăлĕ Яндушкин Иван Иванович (1925-1981, арăмĕ Яндушкина Лидия Семеновна, малтан Самулина, 1925 ç.ç., Карамалькасси-Кĕнертен), хĕрĕ Васильева (Яндушкина) Александра Ивановна (1922-2003), кĕрӳшĕ Васильев Илларион Васильевич (1920-1994, Шаптак-Торайран пулнă), мăнукĕ Васильев Владимир Илларионович (1956 ç.ç.), мăнукĕ Васильев Игорь Илларионович (1950 ç.ç.). Арăмĕпе хĕрĕ хушшинче тепĕр мăнукĕ Яндушкина Светлана Ивановна тăрать (1962 ç.ç., халь Чолхолари оперăпа балет театрĕн артистки). Ершов В. сăнӳкерчĕкĕ.

Хусанта тата тепре 1854 ç. Питĕрте пичетленнĕ «Казанские инородцы перед памятником Державину в Казани» очеркĕнче çырса кăтартнă[117].

Миколана салтака 1848 ç. илнĕ. Вăл унта гвардире службăра тăнă. Ревель (халь Таллинн) хулинчи гренадерсен полкĕнчи рядовой пулнă. Спиридон вилнĕ тĕле те вăл çартах пулнă[118]. Миколаран ачасем пуррине ял-йышра асăнмаççĕ. Вăл салтакран килеймен те пулмалла.

Янтуш Михалин кĕçĕн ывăлĕ Илья вăхăтра йĕркеллĕ авланнă. Унăн **Çтаппанпа** (ывăлĕ **Ехрем,** мăнукĕ **Полувий)** **Онтри** (ывăлĕсем: **Михаил, Федор**, **Иван** тата **Евлампий)** ывăлĕсенчен кайнă тăхăмĕсем пурăнаççĕ.

**Янтуш Михалин хĕрĕсем.**

Спиридон Михайловичăн Татăкпа Плаки йăмăкĕсем 1883 пуранна-ха. Татăк Виловат вулăсĕнчи Шерекке çармăс ялĕнче упăшкипе пурăннă, Плаки вара Тутаркас вулăсĕнчи Эчкерен ялне (халĕ Москакасси, Ситуккасси) качча тухнă пулнă. Малтанхи амăшĕнчен çуралнă Праски ку вăхăтра вилнĕ пулнă, Пошкăрт вулăсĕнчи Тепте ялне качча кайнă Марок пурăннă-ха[119].

Праскипе Марока Спиридон Михайлович хăйĕн ачалăхĕ пирки аса илет. Вĕсен çемье тусĕ **Михеев** купса ик-виç çулхи Спирккана утьăкка туса вылянă чухне ăнсăртран ӳкерсе амантнă пулнă. Спиркка ун хыççăн виçĕ уйăх вырăнпа выртнă. Çав виçĕ уйăх хушшипех ăна Праскипе Марок аккăшĕсем мăйăр тĕшшипе кăна усранă-мĕн[120].

Татăк туйĕнче (1852 çулччен пулнă) Спиркка та пулнă. Вăл йăмăкĕ качча кайнине «Чувашские свадьбы» очеркĕнче тĕплĕн çырса кăтартнă; ун чухнехи туй йăли-йĕркисене, туй халăх тумĕ-эрешĕсене, вĕсен калаçăвне унта интереслĕ палăртнă. С.Яндуш Татăка вăл тăван килтен тухса кайнă чух хӳх укçи пухнине витĕмлĕ кăтартать. Качча каякан йăмăкĕ туйри кашни çын патне пырса вĕсемпе юлашки хут ирĕклĕ пулнипе хумханса тата хытăрах макăрма пуçлать, вăл пырса тăнă тăванĕ вара унăн сăра куркине укçа хунă. Спиркка пиччĕшĕ патне пырсан Татăк ăна ыталаса илсех хӳхлеме (ӳлеме) пуçланă; «Ах, эсĕ манăн тăван пиччем: ирĕк парсам мана сан çине пăртак вĕри куççуль тăкма; эсĕ мана каçаратăн, эсĕ çилленместĕн, пирĕн ырă олпут, каçар халь мана, ан ман чĕререн тухакан куççуле». Хыççăн, епле çырать автор: «При этих умильных слов я не мог удержаться, чтобы не заплакать, может быть, это произошло от того, что рыдающая была моя сестра Татьяна...»[121]

**Спирккан ытти тăванĕсем.**

Спиридон Янтуш хăйĕн статйисемпе тĕрлĕ ăсчахсем патне янă çырăвĕсенче хăйĕн ытти тăванĕсем çинчен çырни те чылай тĕл пулать. Вĕсенчен чи авалраххи **Сител** (авторăн: **Сыделя**) ятлă çын. Янтушпа Тевелпе пĕр вăхăтра пурăннă Сител вĕсен пултăрĕ е хуньчки пулмалла.

Чемей прихутĕнче шутланнă Мамакасси (Яргейкино, халь Ярославккă) ялĕнчи Сител ял халăхне самаях тĕлĕнтернĕ хăй вăхăтĕнче. Ăна темиçе ăру асăнса пурăннă. Пултаруллă су-

нарçă пулнă май, Сител вăрмантан тискер кайăк нумай тытса таврăннă. Кайран вĕсенчен чылайăшне килте пусмасăрах усранă, хăш-пĕрисене алла та хăнăхтарнă. Хăй аллине вĕрентнĕ кашкăрсемпе тата тилĕсемпе Сител таврара нумай мыскара туса çӳренĕ. Вĕсемпе вăл Шупашкар пасарĕнче те халăха самаях тĕлĕнтернĕ[122].

Тăвата çулта чухне Спиридон, **Охваняç** пиччĕш салтакаран курма килсен, кăмака çинчен васкаса аннипе ăнăççăр ӳксе йывăр сусăрланать. Унăн çавăн хыççăн суллахай куç çывăхĕнче ĕмĕрлĕх çĕвĕ юлать[123]. Çак Охваняç (Афанасий) ашшĕ шăллĕ пулмалла. Унтан йăх-несĕл кайман теççĕ халĕ ялта.

Хăйĕн пĕр алçырăвĕнче С.М.Яндуш хăй пĕчĕк чухне (1825 ç. тĕлнелле) ялта пĕр 25 çулхи тăванĕпе пĕрле ларни çинчен çырать: **«... один раз летом проезжала через наш околодок команда солдат для приискa корабельных лесов, я с двоюродною сестрою Матреной... сидел во дворе».** Вĕсене курсанах пĕчĕк Спирккапа Матрена авăн картине тарса пытаннă. Хăйсем мĕнрен хăранине пĕлмесĕрех вĕсем унтан салтаксем иртсе каймасăр тухман[124]. Çак Матрена Спиркка ашшĕн аккăшĕн е амăшĕн тăванĕн хĕрĕ пулнă пулмалла. Спиридон Михайловичăн малтан «Чувашские разговоры и сказки» кĕнекинче çапăннă «Ятлаçу» ятлă диалогĕнчи Матрена сăнарĕ интереслĕ. Калава Матĕрне аккăшĕ патĕнче, хăнара курнине çырнине шута илсен, вăл 1852 çул тĕлне упăшкипе, авланман ывăлĕсемпе тата Ольок ятлă хĕрĕпе Юнкă тăрăхĕнчи ялта пурăннă.

Спиридон Михайлович хăй çинчен çырнă статйисенче 1835 ç. Етĕрне уесĕн Мăн Шетмĕ ялĕнчи (халь Тăрак районне кĕрет) тăванĕсем патне çыру çырнă пирки те асăнать: «...Чтоб они не тужили обо мне и что я когда буду светилом, буду попирать кереметь чувашскую и возрадую их». Ку çыру кайран ашшĕ килĕнче нумай упраннă[125].

**Чул çурт умĕнчи сăнӳкерчĕк.**

Пирĕн умра 1917 çулхи çулла Юнкăпуçĕнчи паллă чул çурт умĕнче тунă сăнӳкерчĕк. Ку пӳртре ун чух Янтушсен пĕр тăхăмĕ пурăннă, В.С.Яндушкин килĕ пулнă вăл. Василий Семенович XVIII ĕмĕрте пурăннă. Янтушăн виçĕ ывăлĕнчен пĕри, Васли, урлă кайнă хунавĕнчен – çак Васлин Куçма ятлă мăнукĕн (1799 ç.ç.) мăнукĕ. Вăл сухалпа, варринче ларать. Сă-



В.С. Яндушкин килйышĕ. 1917 ç.

нӳкерчĕк çинче сулахайран сылтăмалла: Василий Семеновичăн ывăлĕ Николай (25.04. 1901-19.12.1979, унăн Клим ятлă ывăлĕ, 1934 ç.ç., халĕ Севастопольте пурăнать, ун çумĕнче ывăлĕ Иван Васильевич (15.02.1894-20.05.1968); Иван умĕнче хĕрĕ Вера Васильевна (1906-1925); Иван çумĕнче ывăлĕ Степан Васильевич (педагогикăпа ялхуçалăх институтĕнче 32 çул ĕçленĕ); Степан умĕнче кил хуçи арăмĕ Евдокия Николаевна; амăшĕ хыçĕнче тепĕр ывăлĕ Макар Васильевич (1903 – ноябрь 1937, чирлесе вилес умĕн хăй ирĕкĕпех кил-çуртне шкула парнелет, Никита Сверчков художник Спиридон Янтуш портретне тунă чух лăпах унăн сăнне тĕпе хурать); Макар çумĕнче инкĕшĕ Марфа Васильевна (9.06. 1893-1.11.1971, аслă ывăлĕн Михаилăн арăмĕ), вăл хăйĕн Иосиф ывăлне (3.11.1914-11.07.1992) тытса тăрать. Чи сылтăмри – ывăлĕ Михаил Васильевич (25.10.1888-18.08.1921, чăн сăнӳкерчĕке вăл фронтра пулнă пирки лекмен, ăна кайран Иосифĕ монтаж туса кĕртсе лартнă).

Сăнӳкерчĕк çинче Василий Семеновичăн Пелагея хĕрĕ çук, вăл унччен Шупуçне качча кайнă пулнă. Ывăлĕ Семен Васильевич (1899-1967), ун чухне вăл фронтра пулнă, хăй вăхăтĕнче Канашри механизаци шкулне ертсе пынă, хыççăн – совпартшкула, юлашкинчен – ЧР краеведени музейне), сăн ӳкерĕней-



Яндушкин Нил Иванович (1929 ç.ç., Ангарскра пурăнать) Яндушкин Виталий Иванович (1932-2002) шăллĕн ачисемпе. Красноярск крайĕ. 1960 çç.

мен. Тепĕр хĕрĕ Наталья Васильевна пӳрт чӳречинчен кăшт çеç палăрать[125].

1917 çулта Михаил Васильевич Яндушкин Ярман (I тĕнче) вăрçинчен таврăннă. Унта тыткăнра пулнă пирки Юнкă таврашĕнче ĕç тупайман. Вара Ишекри шкулта нимĕç чĕлхи учителĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Вăл тыткăнра пулни ачисен шăпинче те мĕнле витĕм кӳрессине ун чухне никам та чухлайман-ха... 1914 çулта вĕсен çемйинче Иосиф çуралнă пулнă, 1920 çулта Серафима ятлă хĕрача çуралать. Серафима, çитĕнсе качча кайсан, тăвату ывăл, пĕр хĕр çуратса ӳстернĕ, вĕсем Павлов хушаматлă пулнă, аслă пĕлӳ илнĕ. 1921 çулта Михаил Васильевич вилсен арăмĕ Марфа Васильевна икĕ ачине те илсе йышлă çемьерен Орпаш ялĕнчи Степан Яковлевич Ятрушев сутуçа качча тухать. Ятрушев ачасене вĕрентме тăрăшнă[127].

**Ефрем Яндушкин килйышĕ 1996 çулта.**

Юнкăпоçĕнче, сырма умĕнче çӳлерех вырăнта ларать. Унта Янтуш йăхĕнчи ĕçпе вăрçă ветеранĕ П.Е.Яндушкин пурăнать. (Çак вырăнта пулас ученăй С.М.Михайлов-Яндуш 10 çула

яхăн пурăннă). Вĕсен ăру никĕсĕ çакăн пек. Анна Матвеевнăпа (1898-1974) Ефрем Степановичăн (1896-1983) икĕ ывăлпа икĕ хĕр çуралнă. Вĕсен çемйи питĕ ĕçчен пулнă. Уйрăмах Анна Матвеевнăпа мăшăрĕ хуçалăха тирпейлĕ тытса тăнă. Сăрламан урай та хăйăрпа çунăран çуталса йăлкăшнă. Анна Матвеевнăна пĕчĕк ачасемпе ватăсене пăхса пурăнма питĕ йывăр пулнă. Мăшăрĕ граждан вăрçинче 3 çул хушши çапăçнă.

Вăрçăран таврăннă хыççăн вăл хăйĕн хуçалăхĕнче тимленĕ, пур ĕç патне те унăн алли çыпăçнă. Токарь станокĕпе ĕçленĕ чух ăна Çеменпе Анисия пулăшнă. Анчах Çемен ир, ачаллах, вилнĕ. Халĕ вара амăшне пĕтĕм ĕçре Анисин пулăшма тивнĕ. Юнкă шкулĕнче 7 класс пĕтернĕ хыççăн вăл Орпашри каçхи шкулта вĕренме тытăннă. Хыççăн чăвашсен учитель институчĕн вырăс чĕлхи уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Халăх Тăван çĕршыва хӳтĕлесе хăварассишĕн çапăçнă чухне института Сĕнтĕрвăррине куçарнă. Анисия окопсем чавнă, ытти хӳтлĕхсем тунă çĕрте ĕçленĕ. Вăрçă çулĕсенче институт пĕтернĕ хыççăн малтан Елчĕк районĕнчи Патреккелте, кайран Мăн Елчĕкре учительте вăй хунă. Çав вăхăтра тăвансенчен аякра ĕçлесе пурăнма çăмăл пулман, отпуск вăхăтĕнче колхозра ĕçлеттернĕ. Уншăн колхоз çăнăх, пахчаçимĕç пĕртак панă. Кайран ăна ашшĕ-амăшĕсем патне çывăхарах Сĕнтĕр районне, Шомика куçарнă. Каярахпа лайăх ĕçленĕшĕн Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкула илсе пынă. Кунта икĕ уйăх ĕçленĕ хыççăн вăл Совет Çарĕн офицерĕпе С.Ф.Романовпа пĕрлешнĕ. Упăшки çара кайиччен Юнкăпуçĕнчи пуçламăш шкул ачисене те вĕрентнĕ пулнă. Вăрçă хыççăнах Украинăри Коломыя хулинче пурăннă. Хулан çуррине яхăн, уйрăмах еврейсем пурăннă пайне, çапса аркатнă пулнă. Республикăра выçлăх хуçаланнă, националистсем (бендеровецсем) лăпкăн пурăнма ирĕк паман.

Анисия Ефремовна хăйĕн специальноçĕпе питĕ ĕçлесшĕн пулнă пирки мăшăрĕ запаса тухнă. 1946 ç. Мăн Хураçкари 8 çул вĕренмелли шкулта учительте ĕçлеме пуçланă, унта тивĕçлĕ канăва тухиччене́х, 1979 çулччен тимленĕ, çитĕнекен ăрăва вĕрентсе ăс парассишĕн тăрăшнă. Вĕсем икĕ ывăл пăхса ӳстернĕ, кăçалхи октябрь уйăхĕнче хăйсем пĕрлешнĕренпе 50 çул çитнине паллă турĕç.

Янтушсен ывăлĕ Полувий Ефремович Яндушкин (1926 ç. çуралнă), ĕçпе вăрçă ветеранĕ, Юнкăра пурăнать. Юнкăри шкулта

7 çул вĕреннĕ хыççăн пĕр тапхăр колхозра ĕçленĕ. Вăрçă вăхă-тĕнче ашшĕ вырăнĕнче магазинта тимленĕ. Вăл таврăнсан, ăна Инçет Хĕвелтухăçне янă. Самурайсемпе хаяр çапăçусене хут-шăннăшăн наградăсене тивĕçнĕ. Хыççăн Магаданра службăра пулнă. Çартан 1951 ç. таврăннă хыççăн «Родник», «Новая Юнга» колхозсенче тĕрлĕ должноçсенче ĕçленĕ. Нумай çулсем хушши сĕт-çу фермине ертсе пынă. Вăл та мăшăрĕпе, Мари-нăпа (1929 ç.ç.) икĕ ывăл пăхса ÿстернĕ. Пĕр ывăлĕ, Вячеслав (1959 ç.ç.) арăмĕпе Лидăпа, икĕ хĕрĕпе Шупашкарта пурă-нать. Тепри, Александр (1962 ç.ç.) Мускавра водительте ĕçлет. Арăмĕпе Надеждăпа Руслан ятлă ывăлне ÿстерессĕ.

Полувий Ефремович Спиридон Михайловича халалласа пĕчĕк парк ÿстерет, унта тĕрлĕ йывăçсем ÿсеççĕ, варринче – çавра сĕтелпе тенкелсем.

Кĕçĕн хĕрĕ Валерия Григорий Назарович Хошкина качча тухнă, пилĕк хĕрпе пĕр ывăл ÿстернĕ. Хĕрĕсем çунат сарса Раççей тăрăх саланнă. Ывăлĕ Вячеслав кăна амăшĕпе юлнă. Вăл хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство орга-низайĕнче ĕçлет. Тепĕр хĕрĕ, Светлана, Çармăскассинче суту-çăра ĕçленĕ, çав ялах качча тухнă, мăшăрĕпе хĕрпе ывăл ÿсте-реççĕ. Вĕсем Юнкăри вăтам шкулта вĕренеççĕ[128].



С.М Яндуша халалланă парк. 26.11.2006.

**Хăшпĕр Яндушкинсем пирки**

Яндушкин Василий Николаевич (1940 çç. в., 2 авланнă, пĕр арăмĕ Çармăскассинчен – Васса) ачисем: 1) Марфа (Ситуккассине к.к., ывăлĕ – Михали), 2) Иван (арăмĕ Ситуккассинчен пулнă, хĕрĕ Нина Нискассине к.к., хăй Отеч. в.в.), 3) Таттян (Кăпас Канашри Аргандеевсене к.к.), 4) Якор (1921-1983, арăмĕ Ситуккассинчен – Елена Терентьевна, ывăлĕ Юрий; малтанхи арăмĕнчен, Наталия Яндушкина, ывăлĕ Владимир, 1947 ç.ç., унăн ачисем Игорь тата Алексей)[129].

Яндушкин Степан Матвеевич ачисем: Иван (ывăлĕ те Иван, мăнукĕсем: Валерий, Леонид, Николай, Светлана), Пелагея (тĕп киле юлнă, ывăлĕ Владимир), Зоя, Тамара. Унăн шăллĕн Алексейăн ачисем: Иван (ачисем: Евгений, Галина), Хреçти, Александр, Зина, Отатти[130].




Яндушкинсем (Яндуш кокри, 6 кил.) çимĕке пухăнсан. Ларaççĕ: 1) Миша (Юрий ывăлĕ, 1988 ç.ç.), 2) кинĕ Маргарита (Владимир Егорович арăмĕ, Волгоградран), 3) хĕрĕ Сапожникова Людмила Егоровна, 4) кĕрӗвĕ Кавказов Александр Иосифович (Елена упăшки, Чоккасси-Юнкăран) 5) Зоя ачипе (Берсенева Люба); тăраççĕ: 6) Берсенева Таня (Зоя хĕр пултăрĕ, Красноярскран), 7) Владимир Егорович (1949 ç.ç.), 8) Денис (Юрий ывăлĕ, 1987 ç.ç.), ун хыçĕнче 9) хĕрĕ Людмила Егоровна (1953 ç.ç.) упăшкипе 10) Сапожников Владимир Михайлович (Йолшик-Чемейрен), 11) амăшĕ Яндушкина Елена Терентьевна, 12) Хĕрĕ Берсенева Зоя Егоровна (1961 ç.ç.), 13) ун ывăлĕ Берсенев Сережа (Николаевич, 1986 ç.ç.), 14) хĕрĕ Кавказова Елена Егоровна (1959 ç.ç.), 15) Юрий Егорович (1965 ç.ç., тĕпкĕч), 16) ун мăшăрĕ Елена Григорьевна (1962 ç.ç., Кĕçĕн Кăпасран, малтан Иванова), 17) Кавказова Настя (Владимировна). 2.06.1996.

# ЮНКĂПОÇ ÇЫННИСЕМ

**Яндушкин Андрей Семенович.**

Чикме уес исправникĕ А.Билетов Хусан губернаторне М. Стрижевские уесра РСДРП Хусан комитечĕ çумĕнчи округ ушкăнĕ листовкăсем салатни çинчен 21.06.1906 пĕлтернинчен: «2-мĕш станри 2-мĕш участокри полици урядникĕ Долгов 2-мĕш стан приставне правительствăна хирĕçле прокламацисен 3 экземплярне панă тата çапла пĕлтернĕ: ку прокламацисене июнĕн 10-мĕшĕнче Тутаркасси вулăсĕнчи Андрей Семенов Яндушкин хресченрен туртса илнĕ. Прокламацисем пичетленĕскерсем, «Халăх тата дума», «Пуриншĕн те усăллă хыпарсем», «Пăлхавçăсем мĕн тăвасшăн» заглависемпе. Вĕсем пурте РСДРП-ăн округри ушкăнĕн кăларăмĕсем. Яндушкин хресчен ăнлантарнă тăрăх, ку прокламацисене ăна Чикме хулинче палламан пĕр çын панă, ăна вăл унччен курман...»[131]

**Сюльдеркин Платон Григорьевич.**

Сюльдеркин Платон Григорьевич (Крышка Платонĕ 23.11.1884—13.03.1918, çĕнĕ стильпе) вилĕмĕ Раççейĕн 20 ĕмĕрти синкерĕпе тачă çыхăннă. 1905—1910 çç. çарта пулнă, 1914 ç. вăл тĕнче вăрçине кайнă, Австри салтакĕсемпе çапăçнă, фронтра революцилле шухăшсен витĕмне лекнĕ. 1917 çулхи августра кавалерист пулса Орша станцийĕ патĕнче Корнилов пăлхавне путарнă çĕре хутшăннă. Хыççăн Хĕрлĕ гвардие лекнĕ.

Большевиксен 1917 ç. октябрьти влаç переворотне ял халăхĕ пачах ăнланман, чунпа йышăнман. Çĕнĕ влаç хĕçпашаллă вăйпа кăна тытăнса тăнă. Советсем валли ялхуçалăх продукчĕсем тупма малтан Хĕрлĕ гварди отрячĕсем, 1919—1921 çç. продотрядсем çӳренĕ. Çавна май унта пулнă салтаксем хресченсен пĕрремĕш тăшманĕсем пулса тăнă. Платона яла таврăнсан, вулăс кантурне илеççĕ. Кунта вăл промышленность валли тĕрлĕ чĕртавар, хула валли апат-çимĕç, кĕпе-тумтир пуçтарса парас ĕçе пуçăнать. Тĕппипех нишлесе çитнĕ халăхран ирĕклĕн мĕн те пулин илме çăмăлах пулман. Çарта пулнă вăйпитти Платонăн çапах хĕрӳлĕхĕ пысăк пулнă.

1918 ç. февралĕн юлашки кунĕнче (çĕнĕ стильпе мартăн 13-мĕшĕ) тăвăнса çитнĕ Кăпас ялйышĕ пăлхава çĕкленнĕ. Ирпе ирех кунти Риван Еххимĕ юланутпа урамсем тăрăх çӳресе халăха Юнкă чиркĕвĕн хурал пӳртне пухăнма йыхравланă. Пухăва

ытти ялсенчен те пуçтараннă, пĕтĕм урам халăхпа тулнă. Çĕнĕ влаçа чунтан питленĕ, кĕçех пуху ялти активистсене таварас шухăш патне çитет, Крышка Платонĕн ячĕ те унта тухнă. Тата вăл 1910 ç. Юнкă тăрăхĕнчи çĕре валеçнĕ çĕре хутшăннă пулнă. Ăна ун чух, салтакран тин тавраннă çамрăка, Юнкăпоç ялйышĕ хăйсенчен çĕр валеçекен комиссине суйланă. Çавăн чух вара Кăпас ялĕсене (обществине) пахалăхĕ тата сортлăхĕ лайăх пирки çĕр лаптăкĕ ыттисемпе танлаштарсан палăрмаллах сахал тивнĕ-мĕн. Ăнсăртран тенĕ пек тата çак синкерлĕ кун ним шутламан Платон Григорьевич Мăн Чувака куккăшĕ патне кайнă пулнă, çакна куракансем те пулнă.

Пухура Юнкăпоçри Микола Ваçли те пулнă. Вăл Платона вĕлерме хатĕрленнине пĕлсенех, кунтан хăвăртрах тухса шунă. Çынсем сисиччен Мăн Чувакри Иваковсем патне çитсе ӳкнĕ. Пӳртӳмĕн хăма шăтăкĕнчен мĕн пулассине пăхса ларнă. Кĕçех пĕр шавлă ушкăн Шӳртĕк Михти килĕ умне çитсе чарăннă. Хăйсем аллисенче çатан карта юпи тытнă. Çакна пӳртре ларакан Платонпа Павăл Çтаппанĕ текен япăх илтекен çын курнă. Ырра мара сиссе Платон пӳрт маччи çине хăпарса кайнă. Çтаппан вара сарайри улăм ăшне кĕрсе пытаннă. Пăлхавçăсем кил-çурт таврашне ухтарма пуçланă. Часах сарайĕнчен çăпата сырнă, пуçне çавра çĕлĕк тăхăннă, тĕсĕ кайнă пиншаклă Çтаппана туртса кăларнă. Юпасемпе çапкаланă хыççăн, сарайне пăрахнă. Платон вара маччана пĕр çынна та хăпартман, пĕр-мĕн хăпаракана урапа тапса ӳкернĕ. Пăлхавçăсем ăна халăх умне тухма ыйтнă. Çакна пурнăçламасан çурта вут хыптарассипе хăратнă.

Платон тăванĕсене шеллесе маччаран аннă. 34 çулхи кĕрнеклĕ те çирĕп шăмшаклă çын ял халăхĕ умне тухса тăнă. Пурте ун çине шăтарасла пăхнă. Платон парăнма шутламан.

— Юлташсем! — кĕçех илтĕнсе кайнă унăн уçă сасси. — Эсир паян пухура мĕн калаçнине эпĕ пĕлместĕп. Çавăнпа эсир хăвăр мана ыйтусем парăр. Вĕсем çине ним суймасăр ответлĕп.

— Эпĕ ыйтап-ха эппин, — текелесе малалла пĕр утăм тунă Кирла Похвири. — Кала-ха, мĕншĕн халĕ те вăрçă чарăнмасть?

— Вăрçа хăвăртрах чарас тесен, Хĕрлĕ Çар валли пирĕн апат-çимĕç ытларах памалла. Революци çĕнтерĕвĕсене сыхласа хăвармалла. Чиркӳ халăх юнне ĕмсе пурăнать, ăна хамăрăн вăйпа пуйма памалла мар.

Кун пек калани ял куштанĕсене килĕшмен. Вĕсем çынсене хĕтĕртме пуçланă: «Пуçне çапса çурăр, хĕрлĕ армейцă кунта тĕп пултăр!»

Платон шăмшакне хытарнă, шăлĕсене çыртса лартнă та, пуçне пĕшкĕртсе, çынсен ункинчен хăтăлма пĕр утăм çеç тунă, унăн пуçĕ çине йывăр япала пырса ӳкнĕ. Платон ура çинчех тытăнса тăма хăтланнă, çапах çавапа касса янă пек юр çине аллисене сарса ӳкнĕ. Алла мĕн лекнĕ çавăнпа хĕненĕ ăна. Çĕлĕкĕ ӳкнĕ хыççăн çаралса юлнă пуçне темиçе çĕртен лектернĕ, ӳтне татса янă. Юлашкинчен вилнĕ пек выртакана Швед Прокопи текен çын тимĕр япалапа çапнă. Хальхинче Платон пуçĕнчен пĕрĕхтерсе тухакан юн таптаннă юра пĕветнĕ. Вăл урăх сас та кăларман.

Çакăн хыççăн пăлхавçăсем килĕсене саланаççĕ. Хăма çурăкĕсенчен пурне те пăхса тăнă Микола Васли Юнкăпоçа чупать, арăмĕпе Ленок йăмăкне хăрушă хыпар пĕлтерет...

Кăштахран хăвăртрах лаша кӳлсе Лепок Платона кайса илсе килнĕ. Унăн аллин шăммисем хуçăлса пĕтнĕ. Чунĕ тухман-ха, çăварĕнчен юнлă кăпăк тухнă. Ял халăхĕ çывăрнă. Платон пуçелĕкĕ умĕнче çĕрĕпех арăмĕ ларнă. Ир енне вăл вилнĕ.

Чиркӳ çыннисем Платон ӳтне картишне те кĕрттермен, çăва çине пытарма та чарнă. Арăмĕ пысăк хуйха лекнĕскер, виçĕ кун апат çимен. Алă-ури те хытнă пек пулнă, чĕлхи те çыхланнă. Платун ӳчĕ темиçе кун тупăкра выртнă, виле шăрши таврана сарăлнă. Çакăн çинчен ялйыш Чикмене хыпарланă. Унтан милици пуçлăхĕ çитет. Вăл çине тăнипе вилене 11 кунтан тин Юнкă çăви çине пытараççĕ.

Çак преступленипе кăсăкланма влаçсен ун чухне вăхăт пулман. Коллективизаци пуçлансан кăна ун патне çитнĕ. Çапах та ялйышра тĕрĕссине калакан пулман. Ун чух çак ĕçпе Микуш Миколине те чĕннĕ пулнă. Вăл Юнкăна кайма тухнă. Ăна тĕл пулнă Корак Петтĕрĕ: «Ах, ан каях, тем курасси пулĕ», — тет. Ăна итлесе Микуш Миколи вара каялла çаврăнать... Вăл вăхăтра тата пăлхавра ларнă хăшпĕр ял куштанĕсем, хăйсем халь активра пулнă. ОГПУ ĕçченĕсем ним вĕçне-хĕрне тухмасăрах Юнкă тăрăхĕнчен кайнă.

Платон ашшĕ Григорий Егорович, амăшĕ Наталья Ивановна; арăмĕ Плаки, пĕчĕкрех хĕрарăм, Юнкăпоçрах çуралса ӳснĕ. Вăл 1913 ç. ноябрĕн 13-мĕшĕнче ывăл ача çуратнă. Ăна Михала ятлă хунă. Кайран Анатолий ятлă ывăл çуралнă, вăл Саратов облаçĕнче пурăннă, ача-пăчаллă. Михаил Платонович вара 1942 ç. Тинĕс-Çар флотĕнче пĕр çапăçура вилнĕ.

Сюльдеркинсен килĕнче Петĕр шăллĕ юлнă, хыççăн — унăн 1929 ç.ç. ывăлĕ Виталий Петрович.

Платон вилнĕ хыççăн Плаки Явăльня ялне качча тухнă. Михала унпа пĕрле кайман. Плакин çĕнĕ упăшки вилнĕ хыççăн тепре качча тухнă, пĕр хĕрача çуратнă. Плаки 96 çула çитсен вилнĕ[132].

Явăльняри çĕнĕ пурнăç активисчĕ, 1951—1955 çç. Чăваш АССР Аслă Канашĕн депутачĕ пулнă Н.Я. Яковлев (1893 ç.ç.) çакăн пиркиех 1959 ç. аса илнинчен: «1918 ç. февральте... кулаксем пуçарнипе чиркÿ патне Юнкă халăхне пухăва пухса, ялта кам хĕрлĕ гвардире пулса, кам коммунистсем майлă калаçать тата кам çĕре едакпа валеçес пирки калаçать, чиркÿ кирлĕ мар тет, список туса вĕлерме йышăнаççĕ. Çав списока эпĕ те лекнĕччĕ. Вара çав пуху халăхĕ чи малтан Большой Чуваки ялĕпе кайса Кулаков Н.М., Хошкин М.Г., Селюшкин П.И. тата унăн икĕ шăллĕне, Кораковсене тата Ларготы ялĕнчи Орловсене тустарма тытăнчĕç. Ачисем килĕсенчен тухса тарнă пирки ашшĕсене хĕнесе пĕтерчĕç. Хăшпĕринне лашине, ĕнине тата тÿшек-минтерне илсе тухса, çавăнтах торги туса сутса, укçине пухури халăха валеçсе пачĕç. Кам укçа илмест, çавăнтах тытса вататчĕç. Икĕ ялта çÿресе каç пулнипе вăл кун пирĕн яла çитеймерĕç. Тата вĕсем çав кунах Б.Чуваки ялĕпе иртсе пыракан Юнкăпоç çыннине хĕрлĕ гварди салтакне Сюльдеркин Платона тытса çапса пăрахрĕç. Ăна вара виллине те çăва картин тулашне пытарттарчĕç. Вăл коммунист тесе хĕресне те тепĕр майлă тунăччĕ. Вăл хăй коммунист пулман, хĕрлĕ гвардире пулнă, тата киле килсен тырăпа сутă тăвакансене чарнă...»[133].

**Яндушкин Алексей Тимофеевич.**

«Юнкăпуç ялĕнчи А.Т.Яндушкин (1891—1937) вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Унтах ÿснĕ. Ача чухне Юнкă шыв пуçламăшĕнчи улăх-çаран, уй-хир тăрăх чупса çÿренĕ, сывлăхлă çитĕннĕ. Вĕсем çемьере пилĕк ача ÿснĕ: икĕ хĕр, виçĕ ывăл. Елексей кĕçĕннинчен иккĕмĕш, кĕрнеклĕ те çирĕп шăмшаклă пулнă. Хресчен çемйинче арçын ачасене ĕç куршанакĕ часах çыпăçнă. Пĕлÿ илсе ăс пухасси çинчен шухăшламан. Ашшĕ вилсен, амăшĕ те çакăншăн тăрăшман. Ывăлĕн тăмлă сăрт çинче кунĕпе хура тарпа касăхса сухапуç тытса пырса аллисем хытнă. Каçхине, киле таврăнсан, тарлă пит-куçне çума алă та çĕкленеймен. Çапла, ачалăхра аслисемпе пĕрле ырми-канми вăй хурса ĕçленĕ, аслисенчен ĕçе вĕреннĕ, çав вара хресчен ачишĕн ырлăх пулнă. Елексей ашшĕ те, амăшĕ те хут пĕлмен çынсем пулнă. Ывăлĕ те



Алексей Тимофеевич Яндушкин

чиркӳ шкулӗнче пӗр ҫул ҫурӑ кӑна вӗренме ӗлкӗрнӗ...

Вӑхӑт иртнӗ. Алексей Тимофеевичӑн та алла хӗҫпӑшал тытма вӑхӑт ҫитнӗ. 1912 ҫулта 21 ҫулхи каччӑна патша ҫарне илнӗ. Ҫав ҫулах Екатеринбург полкне лекнӗ. Кайран пулеметчиксен командине куҫарнӑ. 1913 ҫулта пулемет расчечӗн командирӗ пулса тӑнӑ. Ҫав ҫул патша приказӗпе А.Т.Яндушкин ытти салтаксемпе пӗрле Польша ҫӗрӗ ҫине ҫитнӗ. Ҫулла, 1914 ҫулта, Германипе Австри, пӗрле ӑмӑртса, Раҫҫей ҫине вӑрҫӑпа куҫма пуҫланӑ. Пӗрремӗш ҫапӑҫусем Польша ҫӗрӗ ҫинче пынӑ. Алексей та пӗрремӗш кунах тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫӑва кӗнӗ. Германи тупписем вырӑс салтакӗсем ҫине снарядсем вӗҫтернӗ, куллен пиншер салтак вутра вилнӗ. Ҫапах пӗрремӗш уйӑхра тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене 200 пине яхӑн пӗтернӗ.

Австрипе Германи ҫарӗсем Ломхи хулине хӑйсен аллине илесшӗн пулса, мӗнле кӑна тапӑнман хула ҫине. Пӗр кунта миҫе хут атакӑна ҫӗкленнӗ, анчах чӑваш каччи, ӑста пулеметчик, тӑшман атакисене тӑхлан ҫумӑрпа кӗтсе илнӗ. Вуншар салтакпа офицера «месерле яла» ӑсатнӑ. Тӑшман текех ҫапӑҫу мӑшкӑлне тӳсме пултарайман, урса кайнӑ, вырӑс салтакӗсен окопӗсем ҫине тупӑсенчен темиҫе хутчен татти-сыпписӗр снарядсем кӑлара-кӑлара янӑ. Пӗтӗм таврана тӗтӗм-сӗрӗм, ҫунӑк-ӗнӗк, тӑпра шӑрши хупланӑ. Тӑшманӑн пӗр снарячӗ Алексей Тимофеевич пулемечӗ ҫывӑхӗнче сасартӑк кӗрӗслетсе ҫурӑлнӑ, пулемет сывлӑша ҫӗкленнӗ. Пулеметчик та, тӑпрапа хутӑш сывлӑм хумӗпе ҫӗкленсе ҫӗр ҫине ӳкнӗ, тӑнне ҫухатнӑ...

Сусӑрланнӑ Алексей, тӗрлӗ госпитальсенче сывалнӑ хыҫҫӑн, текех строя тӑрайман. Ҫурма суккӑр пулса юлнӑ. Сулахай куҫ яланлӑхах тӗттӗмлӗхе юлнӑ. Раҫҫейӑн юлашки императорӗ иккӗмӗш Микула патша ячӗпе А.Т.Яндушкина командовани приказне чыслӑ пурнӑҫланӑшӑн, ҫапӑҫура хӑюллӑ та паттӑр пулнӑшӑн асӑнмалӑх «300-летие царствования Дома Романовых»

медальпе чысланă. Çапла вара, 1915 çулхи мартăн 23-мĕшĕ унăн юлашки çапăçу кунĕ пулнă. Çапла вĕçленнĕ вăрçă-харçă инкекĕ.

1916 çулта инвалид пулса тăван ялне таврăнать. Тăван килĕнче çити-çитми пурнăçа пула пĕр вăхăт çар тумĕпех çӳреме тивнĕ. Салтак тумĕ, галифеллĕ шăлаварĕ арçынна кăтартнă. Костюм илме укçа çук пулсан та, айланкаланса пурăнакан пиччĕш пурçук укçине пĕтересшĕн пулман. Вăл ялти юхăннă кил вырăнне илнĕ, шăллĕ вăрман каснă, пӳртлĕх йывăç хатĕрленĕ, çурт тума пулăшнă.

Хăрăк туратăн илемĕ çук, тенĕ пек Алексей пĕр çул тар тăкса тупнă укçапа авланма шутлать. Пĕр ялтанах Михалки Иванĕн Елен ятлă хĕрĕпе ăнсăртран тĕл пулса, мăшăр пулма ӳкĕтлет. 1917 çулхи кăрлач уйăхĕнче вĕсем пĕрлешнĕ. Пурăна киле çемьере савăнăç — йыш хушăнать. Элексей шăллĕ те Çимон, авланма шут тытать. Пĕчĕк çурт тăвăрланать, икĕ çемье хушшинче харкашу та тĕркешӳ пуçланать. Çимон та вăрçа пула чăлах пулса юлнă пиччĕшĕпе кăмăлне уççах калаçман. Алексей ялта пĕр пуш кĕтес тупса çурт лартать. Çимон уйрăлса тухакан пичччĕшне виçĕ пăт тырă виççе панă тата хăмăр тĕслĕ пĕчĕк кĕсре. Кĕсри шухă.

Алексей Тимофеевич çак пĕчĕк утпа Хусана кайма шут тытнă. Чăн та, вăрăм çула тухса Хусана çитнĕ. Çавăнтан пĕр тĕреклĕ плуг туянса таврăннă. Хуçалăхра ĕç хатĕрĕсем хушăнса пынă, вĕсене упрама, тыткалама пĕлнĕ, ут таврашĕсене унта-кунта çумăр айĕнче шӳтерсе вырттарман, лупас айĕнче йăрхах çинче çакăнса тăнă. Пурăна киле хуçалăхра каллех савăнăç çуралать, кĕсре хăмласан, ăна лайăх пăхса, ачашла-ачашла çитĕнтернĕ. «Вихрь» ят панă. Мĕн ĕлĕкрен хресчене мĕн кирлĕ пулнă. Лаша çав, лаша хресчене пурнăç панă, çĕр çемçетсе тухăçлă тырпул туса илесси пĕтĕмпех лашапа çыхăннă.

1928 çул. Хăшпĕр ялсенче çĕнĕ пурнăç таппи палăрма пуçланă. Спекулянтсене пĕтерме, вĕсене хирĕç кĕрешме тесе комитетсем туса хунă. Алексей Тимофеевич — комитет членĕ. Хăй вăрçăра окопсенче тертлĕ пурнăçа тӳссе курнăскер, малашне влаç халăх аллине куçасси пирки пĕр иккĕленмесĕр уççăн ял халăхне ăнлантарса панă. Хăшпĕр çемьери арçынсем çакна ăнланса илесшĕн пулман, нумай çемье иккĕленнĕ.

Колхозсем йĕркеленес умĕн, хыççăн та, çĕнĕ пурнăçран шикленсе ӳкнĕ çĕршер чăваш çемйи Урал тăрăхне, Çĕпĕре куçса кайнă. Пирĕн тăрăхри 30—40 çулхи вăтам арçынсем те колхоз-

сем тăвасран хăраса ӳкнĕ. Аякка кайса, çĕр пăхса килсен, пӳрт, кĕлет, сарай, лаша, ĕне сутса Çĕпĕре яланлăхах куçса кайнă. Вĕсенчен нумайăшĕн, унта кайса вырнаçса пурăнма вăй çитерейменнипе, каялла тăван ялне килмелле пулнă. Тĕлли-паллисĕр Çĕпĕре кайса çӳрени, тăкакланни харама кайнă. Тепĕр хут пурнăç тума йывăр пулнă...

Юнкăпуç ялĕнче «Родник» колхоз 1930 çулта йĕркеленнĕ. Колхозра ырă улшăнусем кунран кун пулса пынă. Ял халăхĕ, нумай çемьесем колхоза кĕме заявлени çырнă. Хăшпĕр арçынсем çĕнĕ хуçалăха кĕрес мар пирки ӳпкелешсе, турткаланса тăнă. Алексей Тимофеевич Яндушкин хăйне колхоза йышăнма пĕр турткаланса тăмасăр заявлени пĕрремĕш çырнă, хăйĕн хуçалăхĕнчен колхоза лаша, çуна, урапа, плуг, кĕлет тата ут тавраше — пĕтĕмпе 175 тенкĕлĕх пурлăх хывнă. Çав хывнă пурлăхран укçа шучĕпе хуçине 50 процентне тавăрса панă. Тихаран юратса ӳстернĕ çилçунат пек урхамаха вăйпитти арçынсем кăна кӳлсе çӳреме пултарнă. ...Вăтăрмĕш çулсенче колхозра лашасем шултра та вăйлă, шухă пулнă...

Хуçалăх сăн-сăпатне çĕнетме выльăх-чĕрлĕх витисем, çулйĕр тата кĕперсем тăвас çĕрте комитет членĕсем тата яшсемпе хĕрсем чи малти ретре пулнă. Вĕсем ырми канми вăй хунă. Ĕçкунĕ вара сахал ӳкнĕ çав. Сăртсем çинче пĕрчĕн-пĕрчĕн çурлапа тырă вырса пуçтарнă, тырă тухăçĕ центнертан 8—12 центнер туса илнĕ пулин те, ял пурнăçĕ çĕнĕ пурнăçшăн вĕресе кăна тăнă.

Колхоз йĕркеленнĕ хыççăнах пĕр вăхăт ял çыннисен выçлăха тӳсме тивнĕ. Çапах та кашни ĕçлекен çемьене тырă, арпа-улăм валеçсе панă. Колхозăн çĕр хĕсĕкрех пулнă. Çакна кура юнкăпуççем, вăрман тĕплесе, уйсене пысăклатнă. Сталин саманинче пур колхозсенче те пĕр шухăшлăн çĕршыв ырлăхĕшĕн мĕн вăй-халран тăрăшнă. Паянхи пек хул хушшинче хут-папка хĕстерсе çӳрекенсем курăнман, халăх пĕтĕм ĕçе ушкăнпа канашласа туса пынă.

Юнкăпуç çыннисем Алексей Яндушкина чăн-чăн хресчен ĕçĕнче тĕрĕслĕхшĕн çунса ĕçлекен кресском председательне суйланă. Крескомăн сарăхса кайнă кивĕ хучĕ. Унта çакăн пек çырнисем пур: «1932 çул, апрелĕн 20-мĕшĕ. Юнкăпуç С.К.К.О.В. пĕлтерет: 1. Фондлă тырă пуçтармалли 4 пăт юлнă. 2. Самолет тăвас ĕçе укçа пуçтарнă — 13 тенкĕ те 80 пус. 3. Крескомăн тырă сортламалли тата ала машини пур. Кашни килтех вăрлăх тасатаççĕ, пĕр пăт тырă тасатма 13 пус укçан парать. 4. Крест-

комăн паянхи куна 150 пăт тĕштырă пур. Алă пуснă: А. Яндушкин.

Алексей Тимофеевичăн халăх пурлăхне тĕрĕс-тĕкел упрас пирки чĕри тимĕрçĕ лаççин вучахĕ пек хĕмленсе тăнă. Çав хушăрах теприсен халăх пурлăхĕ çине пăхни, ăвăс вутти пек, çунасса çуннă, анчах «ăшăтайман», вăл хăйне тытма пĕлнĕ, пустуях вĕтеленмен. Ялти кукăрсене курса тăнă, тӳррĕн каланă. Çĕнĕ пурнăç çапла туптанса малалла аталаннă. Çав хушăрах Алексей пурнăçпа тан пырса, çурт-йĕр çирĕп çавăрнă...

Алексей Тимофеевич тăван колхоз тĕрекне малалла аталантарас ĕмĕтпе пухусене усăллă канашсем тăратнă, паян-ыран тумалли ĕçсем пирки çирĕп калаçнă. Вăл сĕннипех колхоз ĕне фермине ялтан кăларса, Волккăвăрман текен вырăна куçарас тенĕ. Çав çулах Волккăвăрман кĕтесĕнче витесем, сарайсем курăнма пуçланă. Ял ферми вăрмана куçнă. Хастар колхозника çĕнĕ ферма заведующийĕ туса хураççĕ. Чи малтанах çĕнĕ фермăра, çĕнĕ пурнăçа йĕркелесе яма, чылай вăй хума тивнĕ. Пĕчĕк коллективра чи кирлĕ задача — выльăх апачĕпе перекетлĕ, пĕр тăкакламасăр усă курма пĕлесси тата сĕт сăвассине ӳстересси. Сăвăма ӳстерес хăватпа ферма пуçлăхĕ ӳркенмесĕр хăй ĕне кĕтĕвне кĕтсе çӳренĕ.

Октябрь революцийĕ 20 çул çитнĕ май, колхоз тĕрекĕшĕн ырми-канми ĕçлесе тăрăшнине тивĕçлипе хакланă: А.Т. Яндушкина районти Хисеп хăми çине кĕртеççĕ.

Алексей Яндушкин çутçанталăк илемне те сыхлама тăрăшнă. Вăрманти пĕчĕк мулкач çурисене тытса фермăри пĕр пуш пӳлĕме вырнаçтарнă. Вĕсене куллен хăй кăна пӳлĕме кĕрсе курăк е ăшă сĕтпе хăналанă. Çапла пĕчĕк çурасене ытти вăрман кайăкĕсем пĕтересрен сыхласа хăварнă. Çурасем кĕр кунĕсем çитеспе палăрмаллах ӳснĕ, вăрманта, йывăç çулçисем чăштăртатса, тăкăннă вăхăтра кĕске хӳресене ирĕке кăларса янă. Вăрманти чĕрĕпсене те, тытса пырса, ферма таврашĕнче пурăнма хăнăхтарма тăрăшнă...» (1991)[134]

**Васильев Степан Васильевич.**

Васильев (Яндушкин) Степан Васильевич (28.12.1891—9.10.1964) çуралнă пӳрт вырăнĕнче 1905 çултанпа чул çурт ларать. Вăл ăслăлăх степеньне тивĕçнĕ Юнкă тăрăхĕнчи пĕрремĕш çын шутланать. 1919 ç. Хосанти учительсен институтне пĕтернĕ, 1929 ç. Москаври 2-ш университетăн педагогика факультечĕн ăслăлăхпа методикăн аслă курсĕнчен вĕренсе тухнă.

1911—1915 çç. пуçламăш шкулта вĕрентнĕ. 1919—1923 çç. Тутар республикинчи чăваш шкулĕсен, Чăваш облаçĕнчи вĕрентӳ тытăмĕн инспекторĕ тата пай пуçлăхĕ пулнă. Çав çулсенче пĕр вăхăт Сиктĕрмери шкулта та ĕçленĕ, Петĕр Хусанкая вĕрентнĕ. Ахальтен мар Степан Васильевича пытарнă чухне чаплă сăвăç хутшăннă, сăмах каланă. 1923—1932 çç. Шупашкарти сăнав шкулĕн вĕрентекенĕ, педагогика техникумĕн тата профсоюзсен юхăмĕн шкулĕн преподавателĕ пулса ĕçленĕ.

1932 çултан пуçласа Степан Васильевич пĕр таталмасăр Чăваш педагогика институтĕнче вăй хунă: малтан преподаватель, кайран хими кафедрин доценчĕ пулнă, ялхуçалăх институтĕнче те вĕрентнĕ. 1947 ç. С. Васильев педагогика наукисен кандидачĕн ученăй степеньне илме «Шкулта электрохими сăнавĕсене ирттермелли техникăпа методика» темăпа диссертаци хӳтĕленĕ. Ученăй вĕрентĕвĕн эффективлă методикине туса хатĕрлес ĕçе пысăк тӳпе хывнă, чăваш ачисене химипе, çутçанталăкпа тата техникăпа вĕренме вĕрентӳ пособийĕсем хатĕрлессипе те нумай тăрăшнă. Вăл çырнă «Электричество энергийĕпе усă курса хими опычĕсем ирттересси» ĕçе 1955 ç. Мускавра «Учпедгиз» издательствăра пичетлесе кăларнă. 1960 ç. «Çутĕç отличникĕ» паллăна тивĕçнĕ[135].

Степан Васильевич шкул ачисем валли хими, физика, биологи вĕрентĕкĕсене чи малтан чăвашла куçаракан пулнă, хăй те çырнă. Вăл çырнă кĕнекесем:

— Малтанхи шкулра вĕренмелли физика. Шупашкар, 1925. (139 с., 10000 экз.);

— Хими кĕнеки. Шупашкар, 1928 (164 с., 3000 экз., Чăваш ĕçлĕх шкулĕ);

— Йăвăçкурăк, ăна пăхса ӳстересси. Шупашкар, 1924 (176 с., 6000 экз., А.С. Абрамова тата Е.Р. Романовапа пĕрле çырнă); 2-мĕш кăларăм. Шупашкар, 1927. (241 с., 10000 экз.);

— Тĕнчери чĕрчунсен пурнăçĕ (Зоологи). Шупашкар, 1928 (167 с., 5000 экз., А.И. Ярлышкин тата П.А. Макаровпа пĕрле çырнă)[136];

— Çамрăк çĕр ĕçлекен. Шупашкар, 1930 (128 с., 25000 экз., 3—4 классем валли);

— Çутçанталăкпа техникă. Шупашкар, 1933 (173 с., 20100 экз., хут сахал пĕлекенсен вĕрентĕкĕ);

— Çамрăк техник. Шупашкар, 1932 (196 с., 15000 экз., 3-4 классем валли)[137];

— Производство и применение местных строительных материалов. Чебоксары, 1953 (124 с., 2000 экз.);

— Ишĕлсе пыракан çырма-çатрасемпе кĕрешесси. Шупашкар, 1958. (56 с., 2000 экз.);

— Пĕвесем тăвасси. Шупашкар, 1955 (52 с., 2000 экз.);

— Колхозсенче электричество вăйĕпе уса курни. Шупашкар, 1956 (52 с., 2000 экз.)[138];

— Техника словарĕ. Шупашкар, 1961 (202 с., 1500 экз., М.К. Костин тата А.Т. Титовпа пĕрле çырнă)[139].

**Яндушкин Семен Васильевич.**

Яндушкин Семен Васильевич (вăл Степан Васильевичăн тач тăванĕ) 1918 ç. «Канаш» хаçат секретарĕ пулнă. Чех салтакĕсем Хусана килсен Хĕрлĕ çара каять, унта вăл 1927 çулччен службăра комиссар пулать. Шупашкарти совпартшкул директорĕнче, юлашки вăхăтра Чăваш республикин таврапĕлӳ музейĕн (Успени чиркĕвĕнче вырнаçнă чух) директорĕнче ĕçленĕ[140]. Унăн Мускаври «Советская этнография» академилле журналта (1952, 1 №) кун пирки статья та тухнă[141].

Шăллĕ, Макар Васильевич та, пултаруллă çын пулнă. Хусанта вĕреннĕ чух вăл пĕр пĕчĕк ялхуçалăх кăларăмне чăвашла куçарма пултарнă: Штуцер И. Люцерна акса тăвасси çинчен. Казань, 1919 (8 с., 10000 экз., Хусан кĕпĕрнин çĕрĕç пайĕпе Чăваш наци секцийĕн кăларăмĕ)[142].

Тепĕр шăллĕн вара ывăлĕ паллă çын. Клементий Николаевич Яндушкин пултаруллă ăсчах, техника ăслăлăхĕсен степенĕсене, хисеплĕ ятсене, пысăк наградăсене тивĕçнĕ. Унăн изобретенийĕсемпе ăслăлăх ĕçĕсем кăна çĕр ытла. Вĕсем тăван çĕршыв хăватне самаях çĕкленĕ. Унăн публикацийĕсем ятарлă журналсемпе сборниксенче тухнă. Çав вăхăтрах вăл Германи, Швеци, Франци т. ыт. çĕршывсен специалисчĕсемпе тачă çыхăнса ăнăçлă ĕçленĕ. Малтанрах унăн чăвашла кĕнеки те тухнă пулнă: Наукăлла атеизм пропагандинчи хими опычĕсем. Шупашкар, 1960 (32 с., 2000 экз.)[143].

**Яндушкин Захар Алексеевич.**

Яндушкин Захар Алексеевич (20.01.1930—4.11.1992) тăван ял, колхоз пирки сахал мар çырнăччĕ. Çамрăк чух художник пулма ĕмĕтленнĕ, анчах кĕçĕн ывăл пулнăран тĕпкĕче юлнă, ялтан тухса каяйман. Килĕнче вара халĕ те унăн хăшпĕр ӳкерчĕкĕсем, портречĕсем, натюрмортсем упранаççĕ. Вăл Юнкăри çичĕ класлă шкултан, Етĕрнери механизаци шкулĕнчен вĕренсе тухнă.



Яндушкин Захар Алексеевич, мăшăрĕпе Яндушкина Нина Ивановнăпа (Кĕçĕн Кăпăсран, малтан Просорова) тата амăшĕпе Елена Ивановнăпа (1973 ç.в.) туй кун. 10.06.1967.

Малтан Сĕнтĕр МТС-ĕнче тата тăван колхозра тракторист пулнă. 1962—1965 çç. «Моргаушская» МСО-ра бульдозеристра ĕçленĕ, хыççăн, 1965—1990 çç., çавăнтах экскаваторпа ĕçленĕ. Тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн, пултарулла пулнăшăн 1986 ç. «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ механизаторĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Унăн пĕр пиччĕшĕ Лаврентий Алексеевич 1963—1971 çç. Мăн Сĕнтĕр райповĕн пуçлăхĕ пулнăччĕ[144].

**Васюхин Алексей Иванович.**

Васюхин Алексей Иванович (1949 ç.ç.) вăтам шкултан, ялхуçалăх институтĕнчен, Патшалăх службин академинчен вĕренсе тухнă, çарта пулнă. Шоферта, «Моргаушская» строительнăй организацийĕн механикĕнче, «Сельхозтехникăн» Муркашри уйрăмăн пуçлăхĕн çумĕнче, «Новая Юнга» колхоз председателĕнче (1984—1992 çç.) ĕçленĕ, Мăн Сĕнтĕрти юсавпа техника предприятийĕн пуçлăхĕ пулнă. 1994 ç. Муркашпа Элĕк районĕнчи суйлавçăсем ăна республикăн Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулма шаннă, унта вăл ялхуçалăх енĕпе ĕçлекен ко-

митет ертӳçи пулнӑ. 1998 ç. хыççӑн тӑван ялти «Ветеран» ИП ертӳçи[145].

**Фролова Тамара Ефимовна.**

Фролова Тамара Ефимовна (1958 ç.) Чӑваш АССР 10-мӗш суйлаври (1980—1984) Аслӑ Канашӗн депутачӗ пулнӑ. Вӑл вӑтам шкул пӗтернӗ хыççӑн тӑван колхозра, ПМК-ра каменщик пулса ӗçленӗ, 1991 çултанпа — шкулти техслужащи[146].

**Яндимиркин В.Г.**

1990 çç. пуçламӑшӗнче пӗтӗм Чӑвашъенне Юнкӑпоçран тухнӑ, унтах çурт лартакан Яндимиркин Вячеслав Геронтьевич (1955ç. ç.) хӑйне евӗр пултарулӑхӗпе хумхантарнӑччӗ. Унччен вӑл Шупашкарти 7 тата 17 вӑтам шкулсенче, Сӗнтӗрвӑрринчи вӑрман техникумӗнче вӗреннӗ, çарта пулнӑ, хыççӑн тӗрлӗ çӗрте ӗçленӗ. Амӑшӗ Кавказ енчи вырӑс, арӑмӗ Куславкка районӗнчен.

Ун чухне янранӑ Кашпировский, Чумак, Тарасов т. ыт. экстрасенссен ӗçӗ-хӗлӗпе хавхаланса В.Г. Яндимиркин та Мускаври «Хура лотос» Вилӗмсӗрлӗх храмӗн парапсихологи шкулӗнче, Тухатмӑшсен орденӗн Юрий Лонго ертсе пыракан ассоциацин курсӗнче вӗреннӗ хыççӑн Шупашкарти «Урӑлӑх тата сывлӑх» юлташлӑхра (тӗп ертӳçи Н.П. Ивантаева) ӗçлеме пуçлать. Виçтӑватӑ çул хушшинче çӗршер-пиншер çын унӑн сиплев сеансӗсенче пулать. Ӑна тимленисем асӑрхани (1992ç.):

«Çын çапса хӗснӗ пек. Ӑçтан пуçтарӑннӑ пулӗ çавӑн чухлӗ халӑх... Сипleме килекенсем хӑйсемпе пӗрле тӗрлӗрен япаласем илсе килнӗ: шампунь, супӑнь, хут салфетка, таса çӑл шывӗ, чиркӳрен турӑ шывӗ те илсе килнӗ, сӑнӳкерчӗксем, çурта... Мӗн кӑна вырнаçтарса хуман-ши ятарласа лартнӑ сӗтелсем çине. Пурте тенӗ пекех хӑйсен япалисене В. Яндимиркин çывӑхнерех хурасшӑн...

Йӑваш куçӗсем çӑлтӑр пек выляççӗ. Темле асамлӑ вӑй ун еннелле туртать... Ӑшӑ кӑмӑллӑ, ырӑ чунлӑ этем. «Ман сиплев витӗмӗ çак пӳлӗмри япаласене пурне те кӳрет. Çывӑхра-и, инçетре-и, хӑвӑр аркӑр çинче тытса ларатӑр-и — пурпӗрех пурне те пӗр пекех лекет...» Çук çав, пурпӗрех асамçӑ çывӑхнерех лартма тӑрӑшаççӗ...

Сеанс вӗçленсен... çуртра хаклӑ йышши духин шӑрши те сӗвӗрӗлнӗ. Эрех хӑватне те чакарать терӗ-ха... Каçпа эрех тутанса пӑхатӑп, унччен тутана самаях пӗçертекен эрехӗн хӑвачӗ чакнӑмӗн... Зала кӗрсе лартӑмӑр... кӗске самант хушшинчех пӳлӗмре

ăшă юхăм чупма пуçларĕ, ӳт-тир вĕриленчĕ, ун хыççăн уçă варкăш ярса пачĕ. Сĕтел çинче ларакан кĕленче савăтри шывсене чӳхентерчĕ... Нумай та вăхăт ирмест, шăплăха сирсе ларакансенчен пĕри шари! çухăрса йĕме тытăнать. Тепри ахăлтатса кулать. Виççĕмĕшĕсем тĕлĕк курсах çывăраççĕ. Лăпкăн, сассăр йĕрекен те пур, пуçĕсене силлекенсем, кĕлеткипе сулланакан, куççуле юхтараканнисене те асăрхама пулать. Мана вара хама кам кăтăклать-ши? Пĕр чарăнми йăх-йăх кулатăп, унччен те пулмасть... Юлашкинчен пуç çав тери çăмăлланса кайрĕ, хама хам çап-çамрăкланса кайнăнах туйăнчĕ, темле асамлă вăй тапса кĕчĕ, çӳле-çӳле пĕлĕт çине вĕçсе каяс килет... Мĕн тери ырă!..»

Яндимиркин В.Г., ун патĕнче пулнисем çырнă тăрăх, илтменнисене илтнĕ тунă-мĕн, япăх куракансене — лайăх куракан, юн пусăмне йĕркеленĕ, шыçăсенчен ӳт-тире тасатнă, лăпкă çывăракан тунă, тытăнчăклă калаçнинчен хăтарнă т. ыт. те. Шел те, Вячеслав Геронтьевич пултарулăхĕ 1990 çç. варринче сӳнет[147].

## ЮНКĂПОÇ ЯЛНЕ ÇĔКЛЕНĔ ÇЫН[148]

Çулсем иртнĕ май пире чăвашсен пирвайхи çыравçи тата ăсчахĕн Спиридон Яндушăн кунçулĕпе пултарулăхĕ ытларах та ытларах кăсăклантарать. Пурте пĕлеççĕ, унăн ĕçĕ-хĕлĕ тăван литературăпа ăслăлăхра паллă вырăн йышăнать: вăл унта пĕрремĕшĕ пулнипе кăна мар — тĕпчевсĕн ĕçĕсем паян кун та пĕлтерĕшне çухатманнипе. Калас пулать, паллă ăсчахăн пурнăçне, унăн историпе этнографири, литературăри, фольклорти, çутĕçĕнчи пултарулăхне тишкернĕ ĕçсем хальччен сахал мар пичетленнĕ. Уйрăмах вĕсем хаçат-журналта чылай пулчĕç. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçĕсенче те тухрĕç.

Спиридон Яндуш (Спиридон Михайлович Михайлов-Яндуш) хальхи Муркаш районне кĕрекен Юнкăпуç ялĕнчи тĕреклĕ çемьере 1821 ç. (декабрĕн 28-мĕшĕ) çуралнă. Шкул çулне çитсен ăна ашшĕ Чикмери хăйпе çыхăннă пĕр ĕçлĕ çын патне вĕренме панă. Чăнах та, уес хулинчи пурнăç, кирек мĕнле ĕçрен те ютшăнманни, çивĕч ăс-тăнлă пулни Спирккана часах вырăсла вĕренме, хут-çырăва алла илме май панă. Тепĕр темиçе çултан, хăй тĕллĕнех хутла вĕренсе çитсен, вăл хаçат-журнал, кĕнекесем чылай вуланă, хăй пĕлĕвĕпе тавракурăмне малалла аталантарнă.

Вун виçĕ çула çитсен çамрăк Спиридон уесри тĕрлĕ вырăнсенче (Оринăпа Мăн Шетмĕ вулăс кантурĕсенче, земски суд канцелярийĕнче тата ытти çĕрте те) çыруçă ĕçĕпе пурăннă. 1842 çултан пуçласа вара мĕн виличчен (1861 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче вилнĕ) вăл уесăн земски судĕнче чăваш тăлмачи пулса ĕçлет. С. Яндуш нумай вуланă, юлашкинчен халăх кунçулĕпе, йăли-йĕркипе интересленме пуçланă. Администраци тата суд ĕçĕ тăрăх хура халăхпа вĕçĕм калаçма тивнĕрен вăл унăн хуйхи-суйхине, йăли-йĕркине, ĕçне-хĕлне, кунçулне лайăх чухлакан пулать. Май килнипе, ăнсăртран тенĕ пек, Спиридон Михайлович халăхри юмах-халапсене, пулни-иртнине çырса илме пуçлать; кайран хăй те Чикме уесĕнчи (хальхи Муркаш районĕн çурçĕр пайĕ, Шупашкар районĕн хĕвеланăç пайĕ тата Марий Элĕн Туçиçармăс районĕ) чăвашсен, вырăссен тата çармăссен историйĕпе, фольклорĕпе, уйрăмах этнографийĕпе тишкерӳ ĕçĕсем хайлама пуçлать. Вĕсем хушшинче туйсем, уявсем, пасарсем, ялсем, Чикме хули çинчен çырни нумай.

Калас пулать, 1840 çç. Раççейре историпе, таврапĕлӳпе кăсăкланма пуçланă вăхăт пулнă. Унăн варкăшĕ Питĕрпе Мускавра кăна мар, Хусанпа Чикмене те çитнĕ. Çавăн чухне ĕнтĕ А.А.Фукс, В.А.Сбоев, В.П.Вишневский, В.И.Лебедев т. ыт. чăвашсем пирки çырнă ĕçĕсем кун çути курнă. Çаксемпе ĕнтĕ Спиридон Яндуш паллашмасăр тăма пултарайман. Хусан университечĕн профессорĕ, «Казанские губернские ведомости» хаçат редакторĕ А.И. Артемьев (1820—1874) пичетленĕ тĕпчев-кăсăклану ĕçĕсем («Кереметь», 1846 ç.; «Очерк истории черемис», 1848, т. ыт. те) ăна уйрăмах хавхалантарнă. Ун чухнехи паллă тĕпчевçĕ хăй те 1852 ç. мартра, Питĕре куçса кайнă май, Чикмере Спиридон Михайловичпа курнăçать, татах çырма хавхалантарса хăварать[149].

Патшалăх пурлăхĕсен министерствин Чикмери чиновникĕ Фененко та вырăнти сăмахпа т. ыт. чылай кăсăкланнă. Тарăн шухăшлакан, хĕрӳ чунлă çак çын уесри халăхсен юррисене, юмахĕсене, халап-легендисене тăрăшса пуçтарнă, çакă ăна хăйĕн тӳрешара ĕçне тĕплĕнрех тума пулăшать тенĕ. Вăл çармăссемпе чăвашсем çинчен кĕнеке те çырса хатĕрленĕ пулнă. Паллă тĕпчевçĕ А. Гакстгаузен 1843 ç. Чикмене пырсан ахальтен мар чи малтан унпа паллашать[150].

Чикмерен вун çухрăри Похросолари (Мăн Юнкă, с. Покровское) ялĕнчи пачăшкă М. Кроковский те таврапĕлӳпе кăсăкланнă. Вăл çармăс сăмахлăхне пухнă, «Горные черемисы»



Иртнĕ ĕмĕрсенчи кĕвĕ хатĕрĕ.

ятлă этнографи очеркне (1854 ç.) пичетлесе кăларнă. Маларах çак вырăс пупĕ Шорча вăрçине хутшăннă хăйсен вулăсĕнчи халăха казаксен сотнипе пĕрле путарса-лăплантарса та çӳренĕ, вырăнти учительсене те кăмăлламан-мĕн, ачасен чиркӳпе (хĕреслĕхпе) тачă çыхăннă вĕренĕвне кăна ырланă[151].

Уесри паллă Ишек пачăшки В.П. Громов (1813—1881) та ун чух чăваш чĕлхипе кăсăкланнă, С.М. Яндушпа тачă çыхăну тытнă. Вăл вăхăтра таврапĕлӳ пултарулăхĕпе Юнкăпус çыннине кунта никам та çитеймен.

Хăй пурăннă вăхăтра Спиридон Михайлович Хусанта тата Мускавпа Питĕрте тухса тăнă тĕрлĕ хаçат-журналта тата уйрăм кĕнекесемпе вăтăр ытла ĕç пичетлет. Вĕсем ĕнтĕ Спиридон Яндуш ятне çав вăхăтри ăслăлăх ĕçченĕсем хушшинче паллă тăваççĕ. Унпа хăш-пĕр паллă ученăйсем те интересленме пуçлаççĕ, туслашаççĕ: вĕсен ретĕнче А.И. Артемьев, П.С. Савельев, М.П. Погодин, Н.И. Березин т. ыт. те. И.Н. Березин профессор çине тăнипе тата унăн укçипех 1853 ç. Хусанта Спиридон Михайлович çырнă чăвашсен пĕрремĕш илемлĕ литература кĕнеки — «Чувашские разговоры и сказки» пичетленнĕ. Ăслăлăх ĕçне явăçма вара пирĕн ентеше Хусанти истори профессорĕ пулнă А.И.Артемьев нумай хистенĕ. Çакнашкал ăнланакан çынсем пулăшнипе

те ĕнтĕ Юнкăпус ҫыннин ячĕ тĕпчевҫĕсем хушшинче ҫирĕпленсе ҫитет, сумлă пулать. Ахальтен мар, Петербургри «Русский дневник» ятлă пысăк хаҫат хăйĕн 1859 ҫулхи 12-мĕш номерĕнче ҫапла ҫырать: «Спиридон Михайлович Чикме уесĕнчи хысна хресченĕсенчен. Ҫак тĕлĕнмелле пултаруллă чăваш тин кăна патшалăха пĕтĕҫме пуҫланă хăйĕн халăхĕнчен тухнă пĕрремĕш вĕреннĕ ҫын. Пурнăҫ ҫине вăл Европа ҫынни пекех пăхать. Михайлов господин ученăйсем умĕнче тахҫанах палăрнă ĕнтĕ»[152]. Спиридон Михайлович хăйĕн пулатурлăхĕпе хăй те кăмăллă пулнă, малашнехи хăйĕн пĕлтерĕшне те туйнă. 1860 ҫулхи авăн уйăхĕнче вăл М.П. Погодин историк, археолог тата журналист-редактор патне ҫапла ҫырать: «...Когда не будет меня на свете, может быть, все письма ученых мужей будут у меня рассматривать и скажут: вот с кем имел связи наш Спиридон Михайлов, писатель-самоучка? Спасибо им за это. Готов я идти по избранной стезе до могилы»[153].



Спиридон Яндушăн 180 ҫулне уявлани.
Юнкă шкулĕ, 28.11.1996.

Уесра паллă ҫын пулнăран тата вырăс чĕлхипе пĕрлех чăвашла тата ҫармăсла пĕлнĕрен Спиридон Яндуш час-часах Атăл тăрăхне, Чăвашъене килнĕ ҫулҫӳревҫĕ-тĕпчевҫĕсемпе тĕл пулнă, вĕсене уес ҫĕрĕ-шывĕпе паллаштарнă. Акă, тĕслĕхрен, вăл 1856 ҫулта финсен паллă ученăйĕпе А. Альквистпа та тĕл пулнă, ăна Чикме уесĕнчи чăваш ялĕсене кăтартса ҫӳренĕ, халăх йăли-йĕркине пĕлме пулăшнă[154].

1856 ҫ. Хусан кĕпĕрнин Статистика комитечĕ Спиридон Михайловича хăйĕн член-корреспондентне илет. Раҫҫейри географи обществи вара 1854 ҫултах ăна Атăл тăрăхĕнчи халăхсен историйĕпе этнографийĕ ҫинчен паха статьясем ҫырнăшăн хăйĕн член-



Полтран-пасарне килнĕ Мăн Хораçпа арăмсем. 1994 ç. Шашкова Мила Гордеевна, Матюкова Валентина Денисовнв тата Марышева Кира Леонидовна.

сотрудникне суйланă пулнă. 1859 çулта çак общество ăна темиçе çул хушши питĕ кирлĕ этнографи тата статистика материалĕсем ярса тăнăшăн кĕмĕл медальпе наградăланă. Иртнĕ ĕмĕрти Яндушкинсем каланă тăрăх, нумай кĕнекесем çырнăшăн Спиридон Михайловича 1861 ç. кăрлачра Географи обществи ылтăн медаль те парса хисепленĕ-мĕн. Хăй вилнĕ хыççăн çав медаль Чикме чиркĕвĕнче нумайччен çакăнса тăнă. «Ку чăваш Ломоносовĕн медалĕ, вăл Юнкăпус чăвашĕ пулнă», — тенĕ тет вара шкул ачисене илсе пынă вĕрентекенсем ун пирки.

С.М. Яндуш хăйĕн пĕлӳ-çыру сарас ĕçĕпе, ăслăлăх тата илемлĕ пултарулăх эткерĕпе чăвашсемпе туçиçармăссене демократиллĕ Европа культурипе паллашмалли никĕсе хывнă. Çав вăхăтрах унăн ĕçĕ-хĕлĕ пĕтĕмĕшле çак халăхсен наци ăнланулăхне варанма пулăшнă, тăван культурăра, йăли-йĕркисенче наци хăйнеевĕрлĕхĕпе малашлăх юхăмне аталанма хистенĕ.

С. Яндушăн пултарулăхри ĕçĕ-хĕлĕ пĕтĕмĕшле ăнăçлă йĕркеленнĕ, май килнĕ таран пичетленнĕ. Ăна хăй пурăннă чухнех самай паллă çынсем асăрханă, пулăшса та пынă, хăйĕн çинчен те çырнă. Анчах кайран, Спиридон вилсен, вăл кăшт манăçать. Юрать-ха пурнăçĕпе, пултарулăхĕпе В.К. Магницкий (1839—



Александр Семенович Никитин академик А.В.Тихонов художник ӳкернĕ «С.М.Яндуша Раççей географи обществăн кĕмĕл медалĕпе чыслани» картина умĕнче. 4.12.2006.

1901) тĕпчевçĕ кăсăкланма пуçлать, çак чаплă чăваш çинчен темиçе материал пичетлесе кăларать. XX ĕмĕрте вара Спиридон Михайлович çинчен мĕн 1950 çулсемччен нимле сас-хура пулмасть, ял-йышра та ун пирки никамах та калаçман, тата ялта Яндушкинсем пĕтĕмĕшле пур çынсем шутланнă.

1950 çç. истори аталанăвĕн хумĕпе С. Яндуш çинчен те аса илеççĕ. П.Г. Григорьев ку енĕпе уйрăмах ăнăçлă ĕçлет, унăн чылай ĕçне шыраса тупать. Кĕçех ун çумне М.Я. Сироткин, Д.Е. Егоров, В.Д. Димитриев тата ыттисем хутшăнаççĕ. Спиридон Михайловича халалласа 1966 ç. (Муркаш районĕнчи Юнкăра) тата 1971 ç. (Шупашкарта) ăслăлăх конференцийĕсем ирттереççĕ. Паллă тĕпчевçĕн 145 çулĕ çитнĕ май Чикмери пĕр урама унăн ятне тивĕçтереççĕ. РСФСР Министрсен Совечĕн 1966 çулхи чӳк уйăхĕн 30-мĕшĕнчи 952-мĕш йышăнăвĕпе (Чăваш АССР Министрсен Совечĕн постановленийĕ 24.12.1966 тухнă, 751 №) килĕшӳллĕн Юнкăри вăтам шкула Спиридон Михайлович ятне параççĕ. Кун хыççăн кашни пилĕк çултах çакăн евĕр пысăк мероприятисем иртме пуçлаççĕ тата çĕнĕрен те çĕнĕ тĕпчевçĕсем хутшăнаççĕ. 1996 çултанпа С.М. Яндуш эткерне аталантарас юхăма Шупашкарти çулçӳревпе туризм институчĕ те (директорĕ А.С.Никитин) явăçать.




Чикмери Спиридон Михайлович халалланӑ урамри ҫурт
(Белинский урамӗпе хӗресленнӗ ҫӗрте). 19.10.2006.

1980 ҫҫ. пуҫламӑшӗнче С. Яндуш пурнӑҫӗпе пултарулӑхне ытларах Янтушсен ӑратлӑ йывӑҫҫине кура тӗпчеҫҫӗ. Янтуш тӑхӑмӗсем ҫине тӑнипех чӑвашран тухнӑ пӗрремӗш ҫыравҫӑ, этнограф, историк ятне Шупашкарти Мускав районӗнчи студентсен хулинчи пӗр кӗске урама параҫҫӗ (хула ӗҫтӑвкомӗн 1984 ç. кӑрлачӑн 27-мӗшӗнчи 107-мӗш йышӑнӑвӗ). 1.09.1985 Юнкӑ шкулӗнче Вӑтам Атӑл тӑрӑхӗнчи пӗрремӗш таврапӗлӳҫи ячӗпе сумлах мар пулин те асӑм хӑми уҫӑлать[155].

Ку таранччен, 150 ҫул хушшинче, Спиридон Яндуш ҫинчен сахал мар материал ҫапӑнса тухнӑ. Вӗсем унӑн кун-ҫулне, ӗҫӗ-хӗлне тӗрлӗ енчен ҫутатаҫҫӗ. Чи сулӑмлисенчен ҫаксене палӑртма пулать: Магницкий В.К. Чувашин-этнограф Спиридон Михайлович Михайлов. ИОАИЭ, т. 17, вып. 1, Казань, 1901; Григорьев П.Г. Спиридон Михайлович Михайлов. Шупашкар, 1960; Егоров Д.Е. Спиридон Михайлович Михайлов (историко-педагогический очерк). Чебоксары, 1968; С.М.Михайлов — первый чувашский этнограф, историк и писатель. Чебоксары, 1973; Егоров Д.Е. С.М. Михайлов — просветитель и исследователь чувашской народной педагогики. Чебоксары, 1998, ЧГИТС; Димитриев В.Д. О чувашском ученом и писателе середины XIX

века С.М. Михайлове и его сочинениях о чувашах, марийцах и русских Волжско-Сурского края. Чебоксары, 2003, т. ыт. те. Тĕпчевçĕ-çыравçă ĕçĕсем те 1950 çç. хыççăн тĕрлĕ кăларăмсенче пичетленнĕ, çырнисен пуххисем тухнă: Труды по этнографии и истории русского, чувашского и марийского народов. Чебоксары, 1972 (424 с., ЧНИИ кăларăмĕ); Спиридон Яндуш — ученый и писатель: Избранные труды. Чебоксары, 1996 (72 с., ЧГИТС кăларăмĕ): Собрание сочинений. Чебоксары, 2004 (Сост. В.Д.Димитриев, 512 с., ЧГИГН кăларăмĕ).

## С.М.ЯНДУШ ТУСĔСЕМ, ХУНЬКАССИЙĔ, СĂНĔ

**Тусĕсем.**

С.Яндуш кунçулне унăн ашшĕ Чикме купсипе Тимофей Федорович Михеевпа туслă пулни нумай витернĕ. Спиридон ача чухне вăл Оринăра вулăс çыруçинче ĕçленĕ[156]. Янтуш Михали салтакра пулса вырăсла пĕлнĕ, Юнкăпуçра пуян та тĕреклĕ хуçалăх тытнă. Ун пек кил хуçисем ялта хисепре пулнă, вĕсене ялйыш тĕрлĕ вырăнсене суйланă. Михала та çавăнпа, те урăх сăлтавпа, Михеевпа паллашса кайнă, ăна кăмăлласа пыл хурт çемйи парнеленĕ. Çавăнтан хунанă пыл хурт вĕллисем Михала килĕнчех пулнă. Паллашнă кăна мар вĕсем, çывăх туслашнă, пĕр-пĕринпе хутшăннă. Тимофей Федорович вара час-часах вулăсран, кайран Чикмерен те, шăнкăравсем çакнă пар лашапа Юнкăпуçне персе çитнĕ.

Спиридон Михайлович çак купсана автобиографийĕнче хăй астума пуçланăранпах асăнать[157]. Малтанах Т.Ф. Михеев пĕчĕк Спирккана утьăкка туса асăрхамасăр синкер тусан ашшĕне каланă пулать: «Возьму Спиридона к себе либо в дети, либо в воспитание»[158]. Кайран вĕренме вăхăт çитсен 1829 çулхи кĕркунне купса çамрăк Спиридона хăй патне илсе каять. Унăн килĕ Чикмере чиркӳ çумĕнчех ларнă. «Дом купца Михеева стоял почти рядом с приходской Богоявленской церковью, в которую я любил ходить к божественной службе в воскресные дни»[159]. Вăл икĕ хутлă çурт 1960 çç. ларнă-ха, унта сакăр çемье пурăннă[160]. Тимофей Федорович, хăйĕн икĕ хĕр пулнăран, Спирккана ывăллăха илсе каясшăн пулнă пулмалла.

Купса патĕнче пурăннă тăлăх тăванĕ Анна Кузьминична Дворникова тимленипе Спиридон хутла вĕренет, ун чухнехи пурнăçра кирлĕ ăса пухать. 1833 çул вĕçĕнче тин ку киле пăрахса



Чикме: Степан Разин урамĕ.

çамрăк Спиридон Т.Ф. Михеев ĕçлĕ çын пулăшнипех ĕнтĕ, хăйсен Оринă вулăс кантурне çыруçă çумĕ пулса ĕçлеме вырнаçать. Тепĕр çуркунне вара Михеев усламçă Аçтăрхана вăрманпа кайса вилет[161]. Çапла вара пилĕк çула яхăн Спиридон Яндуш çак ырă çын патĕнче пурăнать, вăл кăмăллă пулнипе хутла вĕренет, пурнăçа хăнăхать.

**Спиридон Яндуш хунĕсем.**

Спиридон 22 çула кайсан, 1843 ç. пуçламăшĕнче, Чикмери мещен хĕрне качча илет. Унăн хуньашшĕ Петр уес хулинчи Мясников ĕçлĕ çынсен çемйи тытса тăнă хупахсене тимленĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне 1815 ç. патша кăларнă «Правила на учреждение штофных и ведерных лавочек при питейных домах» указпа килĕшўллĕ йĕркеленĕ. Çав указпа эрехе витрепе (12,3 л.) çеç мар, штофсемпе (1,23 л.) те, çур штофсемпе те сутма ирĕк панă, нумай çĕрте хупахсем уçăлнă[162]. Спиридон Михайлович хăй ун пирки çапла çырнă: «... служил в Козьмодемьянске поверенным по питейным сборам у знатных откупщиков Мясниковых». Туй туса irttерме Спиридона вара каллех А.К. Дворникова пĕччен карчăк пулăшнă. Унăн хулари чиновник шайĕпе туй туса ирттерме укçи-тенки çитсех кайман,

вара вăл укçине çав кăмăллă карчăкран илнĕ. Туйĕнче ашшĕ-амăшĕпе пĕрле çав карчăк та ăна пилленĕ. «Бабинька Анна мне вторая мать», — тесе çырать С. Яндуш хăйĕн автобиографиллĕ очеркĕнче[163].

Калас пулать, арăмĕ, Екатерина Петровна, Спиридона творчествăлла ĕçĕнче нумай пулăшнă, çĕнĕ ÿсĕмсем тума хавхалантарнă. С. Яндуш хăйĕн нихăш статйинче те, çырăвĕсенче те ăна хурлани, вăл чăрмантарнă тени курăнмасть. Пачах урăхла, вĕсем мăшăрĕпе иккĕш унăн кашни çĕнĕ пичетленнĕ статйишĕн, пултарулăх çыннисем çырнă кашни çырăвĕшĕн пĕрле савăннă[164].

Екатерина Петровна ăслă, ал ĕçне пĕлекен вырăс хĕрарăмĕ пулнă. «Жену я взял хотя и бедненькую, но зато умную, рукодельную и грамотную. Мы с ней принялись читать книги духовные и светские», — çырать Спиридон Михайлович ун пирки. Спиридон вилсен арăмĕ Чикмере йĕркеллех пурăннă, тепĕр çич-сакăр çултан вăл вилнĕ. Ăна çак хуларах пытарнă пулмалла[166].

Спиридон Михайлович хуняшшĕпе туслă пулнă. Нумай кĕнекене вăл хуняшшĕ патĕнче вуланă: «У тестя я прочитал «Полные анекдоты Петра Великого», «Потерянный рай»,



Чикме: Троица чиркĕвĕ.



Чикме: Смоленскиичиркӳ.

«Смерть Авелеву», «Тысячу и одну ночь» и прочие книги...» Хуняшшӗ Петр Ярославль кӗпӗрнинчи Ростов хулинчи мещен ҫемйинче ҫуралнӑ. Анчах ҫитӗнсен унӑн тӑван хулара ӗҫлеме тӳр килмен. «Ему с молодости назначила судьба влачить жизнь у добрых хозяев. Продолжал службу добросовестно, он состояния не имел, а где честные бывают богаты?» — ҫапла ҫырать кӗрӳшӗ хӑйӗн хуняшшӗ пирки унӑн ывӑлӗ ҫинчен хайланӑ «Злополучный сын» калавӗнче[167]. Арӑмне Петр ӑҫтан илни тата вӑл мӗн ятлӑ пулни паллӑ мар. Ҫапах та Чикмерен те пулма пултарнӑ[168]. Ачисем вара вӗсен нихӑш те Ростовра ҫуралман, Чикмере те ҫуралман пулас[169].

Унӑн тӑватӑ хӗр тата икӗ ывӑл пулнӑ. Спиридон Михайлович хуняшшӗ ӗмӗр тӑршшӗпех хӑй ҫуралнӑ хулине хырҫӑ тӳлесе пурӑннӑ[170]. Ун чухнехи йӗркепе ҫынна (кил хуҫи арҫынна) ӑҫта малтан ҫырса хунӑ, вӑл ӗмӗр тӑршшӗпех ҫавӑнта шутланнӑ, ачисене те ҫав шӑпа кӗтнӗ.

Петр ӗҫлеме питӗ юратнӑ, ачисене те ӗҫе хисеплеме вӗрентнӗ. «Действительно, муж сей был человек честных правил: детей воспитывал в страхе божном как русский славянин, любил трудолюбие, кроме занятий по должности, в часы досуга занимался токарным и столярным мастерством и однажды сделал деревянные стенные часы»[171]. Петӗре кайран (1847—1849 ҫҫ.) ҫемйипе (кӗҫӗн ывӑлӗ аякка тухса кайсан) Вятка кӗпӗрнинчи Яранск хулине ӗҫлеме куҫарнӑ. Унта вӑл арӑмӗпе тата икӗ кӗҫӗн хӗрӗпе куҫнӑ; куҫсан тепӗр ик-виҫ ҫултан унтах вилнӗ[172].



Муркаш районĕнчи истори учителĕсем Чикмери А.В. Григорьев яч. историне ӳнер музейĕ умĕнче. 16.05.2001.

**Хуняшшĕн ачисем.**

Петĕрĕн аслă хĕрĕ Чикмере качча тухнă. Йăмăкĕ Катя — Спиридон Яндуш мăшăрĕ — вилсен вĕсен пурлăхĕ пĕтĕмпех аккăшĕн хĕрне куçнă. Петĕрĕн аслă хĕрĕн хĕрĕ Феодосия 1868 ç. Вятка кĕпĕрнинчи Вӳршĕм (Уржум) хулине почтмейстера качча тухнă[173].

Спиридон хуняшшĕн виççĕмĕш ачи Иван ятлă пулнă. Ашшĕ вилнĕ чух Иван урăх кĕпĕрнере хăйĕн пĕчĕкех мар çемйипе ĕçлесе пурăннă. Ашшĕ вилсен вăл Яранска амăшĕпе икĕ йăмăкĕ патне пурăнма куçать. Шăллĕ Иркутскран таврăнсан Иван Петрович пĕтĕм çемйипе Пензăна куçать[174]. 1851 ç. вĕсем Пензăра пурăннă. Унтан Катя тăтăшах çыру кĕтнĕ[175]. Иван амăшĕпе, арăмĕпе тата çичĕ ачипе пурăннă. Салтака каяс мар тесе вăл Ростова кайса мĕнпур укçине тăкакланă. Кун пек пысăк хур тӳснĕ хыççăн Ивана Пензăран Тамбова ĕçлеме куçарнă. Кунта пач çука юлнă çемйи пĕр çул нуша курса пурăннă. Хыççăн Ивана Воронеж кĕпĕрнине куçранă. 1860 çул тĕлне вара Иван Петрович çителĕклĕ пурăннă, пысăк чинра ĕçленĕ[176].

Пĕртен-пĕр шăллĕ Вася пулнă. Вăл пĕр 1830—1831 çç. çуралнă. Ку пултăрĕн пурнăçĕ çинчен С. Яндуш çӳлерех асăннă «Злополучный сын» калавĕнче нумай çырса кăтартнă.

Чикмери Вознесенски (халь Советски) урамĕнчи А.И.Шишокин купса çурчĕ. XIX ĕмĕр.





Чикмери А.В. Свешников купса çурчĕ. XIX ĕмĕр.

Ашшĕ Чикмере чухнех вун улттăри Васьăна вырнаçтарать. Çавăн чухне ĕç йĕркипе Васьăн тепĕр приказчикпа пĕрле аякри Çĕпĕре, Иркутск кĕпĕрнине тухса кайма тивет. Унта çитсен, вăл киле темиçе çыру çеç яма ĕлкĕрет. Ăна приказчик еркĕнĕн вăрă ĕçĕпе пӳтсĕрлĕхне пула тĕрмене хупаççĕ. Унта икĕ çул ларнă хыççăн Васьăна паспорт вăхăчĕ тухнă пирки çуралнă çĕршывне этаппа яраççĕ. Вăрăм çул çинче унăн каллех икĕ çул иртет. Тăванĕсем патне çитиччен мĕн тĕрлĕ кăна нуша курмасть вăл. Юлашкинчен Василий Петрович 1853—1856 çç. Çĕвастоппăль (Крым) вăрçине кайса вилет[177].

Спиридон Михайловичăн хĕр пултăрĕсем те иккĕн пулнă. Пиччĕшĕ Иван Петрович Яранскра ĕçленĕ тата тепĕр пиччĕшĕ Василий хĕн-хур курса çӳренĕ чухне вĕсем Яранскрах качча кайнă[178].

**Спиридон тăхăмĕсем.**

Спиридон Яндуш хăйĕн ĕçĕсенче ниçта та ачисем çинчен çырни çук. Юнкăпуçĕнчи ватăсем вĕсем пирки илтмен. Пулман та пулмалла. Пĕр çĕрте çеç унăн хĕр пулнă пек курăнать. Анчах вăл мĕн ятлă пулни паллă мар. 1860 ç. ку хĕр çитĕнсе çитнĕпе пĕрех пулнă. Спиридон Михайлович хăйĕн М.П. Погодин патне çак çулти сентябрьте çырнă çырăвĕнче ăна çапла асăннă: «...бедность сильно гнетет меня с семейством: имею жену, дочь-невесту, престарелого отца и брата в гвардии»[179]. Анчах «дочь-невеста» тесе вăл хăйсем усрава илнĕ хуньаккăшĕн (арăмĕн аккăшĕн) хĕрне Феодосие асăннă. Феодосия Спиридон Михайловичăн усрав хĕрĕ пулни тата вăл пĕр 15 çул каялла (1868 ç. ĕнтĕ) Вӳршĕм хулинчи темле почтмейстера качча тухни çинчен 1883 ç. ноябрьте Юнкă учителĕ М. Хлебников В.К. Магницкий этнограф патне çырса пĕлтернĕ[180].

С. Яндуш арăмĕ пĕтĕм пурлăхĕ çак Феодосие куçнă. Анчах Екатерина Петровна Спиридон Михайлович вилсенех унăн алçырусемпе тĕрлĕ хучĕсене Исампай ялĕнчи (халь Етĕрне районне кĕрет, ĕлĕк унта Чикмерен Етĕрне хулине каякан аслă çул çинчи ям станцийĕ пулнă) Александр Васильевич Знаменский кумне парса янă пулмалла[181]. Феодосия качча тухсан ик-виç çултан, XX ĕмĕрте Яндушкинсем шутланă тăрăх, Аçтăрхан-Калмăк еннелле ĕçлеме каякан чиновник упăшкипе тухса кайнă.

С.М. Яндуш хăйĕн кил-çурчĕпе нумаях пурăнайман, çынсем патĕнче хваттерте нумайрах асапланнă. Хăйне ятăн çурт туяннă вăхăтра унăн çемйи Вознесенски (кайран Советски) урамĕнчи В.И. Красильников килĕнче пурăннă. 1860 ç. пуçламăшĕнче, Спиридон Михайлович Чикмере исправник пулнă И.П. Аркановран кĕмĕлпе кивçен 70 тенкĕ илсе Григорий Михайлович Масленников 3 гильдири купсаран кил-çурт туянать. Анчах çыравçă пурăннă чух парăмне тавăрма ĕлкĕреймен, вăл вилсенех кредитор тавăç пуçарать. 1864 ç. ку кил-çурта унăн çемйине кăларса ярса каллех çав купсана параççĕ[181а].

**Спиридон Яндуш сăн-сăпачĕ.**

XIX ĕмĕрхи çыравçăсен сăнĕсем нумайăшĕн паллă мар. Раççейре фотоӳкерӳ 1840 çç. çеç вăй илме пуçланă. Çавăнпа та çав ĕмĕр варринче пурăннă С.М. Яндушăн та темиçе сăнӳкерчĕкрен мала пулма пултарайман. Маларах асăннă М. Хлебников çырăвĕ тăрăх унăн пĕр сăнӳкерчĕк пулни çеç паллă, ăна та пулин усрав



Н.К. Сверчков тунă С.М. Яндуш портречĕ.

хĕрĕ качча тухсан хăйпе пĕрле Вӳршĕм хулине илсе кайнă[182]. Çапла вара, чăвашсен пĕрремĕш çыравçин сăнӳкерчĕк йĕрĕ çухалнă. Ăна халь те тĕпчевçĕсем шыраса тупайман.

Фотографи халĕ кăна тухнă пулин те, ӳнерпе ăслăлăхăн тахçанхи ĕçченĕсен сăнĕсене хайлавĕсемпе пĕрле кăтартма тăрăшаççĕ. Ӳнерçĕсем, ĕлĕкхи çыравçăсен сăнĕсене тунă чухне, вĕсен хайлавĕсен содержанийĕсене тата авторпа çыхăннă тĕрлĕ условисене шута илсе тата май килсен насĕлĕсене тĕпчесе тивĕçлĕ те витĕмлĕ сăн шутласа тупаççĕ.

1960 çç. çутĕç министрĕ Д.Е. Егоров çине тăнипе С.М. Яндуш сăнне тума чăвашсен паллă художникне Никита Кузьмич Сверчкова (1891—1985) хушаççĕ. Чи малтан вăл Спиридонăн пиччĕшĕ, Митри, шăллĕ пирки М. Хлебникова каланине шута илет: «Впоследствии, как вырос, был даже, можно сказать, ростом велик, также толщиною. Волосы у него были, также и борода с усами, — рыжие, бороду не носил, брил, лицо и нос были чистые, приятные, только на правой щеке около глаза был самый маленький рубчик, образовавшийся оттого, что во время игры с пустыми пузырьками поранил как-то нечаянно; глаза были серые... Одевался он по-русски»[183].

Спиридон сăнне тăвас умĕн художник Юнкăпуçĕнчи Яндушкинсемпе паллашать. Вĕсенчен пĕрин сăнне, Макар Васильевич Яндушкинăнне, ӳкерме палăртнă прототип вырăнне йышăнать. М.В. Яндушкин аслашшĕ Çимон авалхи Янтуш несĕлĕн Пранькпан мăнукĕ пулать (Куçма ятлă ывăлĕ — 1799 ç.ç. — урлă). Макарăн пиччĕшĕсем Степанпа Семен Васильевичсем республикăра вăл çулсенче паллă çынсем пулнă. Н.К. Сверчков хăйĕн ĕçĕнче çак Яндушкинсем хăйсен пысăк çемйипе 1917 ç. çапăннă сăнӳкерчĕкпе усă курнă. Паллă ӳнерçĕ тунă С. Яндуш сăнĕ нумай çĕрте пичетленнĕ. Вăл портрет Юнкăри вăтам шкулта упранать, ăна художник çак шкула 1966 ç. Спиридон Яндуш ятне панă

май парнеленĕ. Портрет копийĕсем Чăваш наци, Чикмери А.В. Григорьев яч. ӳнерпе истори музеĕсенче пур.



Н.В. Овчинников тунă С.М. Яндуш портречĕ.

С.М.Яндуш ĕçĕ-хĕлне хаклама пуçланă чухнех тупнă сăн, ăна анлăрах тĕпченĕ, йышлă тăванĕсем те унпа, хăйсен йăх тымарĕпе самаях кăсăкланма пуçланă май, теприсене тивĕçтерсех каймасть. Çавăнпа хыççăн та темиçе тĕпчевçĕ-ӳнерçĕ чаплă çыравçăн сăнне калăплама пикенет. Унăн пултарулăхĕпе нумай çул хавхаланакан А.С. Никитин та, Петербургри инженерипе экономикăн патшалăх универститечĕн Шупашкарти филиалĕн директорĕ, паллă таврапĕлӳçĕн оригиналлă сăнне курасшăн пулать. 1990 çç. вĕçĕнче вăл хăйĕн шухăшĕпе Раççей тата Чăваш халăх художникне Николай Васильевич Овчинникова (1918—2004) паллаштарать. Паллă ӳнерçĕ нумай шухăшлать, тĕпчет, В.Д. Димитриев историк сĕнĕвĕсемпе усă курса 2003 ç. кăткăс ĕçе пурнăçлать. Портретра ирĕк шухăшлă, ăслă, хăйне шанакан, анлă тавракурăмлă ăсчах тăван халăх умне тухса тăрать. Çак сăн Спиридон Михайлович хайлавĕсен юлашкинчен пухса кăларнă кĕнекинче анлă кун çути курчĕ[184].

Çав çулсенчех тунă Александр Венедиктович Тихонов ĕçĕсем те кăсăклă. Пĕринче вăл Вырăс географĕсен пĕрлĕхĕн ертӳçи В.А. Струве академик пирĕн ентеше кĕмĕл медальпе чысланă саманта ӳкернĕ, вĕсемпе пĕрлех кунта кĕнрекере ларакан Патшалăх Канашĕн членне Ф.П. Врангель адмирала, мореплаватель-географа Ф.В. Литке адмирала, çыравçă-этнографа В.И. Даль академика курма пулать. Тепринче тата ӳнерçĕ Янтуш ашшĕн Тевелĕн Азов çарçӳревĕнчи çăмăлах мар саман-

тне кăтартнă. Пысăк панорамăра çарпуçăн Петĕр патшан сăнарĕ те вырăн тупнă. Ку пĕчĕкех мар картинăсем халлĕхе эпир асăннă Александр Семенович Никитин академикăн ĕçпӳлĕмне илем кӳреççĕ.

## ЭТНОПЕДАГОГИКА НИКĔСНЕ ХЫВНИ[185]

Спиридон Михайлович тăван халăхшăн, ăслăлăхшăн калама çук пархатарлă ĕçсем туса хăварнă, чăвашсене çутта кăларас шухăш-кăмăллă ĕçĕ-хĕлĕпе те хаклă вăл. Анлă пултарулăхĕнче педагогика та вырăн тупнă, унта та вăл хăйне кăтартма ĕлкĕрнĕ.

Унăн чĕринче яланах çак шухăш-ĕмĕт вĕресе тăнă — тăван халăха хут вĕрентсе çутта кăларасчĕ, вĕсене аталаннă культурăсемпе паллаштарасчĕ, вĕсем çине таянса вара чăвашсене ĕмĕрхи «тĕттĕмлĕхрен» хăтарасчĕ. Акă епле çырать С.М. Яндуш хăйĕн çывăх тусĕ А.И. Артемьев патне: «Все мои мысли, все мои желания клонят к тому, чтобы, ... своих единоплемянцев повлечь за собой, будет уже им в невежестве!»[186] Тĕрлĕ çĕрти ăсчахсем хăйне вырăс çутĕçĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ М.В. Ломоносовпа танлаштарни те Спиридон Яндуша ун пек пулма, унăн тĕслĕхне чăвашсем хушшинче пурнăçлама хавхалантарнă.

Чăнах та Спиридон Михайлович хăй шухăшланине пурнăçа тӳрремĕн те кĕртме тăрăшнă. Спиридонăн Дмитрий пиччĕшĕ кайран аса илнĕ тăрăх, вăл хăйĕн кĕнекисене тăтăшах яла илсе килнĕ е почтăпа ярса панă. Чăвашсем те хут вĕренме пултараççĕ тенĕ ĕнтĕ.

Пĕррехинче вăл яла хăй алăпа çырса ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ чăвашла букварь, хут, кăранташсем илсе килет те ашшĕ килĕнче кӳршĕри темиçе ачапа Микола шăллĕне хут зĕрентме пуçлать. Ялйышра вара çакна Спиркка школĕ теме пуçлаççĕ. Хăйсен ялĕнчех вулама-çырма вĕреннине курма Янтуш Михали патне кӳршĕ-аршă пухăннă, тĕлĕннĕ, çап-çамрăк учителе çăвар карса итленĕ. Алăпа çырнă букварьте чăвашла куçарнă е хăй хайланă илемлĕ пĕчĕк текстсем те пулнă[187].

Кайран та Спиридон Михайлович ялти çамрăксене хăй патне вĕренме чĕннĕ. Ун патне вĕçĕм çӳренисем вулама-çырма самаях хăнăхнă пулнă. Вăл пулăшнипех иккĕшĕ Чикмере вĕренсе яла учитель пулма кайнă тет, Спиридон хайланă букварь ашшĕ

патĕнче турăш хыçĕнче упраннă. Ăна Дмитрий пиччĕш кайран учительсене кăтартнă[188].

Букварь тума ăна ун чухнехи вĕреннĕ çынсем хушшинче питех те сумлă В.П. Вишневскин (1804—1885) 1832 ç. Хусанта тухнă «Начатки христианского учения» кĕнеки витернĕ ĕнтĕ. Кунта вырăс графикипе калăпланă чăваш букварĕ те пулнă. Çавнашкалах çак пултаруллă тĕпчевçĕн 1836 ç. «Начертание правил чувашского языка» кĕнеки (кунта словарь те пулнă) вăл вăхăтра самаях пĕлтерĕшлĕ пулнă[189].

Тăван чĕлхен грамматикине ăслăлăх енчен никĕслес ĕçе те С.М. Яндуш тимленĕ. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, вăл «Словарь простонародного языка и местных наречий с показанием употребительных ударений и примеров в складке речи, произношение и география распространения наречий и прочее» ятлă вĕрентĕке пичетлесе кăларас ĕçе хутшăннă, унпа таçти ăсчахсем те усă курнă.

Демократилĕхĕн малтанхи варкăшĕпе, Европăра сарăлнă çутлăх пайăркисем Раççее те çитнипе вăй илсе, 1840 çç. Чăвашъенче пирвайхи шкулсем уçăлнă. Çак юхăмран С.М. Яндуш та аякра юлман, хăйĕн тӳпине хывнă. Вăл Ишекре, Етĕрне ялĕнче, Чемейре, Йолашшара (с. Еласы) шкулсем уçас ĕçе хутшăннă. Тăван ялĕнче вара май килмен. Кунта чиркӳ çук тесе вăл пуçарнă ĕçе официаллă йĕркепе те, патшалăх органĕсен йышăнăвĕпе те шкул тесе çирĕплетмен. Çапла вара çак шухăш малалла аталанайман, нумая та пыман[190].

С.Яндуш шкулсем уçасшăн кăна мар, вĕрентӳ ĕçĕн пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе те шухăшланă. 1857 ç. вăл «О сельских приходских училищах и об успехах учения в них инородных детей» ятлă ăслăлăх хайлавĕ çырать, ăна патшалăх департаментне ярса парать. Вăл тĕрлĕ халăхсен пĕр-пĕрин хушшинче туслă пулма кирли çинчен, çак туслăх çамрăксем хушшинче ĕлĕкавалтан мĕнле çирĕпленсе пыни çинчен çырнă.

Спиридон Михайлович вак халăхсен ачисене шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентме кирли, çав вăхăтрах вак халăхсен вырăс чĕлхине пĕлме кирли çинчен каланă. Вырăс чĕлхине вăл хăйĕн виççĕмĕш тăван чĕлхи вырăнне хурса хакланă. Унăн хайлавĕсенче тăван халăха ытти халăхсен культурипе паллаштарса наци культурине пуянлатма тăрăшни уççăнах палăрать. Хĕрарăмсене хутла вĕрентес ĕçе хакламаншăн вара вăл влаçра тăракансене сивленĕ[191].

С.Яндуш хăй вăхăтĕнчи çынсемшĕн чи ырă тĕслĕх пулнă. Ватăсем те унăн кашни сăмахне тăнланă. Унтан илтнĕ сăмах



Юнкăпуçри пуçламăш шкулти 1-мĕшпе 3-мĕш классенче вĕренекенсем, варринче вĕсен учителĕ Романов Степан Федорович (Чĕрĕпкассинчен). 1938 ç.

каларĕшĕсене ялйышра халĕ те астăваççĕ тата унăннах тесе шутлаççĕ:

«Тăван чĕлхӳне маниччен хăвăн ятна ман»;

«Çын ăслă калаçма, лайăх вулама, илемлĕ çырма, хăвăрт шутлама пĕлтĕр»;

«Нумай чĕлхе пĕлни ăса нумайлатать»;

«Икĕ чĕлхе — икĕ ăс, виçĕ чĕлхе — виçĕ ăс»;

«Чăвашпа чăвашла калаç, вырăспа вырăсла калаç, çармăспа çармăсла калаç»;

«Асли ăслă мар, ăсли — аслă»;

«Упа вăйлă, анчах этем ăслă, çавăнпа этем упаран вăйлăрах»[192].

Чăваш историографийĕнче çакăн пек сăмах та пур. Кантур таврашĕнче хут ĕçĕпе пурăннă май Спиридон Михайлович Шурча вăрçине (1842 ç.) тата ирсĕр Елкино улпутне И. Цветкова вĕлерме (1852 ç.) хутшăннă хресченсене влаçсем умĕнче тӳрре тухма пулăшнă пулать.

С.Яндуш тăван халăх ăс-хакăлне сума сунă, ăна ыттисем патне те çитерме тăрăшнă. Унăн 1853 çултах пичетленнĕ «Чуваш-



Юнкăпоç шкулĕнчи 3-ш класс (1962 ç. çуралнисем, темиçе ача – 1 Май тата Йолккăнтан). Варринче Яндушкина Александра Ивановна учительница.

ские разговоры и сказки» кĕнекинче халăхра пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарнă ваттисен сăмахĕсемпе сăнавĕсем кун çути курнă[193]. Кунта вĕсене литература чĕлхипе илсе кăтартатпăр, умĕнчи цифрăсемпе вĕсен кĕнекери йĕркине (вырăнне) палăртрăмăр:

1. Юман çулçи час тăкăнмасан, халăха йывăр килет.

19. Халăх ĕçне пĕр çын тăваймасть.

18. Кун çути кашнинех çитет.

35. Усал урхамахпа çӳрет, ырă — ырхан утпа.

2. Çĕнĕрен çул ан ту, сукмака ан пăх, мăн çулпах çӳре.

16. Васкакан арăмĕнчен савăнман.

33. Ватă тилле улталаймăн.

9. Тĕпсĕр лакăма тултарма сăрт та çитеймĕ.

17. Хутпа чăркасчĕ ун урисене.

(Кĕнеке çине ку каларăша çапла çырнă: хоть па чурггасӳ-чи о-нынӳ орузане; вырăсла вара çапла куçарнă: он стоит того, чтоб ему ноги обвязать бумагою, по его неповоротности).

21. Çын ăшĕнчи хăçан та пулин çиеле тухать.

23. Кил-çуртлă çын ниçта та тармасть.

15. Çĕтĕк кĕрĕк йытă сассипех çĕтĕлет.

6. Çукран çуках пулать.

10. Тухатмăшпа вăрра турă мала ямасть.

32. Кĕскерен вăрăм пулаймĕ.

20. Шыва вĕри пăшатанпа ăшăтаймăн.

24. Выльăха уй пысăклатса тăрантараймăн.

8. Ута пăсакан ĕмĕрĕпех ырă ут тытаймасть.

31. Вуникĕ хут виççен тин кас.

26. Килти суту-илӳ Мускавра сутни пекех.

34. Вăрман пуян, часах пĕтмест.

14. Хуçипе виç сăмах та пулин калаçмасăр килĕнчен тухса утмастăн ĕнтĕ.

22. Çĕççе аврипе тытмалла параççĕ.

5. Кĕçĕннисене кăна ятпа чĕнеççĕ.

3. Чунăм сĕннĕ куркунтан хаклăрах.

(Кĕнеке çине ку каларăша çапла çырнă: чонӳ сiязы манъ санжинъ хамынъ-чонъ прехъ мары? Вырăсла вара çапла куç-арнă: мне душа милее твоего ковша: не потерять же ее из-за тебя).

27. Сăрапа пĕрле ăс та анса каять.

12. Кĕтӳри выльăха шутламаççĕ.

13. Тăвара çĕре тăкмаççĕ.

4. Сысна ăшă пуласса хыçкаланать.

11. Кушак, тăман пуласса сиссен, кăчăртатать.




Спиридон Яндуш çуралнăранпа 180 çул çитнипе уявлани: Юнкă шкулĕн ачисем. 19.12.2001.

29. Акана тухма вăхăт çитсен, мăйпăран (малиновка) мăй-мăй тесе кăшкăрать.

28. Çуртри тухăçне кура ыраш мĕнле пуласси палăрать.

С.М. Яндуш шучĕпе, халăхăмăрăн иртнĕ саманасенче пултарнă паттăрсем, хастар çулпуçĕсем те хальхи çамрăксемшĕн ырă тĕслĕх пулма кирлĕ. 150 çул каяллах вăл чăвашсене патриотла ăс парас никĕсе чухласа илнĕ. Çакă пирĕн этнопедагогикăшăн халĕ те пĕлтерĕшлĕ. Спиридон Яндуш халăхăн ăс парас мелĕсем пирки тĕрĕссипе чи малтан сăмах пуçарнă[194].

Спиридон Михайлович ĕмĕр тăршшĕпех çамрăк ăрăва тивĕçлĕ ăс парса çутта кăларасшăн тăрăшнă. Илемлĕх туйăмĕ çине чăвашсен чи пирвайхи çутлăхçи (просветителĕ) мĕнле пăхнине эпир унăн «Сарри паттăр», «Чее кушак» халапсем тăрăх та аван пĕлме пултаратпăр. «Рождение и воспитание чуваш» ятлă статйинче вара вăл ачасене, вăй-хал упражненийĕсем туса, килте те, ĕçре те тĕрĕс режим тытса пырса, ӳт-пĕве пур енчен те аталантарма, сывлăха çирĕплетме кирли çинчен çырать.

## СПИРИДОН ЯНДУШ ПУЛТАРУЛĂХĔН АХРĂМĔ

Каларăмăр ĕнтĕ, Чăваш Республикинче, çавнашкалах Марий Элте, 1961 çултан пуçласа кашни пилĕк çултах Атăл тăрăхĕнчи халăхсен пĕрремĕш историк-çыравçине, таврапĕлӳçине, Раççей географĕсен пĕрлĕхĕн членне халалланнă тĕрлĕ мероприятисем ирттереççĕ. Гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕпе Чăваш патшалăх университетĕнче, Чăваш педагогика университетĕнче ăслăлăхпа практика конференцийĕсем пулаççĕ, республикăри тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсенче, уйрăмах шкулсенче вĕренекенсем тĕрлĕ сочинени-рефератсем çыраççĕ, пирĕн пĕрремĕш ăсчах асăннă вырăнсемпе ятарлă çулçӳревсем ирттереççĕ. Тĕп мероприятисем пĕтĕмĕшле Муркаш районĕнчи Юнкăри вăтам шкулта иртеççĕ.

«Юнкăри Культура çуртĕнче халăх йышлăн пухăнчĕ. Вĕсем пурте пирĕн ентеш, чăвашсен пĕрремĕш ученăйĕ, писателĕ, историкĕ тата этнографĕ Спиридон Михайлович Михайлов-Яндуш çуралнăранпа 165 çул тултарнине паллă турĕç. Хăнасем те сахал пулмарĕç унта. С.Михайловăн тăванĕсем, педагогика наукисен кандидачĕ Д.Е. Егоров, Л.П. Сергеев профессор, Хветĕр Уяр писатель, Петр Ялгир поэт, Чăваш АССР тата РСФСР тава тивĕ-

çлĕ учителĕ, Юнкă тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ М.Я. Гаврилов, Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ А.А.Алексеев, В.Шемекеев поэт, И.Н.Ульянов ячĕпе хисепленекен университет студентки Е.Александрова, районти çутĕç пайĕн заведующийĕ В.И.Толстов, «Новая Юнга» колхоз председателĕ А.И.Васюхин тата ыттисем пулчĕç.

Савăнăçлă пухăва Юнкă ял Совет ĕçтĕвкомĕн председателĕ Ю.Ильин уçрĕ. Ун хыççăн Юнкăри вăтам шкул директорĕ А.Малаков, ытти чĕннĕ хăнасем С.Михайловăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тĕплĕн паллаштарчĕç...

Хăй тĕллĕн вĕреннĕ, нумай пĕлме тăрăшнă Юнкăпуç каччи чăвашсен пĕрремĕш ученăйĕ ятне тивĕçнĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ савăнăçлă пухура тухса калаçакансем ăна чăвашсен Ломоносовĕ тесе палăртрĕç.

Спиридон Михайловăн таланчĕпе наукăлла ĕçĕсем чылай вăхăт хушши ентешĕсемпе чăваш халăхĕшĕн паллă пулман. Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн çеç Чăваш наукăпа тĕпчев институчĕн работникĕсем М.Я.Сироткин, В.Д.Димитриев, П.Г.Григорьев, Д.Е.Егоров тăрăшнипе ученăйăн ĕçĕсене шыраса тупнă, унăн ĕçĕ-хĕлĕ, пурнăçĕ çинчен калакан кĕнекесем çырнă. Вĕсем тăрăшнипе Юнкăри вăтам шкулта С.М.Михайловăн музейне уçнă. Чăваш халăх художникĕ Н.Сверчков музей валли ученăй портретне ӳкернĕ. 1966 çулта шкула С.М.Михайлов ятне панă. 1985 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче шкулта чăвашсен пĕрремĕш ученăйне халалласа Асăну хăми уçнă. Музей та, Асăну хăми те Юнкă тăрăхĕнче пурăнакансемшĕн, уйрăмах шкул ачисемшĕн, пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕренекенсем мĕн пĕчĕкренех хăйсен ентешĕ, унăн пархатарлă ĕçĕ çинчен пĕлсе ӳсĕç.

Савăнăçлă пуху хыççăн Юнкăри вăтам шкулти учительсен тата вĕренекенсен коллективĕ И.Д.Краснов çырнă «Юнкăпуç ачи» спектакль лартса пачĕ. Спектакль С.Михайловăн ачалăхĕпе паллаштарать. А.Николаева, Н.Ядыков, Ю.Вазикова, Г.Вазиков, Л.Толстова, М.Ягунов, Г.Лукоянов учительсем, С.Иштудова, О.Любимова, Н.Илугина вĕренекенсем хăйсен ролĕсенче питĕ ăста вылярĕç. Пĕчĕк Çпиркка сăнарне пиллĕкмĕш класра вĕренекен Андрей Комаров питех те ĕненмелле кăтартрĕ» (1986) [195].

«Чăвашсен пĕрремĕш этнографĕ, тĕпчевçи, историкĕ, географĕ, писателĕ, статисчĕ Спиридон Михайлович Яндуш çуралнăранпа çак кунсенче 175 çул тултарчĕ. Паллă ентешĕмĕре чысласа, халалласа вăл çуралса ӳснĕ ялта Юнкăпуçĕнче ноябрĕн 28-мĕшĕнче уяв пулса иртрĕ.

Ирхине ирех вăтам шкулта хăнасем пухăнма тытăнчĕç. Чăваш тумĕ тăхăннă учительсем тата аслă классенче вĕренекенсем, вĕсемпе пĕрлех шкул директорĕ В.И. Толстов та хăнасене çăкăр-тăварпа, чăваш сăрипе, ăшă сăмахсемпе тараватлăн кĕтсе илеççĕ. С. Яндуш юбилейне ирттерме районти вĕрентӳ пайĕнче ĕçлекенсем, районти шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем тата историе вĕрентекен учительсем, республикăри паллă çынсем, ученăйсем, Яндуш тăванĕсем хутшăнаççĕ.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕренекенсем уçă урок итлеме пухăнаççĕ. Н.В.Шандимирова учительница «Тăван халăх йăлийĕркине вĕрентмелли мелсем» темăпа уçă урок ирттерет. Ахăртнех, Надежда Вячеславовна ку темăна С. Яндуша, унăн пултарулăхне чысласа суйласа илнĕ пулмалла. Урокра раштав уйăхĕ, сурхури, улах ларни, ытти йăла-йĕркесем çинчен тĕплĕ каласу пулчĕ.

Чи малтанах Калайкассинчи чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Е.Е.Ерагин таврапĕлӳçĕ сурхурин çулталăкри пĕлтерĕшĕ, хĕл пайĕсем çинчен каласа пачĕ.

Ку шкула 1907 çулта туса лартнă. Унăн çурчĕсем кивĕ, вĕренме вырăн çитмест. Çавна пулах иккĕмĕш çул ĕнтĕ ясли-садра та вĕрентеççĕ. Шкул администрацийĕ, унта ĕçлекенсем çуртсене




Спиридон Яндуш 175 çул тултарнине уявланă чух.
Юнкă шкулĕ, 28.11.1996.

тирпейлĕ тытса тăма тăрăшнă, çавăнпа вĕсем паянхи куна çитнĕ. Халĕ кунта 225 ача вĕренет. Шкулăн ачасене вĕрентме тата уйăрса панă çĕр участокĕсенче ĕçлеме техника пур. Çĕр лаптăкĕ çинче хăйсене мĕн кирлине пĕтĕмпех çитĕнтереççĕ, ытлашшине сутаççĕ. Юнкăри вăтам шкул халĕ С.М.Михайлов ячĕпе хисепленет. Ку ята ăна 30 çул каярах, С.Яндуш çуралнăранпа 145 çул тултарсан панă. Вунă çул каярах асăну хăмине çапнă.

Шкулта ентешĕмĕре чыслама тĕплĕн хатĕрленни курăнать. Коридорта стенасем çинче С.М. Михайлов-Яндуш пурнăçĕпе ĕçĕхĕлне кăтартакан стендсем вырнаçтарнă. Янтушсен йăхĕ, Янтуш ăратине пуçлакан, унăн пурнăçĕ, пултарулăхĕ пирки район хаçатĕнче пичетленнĕ материалсемпе т. ыт. те курса паллашма пулать.

Юнкăри вăтам шкулта музей йĕркелени вара уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. «Иртнине ан ман, вăл малашлăха вĕрентекен» тесе çырни шкул коридорĕнче тӳрех куç тĕлне пулать. Шкул музейĕнче вара кунти халăхăн тĕрлĕ тапхăрĕнчи пурнăçĕпе паллашма пулать. Истори учителĕ Е.П. Каптурина хăнасене музей экспоначĕсем çинчен каласа парать. Музейра Спиридон Михайлович пурнăçĕпе унăн ĕçĕ-хĕлĕсем çинчен каланисене пысăк вырăн панă. Н. Сверчков ӳкернĕ Яндуш портречĕ (ăна ун пирки çырнисене шута илсе ӳкернĕ) чиваррине вырнаçнă. Вăл урăх ниçта çук иккен, унăн алçырăвĕсем те пур. Хăй тĕллĕн вĕреннĕ тĕпчевçĕ пĕр тикĕс те илемлĕн шăрçаланă саспаллисене. Вăл çырни хальхи вĕренекенсемшĕн те ырă тĕслĕх пулса тăрать. Кунта унăн пурнăçĕн тапхăрĕсемпе, ĕçĕ-хĕлĕпе те паллашма пулать.

Музей экспоначĕсем хушшинче — пир тĕртмелли станок, килте ĕлĕк усă курнă тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕрсем пур, ялти чиркӳ, колхоз йĕркелекенсем, тĕрлĕ çулсенче ĕçпе чапа тухнă çынсем, Аслă Отечественнăй вăрçăра хутшăнни çинчен калакан экспонатсем чылай. Тăван çĕршыва хӳтĕлеме Юнкăран 600 ытла çын тухса кайнă, кашни иккĕмĕш çын каялла таврăнайман. Янтуш йăхĕнчен вăрçа 18 çын кайнă. Елена Павловна С.М. Михайлов-Яндуш пурнăçĕпе кунçулĕ, унăн ĕçĕсем пирки тĕплĕн каласа пачĕ.

Уçă урок ирттерсе, шкул ĕçĕ-хĕлĕпе, музей экспоначĕсемпе паллашнă хыççăн пурте Юнкăри Культура çуртне пухăнаççĕ. Кунта С.М. Яндуш çуралнăранпа 175 çул тултарнине чысласа савăнăçлă лару пулчĕ.

Ăна районти вĕренӳ пайĕн заведующийĕ В.М. Васильев уçать, килнĕ хăнасемпе паллаштарать. Чи малтанах район администра-

цийĕн пуçлăхĕ И.Г. Константинов сăмах калать. Вăл çакна палăртать. С.М. Михайлов-Яндуш 175 çул каялла çуралнă, пурăннă, ĕçленĕ. Вăл вăхăтри пурнăçа аса илсен, çав пултаруллă çын кĕске тапхăртах мĕн чухлĕ ырă ĕç туса хăйĕн ырă ятне малаллахи ăрусем валли хăварма пултарнинчен чăннипех тĕлĕнмелле. Паян эпир унăн юбилейне паллă тăватпăр. Çакă вăл пире пурне те, çав шутрах ачасене те, Яндуш пек пулма, ытларах пĕлме, ăстăна, тавракурăма кунсерен аталантарма хистет.

И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институчĕн доценчĕ Д.Е. Егоров С.М. Михайлов-Яндуш пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен доклад туса пачĕ. С.М. Михайлов-Яндуш вăхăтĕнче чăвашсем тĕттĕм халăх пулнă. Хутла вĕренесси пирки вĕсем ĕмĕтленме кăна пултарнă. Хут пĕлекенсем чăвашсем хушшинче питĕ сайра пулнă. С. Яндуш çавна курса, пĕлсе тăрса чăвашсене вĕрентессишĕн çуннă, «манăн пĕтĕм шухăшĕмĕт — чăваш халăхне хамăн çулпа илсе каясси. Çитет чăвашсене тĕттĕмре пурăнма», тесе çырнă вăл. Спиридон Михайлов тĕрлĕ ялсенче шкулсем уçасси пирки çырать. Унăн пурнăçĕнче М.В. Ломоносов ырă тĕслĕх пулса тăрать. С.М. Михайлов-Яндуш чăвашла, вырăсла, çармăсла лайăх пĕлнĕ, ашшĕ-амăшĕ вĕренмен пулсан та, вырăсла калаçма пĕлнипе мухтаннă. Хăйĕн тĕпчев ĕçĕсенче пурнăçри нумай ыйтусене хускатнă, вĕсем çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă... С.Яндуш пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне В.К.Магницкий, П.Г.Григорьев, М.Я.Сироткин, В.Д.Димитриев, Г.Н.Волков т. ыт. те тĕпченĕ.

Чăваш Наци Конгресĕн вице-президенчĕ В.П.Никитин (Станъял) хăйĕн сăмахĕнче С.Яндуш чăвашсемшĕн чи сумлă ятсенчен пĕри пулнине палăртрĕ. Унпа эпир тивĕçлипех мухтанма пултарăпăр. Хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнчех (пурне те телей пĕр пек килмест) вăл пулас ăрусеем валли пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем хăварнă. Хăйĕн ĕçĕсен пĕлтерĕшĕпе вăл И.Я.Яковлевран та, К.В.Ивановран та кая мар. Этемшĕн чи паллă тапхăр вăл икĕ вăхăт: çурални (1821 ç.) тата вилни (1861 ç.). Ломоносов пек вĕренесшĕн тăрăшса, ăс пухса ăслăлăх ĕçĕсем çырать, кĕнеке те пичетлет. 20 çула яхăн тăлмачра ĕçлет. Паянхи чăваш ачин ăна 22-мĕш ĕмĕрте (тепĕр 175 çултан) аса илчĕр тесен, мĕн тумалла-ха? Тепĕр паллă вăхăт Яндушăн вилнĕ çулĕ. Ăна пытарнă çĕрте вилтăпри çине палăк лартмалла. Каярахпа çуралнă вырăнĕнче те мĕнле те пулин палăк лартса ун çине Яндуш çинчен 3 чĕлхепе — вырăсла, чăвашла, çармăсла çырса хумалла. Чăвашсем



С.М.Яндуш çуралнăраппа 180 çул çитнине уявлани. Чăвашсен пĕррĕмĕш ăсчахĕн ентешĕсене И.Н. Ульянов яч. Чăваш патшалăх университечĕн ăсчахĕсем саламлаççĕ: 1) А.П.Данилов, Г.В.Краснов, И.Я.Тенюшев, В.И.Сергеев, Л.А.Таймасов тата Г.Н.Желтухин. 19.12.2001.

хăйсен несĕлĕсен 8 сыпăкне пĕлме тивĕçлĕ. Ваттисене хисеплемелле, ваттисене хисеплемен халăх пĕтет. Чăвашсем пек йывăр шăпаллă халăх сахал, çакна манмалла мар. С.Яндуш çӳренĕ вырăнсене, ялсене кайса пăхмалла. Вăл хăйĕн ĕçĕсене питĕ тĕплĕ çырнă, тĕлĕнмелле ăслă таврапĕлӳçĕ пулнă Тăван çĕршыва, тăван халăха çĕкленĕ сын.

Чăваш Гуманитарии институчĕн пай пуçлăхĕ Г.Б.Матвеев хăйĕн сăмахĕсенче Яндуш умĕнчи тĕпчевçĕсен чăвашсем пирки çырнă ĕçĕсем çинчен каларĕ (А.А.Фукс, В.А.Сбоев), С.Яндушăн хăшпĕр ĕçĕсен пĕлтерĕшĕ çинче чарăнса тăчĕ. Вĕсем чăваш этнографи наукишĕн халĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вăл Муркаш районĕнчи типографире районăн историпе культури, этнографи ĕçĕсемпе кĕнеке кăларма, районти йăла-йĕркесене тĕпчеме, фольклор ĕçĕсене малалла тăсма сĕнсе хăварчĕ.

Гуманитарии институчĕн археологи пайĕн наука аслă сотрудникĕ Е.П.Михайлов Муркаш районĕ аваллăх палăрăмĕсемпе пуян пулнине палăртрĕ, ăна тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ. С.Яндуш çак темăпа çырнă ĕçсем çинче чарăнса тăчĕ.

Чăваш патшалăхĕн çĕршывсем хушшинчи туризмпа ĕçлекен институт директорĕ А.С.Никитин халăхшăн паллă вырăнсене ĕмĕрлĕх асăнмалла туса хăварасси çинчен каларĕ. Ун пек çынсем Чăваш Енре сахал мар. Вăл Юнкă шкулне, вĕрентӳ пайне асăнмалăх кĕнекесем пачĕ. Юнкăри истори учительне Е.П.Каптуринана, С.Яндуш çинчен сочинени çырса малти вырăнсене йышăннă вĕренекенсене С.Салдыркинана (Мăн Сĕнтĕр), Н.Тимофеевана (Москакасси), М.Вязовскаяна (Муркаш), Э.Матвеевана (Калайкасси) дипломсемпе асăнмалăх парнесем парса чысларĕ.



Юнкăсене С.М.Яндуш çавра çулĕпе И.Я.Яковлев яч. Чăваш педуниверситечĕн ăсчахĕсем саламлаççĕ: Л.П.Сергеев, Д.Е.Егоров.

Савăнăçлă пухура Яндуш йăхĕнчи çынсем — унăн тăванĕсем сăмах каларĕç. Учительсен ячĕпе Нискассинчи вăтам шкулти истори учителĕ Е.В. Петрова тухса калаçрĕ.

Юнкăри вăтам шкул директорĕ В.И.Толстов хаклă хăнасене паллă ентеше чысласшăн сума суса килнĕшĕн тав турĕ, С.Яндуш ĕçĕсене вĕренме кирли çинчен каларĕ. Уява ирттерме пулăшнăшăн спонсорсене: Муркашри кирпĕч заводне (директорĕ К.К.Илугин), «Новая Юнга» хуçалăха, «Алектон» АОна, уяв пуçаруçине тата тĕп йĕркелӳçине Е.Е.Ерагина т. ыт. те тав турĕ.

Юлашкинчен шкул ачисем концерт кăтартрĕç. Шкулти учительсемпе вĕренекенсен драма кружокĕ И.Д.Краснов С.Яндуш ачалăхĕ çинчен çырнă «Юнкăпуç ачи» спектакль кăтартрĕç. «Артистсем» ăна питĕ витĕмлĕ те ĕненмелле вылярĕç, куракансем кассăн-кассăн куççулĕсене те чараймарĕç.

«Артистсене» çак спектакле ытти шкулсенче те кăтартма сĕнчĕç. Унта С. Яндуш ача чухнех çивĕч ăслă пулнине, вĕренме тăрăшнине, Чикмери пурнăçне лайăх сăнласа панă» (1996)[196]. «Драма кружокне Ирина Геннадьевна Михалкина чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕ ертсе пырать...

Спектакле С.М. Михайлов-Яндуш этнограф, тĕпчевçĕ çуралнăранпа 175 çул çитнине халалларĕç вĕсем. Тĕп сăнар — Спиркка. Ăна 4-мĕш «Б» класс вĕренекенĕ Саша Цветков маттур ача вылять. Тĕлĕнмелле ăста, чăн-чăн артист тейĕн ăна. Паллах, паллă çын рольне выляма, унăн сăнарне уçса пама, халăх чĕрине тыткăнлама çăмăлах мар. Çамрăк пулин те Саша çакна питĕ лайăх ăнланать:

— Çĕршывсене вĕçнĕ пулăттăм, çынсене курнă пулăттăм, — тет пĕчĕк Çпиритун. Саша Çпиркка рольне куççуль тухмалла вылять, Чăвашсен асаплă та хĕн-хурлă пурнăçĕ куç умне тухса тăрать...

Спектакльте М.Б. Ягунов, Н.В. Ядыков, Л.Е. Аргандеева, В.В.Фомин вĕрентекенсен сăнар калăплас ăсталăхĕ пысăк пулнине палăртмалла. М. Митрофанов (5 класс), В. Шикшина (7 класс), Н. Александрова (9 класс) çамрăк артистсем те хăйсен сăнарĕсене юратса выляççĕ»[197].

«Декабрĕн 17-мĕшĕнче гуманитари наукисен институчĕн наука конференцийĕ пулса иртрĕ. Унта республикăри сумлă ученăйсем хутшăнчĕç.

Декабрĕн 19-мĕшĕнче çулçӳревпе сервисăн Чăваш патшалăх институтĕнче наука симпозиумĕ уçăлчĕ тата ĕçлерĕ. Наукăпа пултарулăх интеллигенцине, Чăваш республикинчи студентсемпе шкул коллективĕсене, çавăн пекех С.Яндуш пултарулăхне тĕпчекен Мари Республикин ученăйĕсене те унта чĕннĕ. Шкул ачисен тата профессиллĕ артистсен номерĕсем пĕтĕмĕшле симпозиум ĕçне илем кӳчĕç.

Декабрĕн 20-мĕшĕнче Чăваш Патшалăх педагогика институтĕнче наука конференцийĕ интереслĕ иртрĕ. Преподавательсемсĕр пуçне студентсем хăйсем те унта активлă хутшăнчĕç. Çамрăксем наци проблемисене татса панă çĕре, акă, сăмахран, С.Яндуш ятне çĕнĕрен чĕртнĕ çĕре активлă хутшăнни çак мероприяти пĕлтерĕшне татах ӳстерчĕ. Апла пулсан пирĕн наци малашлăхĕ те çук мар.

Çавăн пекех декабрĕн 20-мĕшĕнче Чăваш патшалăх университечĕн машиностроени факультетĕнче Яндуш вулавĕсем иртрĕç. Лекцие гуманитари наукисен Чăваш патшалăх институчĕн ученăйĕ Г.Б.Матвеев вуларĕ.

Чăваш çĕрĕн мухтавлă ывăлĕн Спиридон Яндушăн 175 çулхи юбилейне халалласа ирттернĕ мероприятисен итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май çакна каламалла. Пур çĕрте те Юнкă ялĕнче çĕнĕ шкул тума кирли пирки сĕнӳсем пулчĕç. Хальхи шкул çурчĕ тахçанах юрăхсăра тухнă. Çавна май ку тĕлĕшпе пулăшу ыйтса Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров патне çыру та ăсатнă» (1996)[198].

Федор Яковлевич Яндушкин Шупашкарта Спиридон Яндуш ячĕллĕ урам пирки 1996 ç. хумханса калаçнинчен: «Янтуш — Спиридонăн мăн аслашшĕ. Унăн ывăлĕ — Семен, Семен ывăлĕ — Михаил. Михаил Семенович — Спиридонăн ашшĕ. Спиридон çемйинче 5 ача пулнă: чи асли — Дмитрий, вăталăхри — Григорий, Спиркка — виççĕмĕш ача, унăн Микулапа Илюк шăллĕсем пулнă. Дмитрий мăнукĕ Николай Иванович чылай хушă Юнкă шкулĕн директорĕ пулса ĕçленĕ. Спиридонăн хăйĕн ачисем пулман. Ун пиччĕшĕ — Григорий манăн мăн асатте пулать.

Шел пулин те, Спиридон Михайловича хăй вăхăтĕнче начар пĕлнĕ, чăвашпа çармăс халăхĕсемшĕн тунă паха ĕçсене, тĕпчевĕсене тивĕçлипе пĕлмен, хакламан. Килтисем те ăна хисеплесех кайман, ун ĕçне ăнланман. Ашшĕ-амăшĕ Спиридона вулăсра çыруçăра ĕçлеттересшĕн пулнă, киле пулăшу пултăр тенĕ, анчах вăл тăван çемьерен аякра — Чикмере пурăннă.



Çамрăксем несĕлсен ĕмĕчĕсене пурнăçлама хатĕр. Чалăм-хола, 16.06.2005.

Спиридон Михайлов ятне сыхласа хӑварас тесе эпир темиҫе ҫул каяллах Шупашкарӑн пӗр-пӗр урамне унӑн ятне партарас тесеччӗ. Ю. Сементер сӑвӑҫ та С. Михайлов ячӗпе шутлӑ урам ҫукки ҫинчен ҫырнӑччӗ. Чылай вӑхӑт иртнӗ хыҫҫӑн ӗҫе пурнӑҫларӗҫ курӑнать, анчах ҫиелтен ҫеҫ. Ку урам питӗ хисепсӗр вырнаҫнӑ, ҫитменнине тата виҫӗ ҫуртран ҫеҫ тӑрать. Камран ыйтатӑп — ку урам пуррине никам та пӗлмест. Чикме хулипе танлаштарсан чӑвашсен пӗрремӗш ҫыравҫине, тӗпчевҫине Шупашкарта хисеплеменни куҫ кӗретех. Чикме хулинче С. Михайлов урамӗ тирпейлӗ, хисеплӗ вырӑнта вырнаҫнӑ тата питӗ вӑрӑм.

Краеведени музейӗнче С. Михайлов ҫыравҫӑн кӗтесне уҫас тесе тӑрӑшрӑмӑр, темшӗн каллех май килмерӗ» [199].

Янтушсен хиселлӗ тӑхӑмӗн сӑмахӗсем ҫумне ҫакна хушма пулать. Шупашкарти пӗр ҫурт ҫинче «Урам ятне чӑвашсен пӗрремӗш ӑслӑлӑхҫӑ-историкӗ, этнографӗ, географӗ, фольклорисчӗ тата писателӗ чӑвашпа мари тата вырӑс халӑхӗсен тӗпчевҫи пулнӑ Спиридон Михайлович Михайлова (1821—1861) хиселлесе панӑ» тесе ҫырнӑ мрамор плита пур. Анчах ӑна Анисимов урамӗнчи 2-мӗш ҫурт ҫине вырнаҫтарнӑ теме пулать[200]. «Ул. Спиридона Михайлова» текен вывеска вара хирӗҫ вырнаҫнӑ номерсӗр икӗ ҫурт ҫинче пур, вӗсемех Московски проспектри 19-мӗш ҫуртсем — 2-мӗш корпусра ЧПУ-н машфакӗ (корпус Т), 3-мӗш корпусра 7-мӗш общежитийӗ вырнаҫнӑ.

«Пӗрремӗш чӑваш таврапӗлӳҫи Спиридон Михайлович Яндуш ҫуралнӑранпа 180 ҫул ҫитнӗ май шкул ачисем валли ноябрь-декабрьте ятарлӑ уйӑхлӑх ирттереҫҫӗ. Ҫак хушӑра ачасем хӑйсем енчен чӑвашсен пӗрремӗш таврапӗлӳҫин, ҫыравҫин, тӗпчевҫӗ-этнографӗн, историкӗн портретне (сӑнне) калӑплассипе ӗҫлеҫҫӗ (кирек мӗнле ӳнер мелӗпе те юрать). Тепӗр ачасем вара паллӑ ентешӗн кунҫулӗпе, тӑван енӗпе, ӑраттипе, ӗҫӗ-хӗлӗпе, пултарулӑхӗпе тӗллевлӗ сочиненисем ҫыраҫҫӗ, калӑпӑшӗ 8 хутламран (лист) мала мар, автортан хушнӑ шухӑшсем, ӳкерчӗк-фотографисем, схемӑсем пулсан, аванрах пулать. Ӗҫсене А4 форматлӑ хут ҫине тумалла.

Ҫавнашкалах ҫак вӑхӑтра вӗрентекенсем тата ыттисем валли те ҫак рубрикӑпах конкурс ирттереҫҫӗ. Унта ӗҫлеме ҫак темӑсене сӗнетпӗр: 1) хӑвӑр шкул таврашӗнчи е ял администрацийӗнчи истори, ҫутҫанталӑк, этнографи, ӳнер палӑкӗсем; 2) пӗр-пӗр ял, шкул, колхоз-предприяти кунҫулӗ; 3) ҫывӑхри ҫӑва ҫинче экскурси ирттерес пулсан кам ҫинчен, мӗнле ӗҫсем ҫинчен каласа парӑттӑр; 4) шкулти, колхозри, клубри музей, аваллӑх пӳлӗмӗ (кӗтесӗ) материалӗсене тишкерни.



2001 ç.
Полтран-пасарĕн
саманчĕсем.



Аслисем çырнă ĕç калăпăшĕ 30 хутламран мала пулмалла мар, ăна реферат евĕр А4 форматлă хут çине тумалла, сăнӳкерчĕксемпе, карттă-схемăсемпе çирĕплетмелле.

Пур категорири çĕнтерӳçĕсене укçан тата хаклă кĕнекесемпе чыс-сум тăваççĕ. Вĕсене Юнкăра кăçалхи декабрĕн 19-мĕшĕнче палăртаççĕ.

Конкурс ирттерекенсем: Шупашкарти çулçӳревпе сервис институчĕ (А.С. Никитин), районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат (А.И.Тихонов), районти тăван ен культурине вĕрентекенсен методика пĕрлешĕвĕ (Е.Е. Ерагин).

Ĕçсене кăçалхи декабрĕн 11-мĕшĕччен райхаçат редакцине çитермелле, вĕсене каялла тавăрмаççĕ» (2001)[201].

1960 çç. Спиридон Яндуш ятне тивĕçлипе аса илме пуçласан, унăн Полтран пасарĕ пирки çырнă статйипе хавхаланса, Çичтўпе вăрманне каллех пухăнма пуçлаççĕ. Вăл виçĕ район: Муркаш, Етĕрне тата Туçиçармăс пĕрлешнĕ çĕрте, Юнкă хĕрринче. Ватăсем кăтартнă уçланкă вăрманланнăран унăн айккине пуçтарăнаççĕ. Кунти пухха революциченех чиркў çыннисем чарнă пулнăмĕн. Пуçаруçи Паратмар шкулĕнчи (Туçиçармăс районĕ) учитель В.В. Виноградов пулнă. Вăл йĕркеленипе кунта Муркаш районĕнчи Мăн Хораçка, Мăн Сĕнтĕр тата Туçиçармăс районĕнчи Вилоknown ват, Паратмар, Кожваш, Кожважвуй (Михаткино) шкулĕсем ачисене илсе пухнă, ĕлĕкхи туслăха тепĕр хут аса илтернĕ. 1970—1980 çç. парти органĕсем ку мероприятисене кăмăлласах кайманнипе пухăнма май килмен. Ун чух юлашки пуххи 18.05.1972 пулнăччĕ.

Тепĕр хут Полтран пасарне Мăн Хораçкари аслă вожатăй Р.В. Прокопьева тата Паратмарти унăн коллеги В.Л. Короткова çине тăнипе 1990 çç. пуçламăшĕнче пуçтарăнма пуçлаççĕ. Халĕ çулленех кунта икĕ халăхăн çамрăк ăрăвĕ пухăнать[202].

Кашни çул тенĕ пекех ăсчахсем, Муркаш районĕнчи вĕрентекенсем, С.М.Яндуш йĕрĕсемпе Чикмене çулçўреве тухаççĕ. Маршрутра пĕтĕмĕшле Мăн Сĕнтĕр ялĕ, Çичтўпе вăрманĕ, Ча-



Ватасаттесем çĕршыва хўтĕлесе юн юхтарнă вырăнта Муркаш районĕнчи учительсем. Чалăм-хола, 10.10.2001



Чăвашпа çармăс мăчаварĕсем Чалăм-холана хӳтĕлесе вилнисене асăнаççĕ. 2005 ç. аслă çимĕк.

лăмхола вырăнĕ, Виловат шкулĕ, Чикмери музейсемпе историллĕ вырăнсем. Çулçӳрев программинче историпе археологи объекчĕсемпе паллашнисĕр пуçне кӳршĕ халăхăн хальхи культурипе паллашни те, туслă çыхăнăва малалла аталантарасси те пысăк вырăн йышăнать[203]. Юлашки çулсенче тата Чалăмхолара хулана хӳтĕлесе вилнисене асăнса икĕ халăх ваттисем ятарлă асăну ирттереççĕ[204].

Кăçалхи çул пуçламăшĕнчех пĕрремĕш таврапĕлӳçĕ, тĕлĕнмелле пултаруллă çын çуралнăранпа 185 çул çитнине хатĕрленме тытăнтăмăр. Çак пуçару Янтуш тăхăмĕсет уйрăмах хавхалантарчĕ. Вĕсем тепĕр хут ялйыш пурнăçне, хăйсен килĕсенчи ăратă йывăçне тишкерме, ашшĕ-ватаслашшĕсене аса илме, тăванлăх сыпăкĕсене шутлама пуçларĕç. Вĕсенчен пĕри паллă несĕлĕ пекех тĕлĕнмелле пултаруллă та хастар ырă ĕçлĕ çын Александр Матвеевич Яндушкин, 1969 ç.ç., вара юнкăпуçсем ячĕпе С.М.Яндуш палăкне (проект авторĕ: Е.Е.Ерагин) лартма шутларĕ. Пархатарлă ĕçшĕн вăл вăхăтне те, нухратне те шеллемерĕ. Асăм юпи вырăнне те вăл урамра, паллă çын çуралса ӳснĕ кил тĕлне, пиччĕш-мучăшĕсем ун ячĕпе çитĕнтернĕ паркпа юнашар суйласа илнĕ. Историллĕ ку пулăма (палăк пирки 20—25 çул каяллах сăмах пуçарнăччĕ[205]) ялйыш та ăнланчĕ. Юнкăпуç ял пуçĕ Васи-

С.М Яндуш палăкĕн тĕпне çеклени. 26.11.2006.





Палăка вырнаçтарни. 3.12. 2006.

лий Митрофанович Илугин, Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Васильевич Ермаков, Юрий Егорович Яндушкин, Владимир Николаевич Яндушкин, Александр Николаевич Суворов, Николай Геннадьевич Суворов т. ыт. те Александр Матвеевича пулăшма васкарĕç, кăçал кая юлнă йĕпе-сапа вăхăтĕнчех никĕстĕпне туса, юлашки ĕçсене пурнăçласа палăка вырнаçтарса лартрĕç.

# АСĂРХАТТАРУСЕМ

[1] ГИА ЧР (Чăваш республикин патшалăх истори архивĕ), ф. 45, оп. I, д. 260, л. 297; Моргаушский район: краткая энциклопедия, Чебоксары, 2002 (малалла Муркаш энциклопедийĕ). С. 158—159.

[2] Галкин И.С. Тайны марийской топонимики. Йошкар-Ола, 1985. С. 88; Галкин И.С. Кто и почему так назвал. Йошкар-Ола, 1991. С. 146—147.

[3] Турхан К.С. Сĕве Атăла юхса кĕрет. 3 кĕнеке. Шупашкар, 1976. С. 309.

[4] Михайлов С.М. Труды по этнографии и истории русского, чувашского и марийского народов. Чебоксары, 1972 (малалла: Труды). С. 47; Юнкăпуçри 1924 çç. Иван Алексеевич Васюхинпа 14.10.1996 (малалла Васюхин И.А.) калаçнă тăрăх.

[5] НА ЧГИГН (гуманитарии ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕ), отд. II, ед. хр. 477, лл. 1—12.

[6] УЗ ЧНИИ. Вып. XIX. Вопросы археологии и истории Чувашии. Чебоксары, 1960. С. 5, 49—50.

[7] Труды. С. 28; Чăваш наци музейĕн фондсен пайĕ: «Отчет о работах чувашской археологической экспедиции за 1957 год», лл. 20—26, 36; УЗ ЧНИИ. Вып. XIX. Вопросы археологии и истории Чувашии. Чебоксары, 1960. С. 65—66.

[8] НА ЧГИГН, отд. I, ед. хр. 618, л. 85.

[9] Труды. С. 28—30, 366.

[10] Труды. С. 28—29.

[11] Васюхин И.А.

[12] Çавăнтах.

[13] «Çĕнтерӳ ялавĕ» (ЧР Муркаш район хаçачĕ), 20, 22.08.1992. (Риккассинчи Илья Михайлович Михайлов, 1888—1971, 1956 ç. каланă тăрăх Андрей Алексеев çырнă).

[14] Яндушкин В.А. (1926 ç.ç., 7.10.1996 каланă), Васюхин И.А., Яндушкина Л.С. (Карамалькассинче 1925 ç.ç., 3.12.2006 каланă) т. ыт. те каланă тăрăх.

[15] Çавăнтах.

[16] НА ЧГИГН, отд. I, ед .хр. 618, л. 85.

[17] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI том. II пайĕ. Мифсемпе халапсем. Шупашкар, 1987. С. 380 (1970 ç. Ф.М. Яндушкин каласа панă тăрăх).

[18] Труды. С. 60.

[19] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 20. 06. 1996.

[20] ГИА ЧР, ф. 45, оп. 1, д. 260, лл. 219—221.

[21] Нестеров В.А. Населенные пункты Чувашской АССР. 1917—1981 годы. Чебоксары, 1981.

[22] Димитриев В.Д. Чувашские материнские селения. Чебоксары: ЧГИГН, 2006. С 14; ИОАИЭ. Т. XVIII. Вып. 1—6. Казань, 1908. С. 293.

[23] Димитриев В.Д. Чувашские исторические предания. Чебоксары, 1993. С. 136.

[24] СНМ — 1859.

[25] Богословский Г.К. Справочная книга для Казанской епархии. Казань, 1899. С. 288.

[26] Список селений Казанской губернии. Выпуск 9. Козьмодемьянский уезд. Казань, 1913.

[27] А.Ч.С.С.Р. в цифрах. 1920—1924. Чебоксары, 1925. С. 108—110.

[28] Население Чувашской АССР по материалам переписи 1926 года. Чебоксары, 1927. С. 5—7.

[29] НА ЧГИГН, отд. I, ед. хр. 618, л. 85.

[30] Муркаш РСУ материалĕсем тăрăх, 17. 04. 1985 çырса илнĕ.

[31] Муркаш энциклопедийĕ. С. 159.

[32] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 20.07.2002.

[33] Муркаш райархивĕ, ф. 76, д. 2, лл. 7—10.

[34] Çавăнтах, л. 11.

[35] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 12.07.1990.

[36] Крестьянская война под предводительством Емельяна Пугачева в Чувашии. Сборник документов. Чебоксары, 1971. С. 392—394, 413—416.

[37] Çавăнтах. С. 413—416.

[38] Ку статья «Казанские губернские ведомости» хаçатăн 1860 ç. 28-мĕш номерĕнче пĕрремĕш хут пичетленнĕ. Хамăрăн куçарни «Çĕнтерӳ ялавĕнче», 14.11.1996, тухнă. С.М. Яндуш ĕçĕсене чăвашла куçарассине уйрăмах Г.В. Лукоянов (тĕслĕхрен, «Çĕнтерӳ ялавĕн» 1984 ç. куçарăвĕсем), Г.Ф. Юмарт (тĕслĕхрен «Чăвашъен», 28.12.1996), В.П. Станъял (тĕслĕхрен, шкул вулантăкĕсенче), В.Г.Родионов (тĕслĕхрен, «Хыпар», кăларăмĕ, 14.12.1996) т. ыт. ăсчахсем тимленĕ.

[39] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 23.02.1974 (Максим Исаев ялкор çырнă тăрăх).

[40] Страницы немеркнущей славы. Чебоксары, 1995. С. 468; «Хыпар», 8.05.1999.

[41] Страницы немеркнущей славы. Чебоксары, 1995. С. 143—144; «Хыпар», 8.05.1999 (Чăвашъен тĕп архивĕн специалисчĕ Валентина Питернова хатĕрленĕ тăрăх).

[42] Страницы немеркнущей славы. Чебоксары, 1995. С. 468; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 6.05.1995.

[43] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 6.05.1995 (Çырусене пичете Валентина Питернова хатĕрленĕ).

[44] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 27.08.1996; «Чăвашъен», 7.12.1996; Страницы немеркнущей славы. Чебоксары, 1995. С. 449.

[45] «Советская Чувашия», 20.09.1983; «Тантăш», 20.12.1996; «На экранах Чувашии», 1990, №№ 2—6.

[46] «Молодой коммунист», 21.09.1985; Страницы немеркнущей славы. Чебоксары, 1995. С. 265—269; «Чăвашӳен», 7.12.1996.

[47] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 6.01.2004.

[48] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 19.01.2005, 6.05.2006. Васюхин И.А. пирки тата çырнă: «Советская Чувашия», 22.12.1993; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 18.04.1995, 22.04.1995, 8.05.1996; Боевой путь 58-й стрелковой дивизии. М., 1995. С. 79.

[49] Астăвăм — Память. Часть 2. Т. 1. Чебоксары, 2003. С. 340.

[50] Астăвăм — Память. Т. 5. Чебоксары, 1999. С. 584—585; Астăвăм — Память. Часть 2, Т. 1. Чебоксары, 2003. С. 339, 341. Асăннă кĕнекесене вăрçă умĕн ялтан тухса кайнисем, урăх çĕртен çара илнипе пулĕ, лекеймен. Списоксенче вăрçă хыççăн Юнкăпуçра тĕпленнисем те пур.

[51] «Молодой коммунист», 4.09.1957.

[52] ЦГАОО ЧР (обществăлла организацисен архивĕ), ф. 99, оп. 1, д. 163, лл. 94, 96, 99; д. 253, л. 30.

[53] Çавăнтах, д. 163, лл. 10, 13.

[54] Çавăнтах, д. 304, л. 53.

[55] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 31.10.1978.

[56] Çавăнтах, 28.10.1978.

[57] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 1, 3.12.1987; Васюхин И.А.

[58] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 10.12.1987.

59 «Коммунизм ялавĕ», 13.05.1989.

[60] «Хыпар», 11.06.1992 (Юрий Михайлов журналист çырнă тăрăх).

[61] ГИА ЧР, ф. Р—1021, оп. 1, д. 29, л. 205 (вулама çăмăл пултăр тесе ыйту текстне кăштах якатнă).

[62] Çавăнтах.

[63] Çавăнтах.

[64] Муркаш энциклопедийě. С. 126.

[65] Районы Чувашской АССР за 1935 год. Экономико-статистический справочник. Чебоксары, 1936. С. 213.

[66] «Çěнтерÿ ялавě», 15.02.1986.

[67] Çавăнтах.

[68] Ерагин Е.Е. Моргаушский край. Моргауши, 1994. С. 72—73.

[69] «Çěнтерÿ ялавě», 1.03.2003, 3.03.2004, 6.10.2004, 3.06.2006.

[70] Муркаш райархивě, ф. 76 ,оп. 1, д. 2, лл. 3—5.

[71] Çавăнтах, лл. 5—6.

[72] Çавăнтах, лл. 24—26.

[73] Çавăнтах, лл. 30—33.

[74] Çавăнтах, д. 23, лл. 1—2.

[75] Çавăнтах, лл. 17—18.

[76] Çавăнтах, лл. 21—23.

[77] Çавăнтах, л. 23.

[78] Çавăнтах, л. 25.

[79] ГИА ЧР, ф. 45, оп. 1, д. 260, лл. 224—226.

[80] Районы Чувашской АССР за 1935 год. Экономико-статистический справочник. Чебоксары, 1936. С. 189.

[81] Ерагин Е.Е. Моргаушский район. Моргауши, 1994. С. 74; «Çěнтерÿ ялавě», 27.04.1976, 22.06.1999.

[82] «Çěнтерÿ ялавě», 22.05.1999; Муркаш энциклопедийě. С. 163.

[83] Ку пая калăплама эпир пěтěмěшле ăратăри чи паллă çын С.М. Яндуш çырнисемпе усă куратпăр. Тăванěсем, несěлěсен асăмě, ялйыш, тěрлě пěлěшěсем унăн пултарулăхне самаях витернě. Çавăнпа та пуль вăл вěсем çинчен хăйěн хайлавěсенче тăтăшах асăнать. Хальхи вăхăтра Юнкăпусěнче тата ытти нумай-нумай вырăнсенче Янтушăн хăйěн тата аслашшě-ватмаçакěн тăванěсем йышлăн пурăнççě. Вěсенчен чылайăшě Яндушкин хушаматпа çÿрет. Вăл çырнисěр тата ун çинчен çырнă ěçсемсěр пуçне çак йăхри Яндушкин Яков Герасимович (1954 ç. в.), Михайлов (Яндушкин) Иосиф Михайлович (1914—1992), Суворов (Яндушкин) Николай Иванович (1919—1972) тата ыттисем асаилěвěсемпе асăрхаттарăвěсемпе усă куртăмăр. Очеркăн малтанхи варианчěсем «Çěнтерÿ ялавěнче», 1984, 103—109 №№; «Тăван Атăлта», 1986, 11 № 60—63 с., «Хыпарта» 3—5.12.1996, пичетленнě.

[84] Труды. С. 27, 116.

[85] УЗ ЧНИИ. Исследования по истории Чувашии периода феодализма. Чебоксары, 1986 («НА ЧГИГН, отд. II, ед. хр. 1047, л. 67» тăрăх).

[86] УЗ ЧНИИ. Вып. VI, с. 285.

[87] Труды, с. 349.

[88] Çавăнтах, с. 116.

[89] Çавăнтах, с. 367.

[90] Çавăнтах, с. 30—31.

[91] Васюхин И.А.

[92] Труды. С. 349.

[93] Кузнецов И.Д. Очерки по истории чувашского крестьянства. Чебоксары, 1957. С. 134 («ЦГАДА, Ядринские акты, № 693» тăрăх).

[94] Çавăнтах, с. 142—143.
[95] Труды, с. 28.
[96] Çавăнтах, с. 349
[97] Çавăнтах, с. 28
[98] УЗ ЧНИИ. Вып. □´, с. 235, 257.
[99] Труды, с. 326.
[100] Çавăнтах, с. 394.
[101] Çавăнтах, с. 349, 394.
[102] Çавăнтах, с. 395.
[103] Çавăнтах, с. 394.
[104] Григорьев П.Г. Спиридон Михайлович Михайлов. Шупашкар, 1960 (малалла: Григорьев П.Г.), с. 11.
[105] Труды, с. 359.
[106] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 1972, 5 №.
[107] Труды, с. 349; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 1972, 5 №; Григорьев П.Г., с. 12, 18, 19.
[108] Труды, с. 396.
[109] Çавăнтах, с. 45—69.
[110] Çавăнтах, с. 49.
[111] Муркаш районĕнчи Кăмăркассинчи Петрова Мария Григорьевна, 1908 çç., 5.04.1984 каланă тăрăх
[112] УЗ ЧНИИ. Вып. ´□, с. 233, 244.
[113] Труды, с. 383.
[114] Çавăнтах, с. 359.
[115] Çавăнтах, с. 395.
[116] Çавăнтах, с. 394.
[117] Çавăнтах, с. 327.
[118] Труды, с. 359; УЗ ЧНИИ. Вып. IV, с. 244; Григорьев П.Г., с. 11.
[119] Труды, с. 394.
[120] Çавăнтах, с. 350.
[121] Çавăнтах, с. 60—61.
[122] Çавăнтах, с. 235.
[123] Çавăнтах, с. 350.
[124] Çавăнтах, с. 372.
[125] Çавăнтах, с. 353.
[126] Ку сыпăка эпир маларах пичетленĕччĕ: «Çĕнтерӳ ялавĕ», 31.10.1996.
[127] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 27.08.1996 (Нина Балкова çырнă тăрăх).
[128] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 2.11.1996 (Мăн Хораçкари Степан Федорович Романов учитель-пенсионер çырнă тăрăх).
[129] Яндушкина Елена Терентьевна (Ситуккассинче 1926 ç.ç., 1951 çултанпа Юнкăпусĕнче) 26.11.2006 калант тăрăх.
[130] Çавăнтах.
[131] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 23.10.1990 (ГИА ЧР материалĕсем тăрăх).
[132] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 16.05.1989 (Захар Яндушкин çырнă тăрăх).
[133] НА ЧГИГН, отд. II, ед. хр. 477, лл. 1—3.
[134] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 23.04.1991 (ывăлĕ Захар Яндушкин çырнă тăрăх).
[135] Егоров Д.Е. История чувашской школы. Чебоксары, 1998; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 10.02.1998; Муркаш энциклопедийĕ, с. 45.
[136] Кĕнеке летописçĕ. 1918—1928. Шупашкар, 1960. С. 57, 58, 62.
[137] Кĕнеке летописçĕ. 1929—1938. Шупашкар, 1964. С. 171, 190.
[138] Чăваш АССР-ĕнче тухнă кĕнекесем. 1951—1960. Шупашкар, 1985. С. 46, 56, 57.

[139] Чăваш АССР-ĕнче тухнă кĕнекесем. 1961—1970. Шупашкар, 1986. С. 40.

[140] Михайлов Иосиф Михайлович (1914 ç.ç.) 31.05.1990 каланă тăрăх; «Хыпар», 5.12.1996.

[141] История Чувашской республики (1975—1990). Библиографический указатель. Чебоксары, 1996. С. 197.

[142] Кĕнеке летописçĕ. 1918—1928. Шупашкар, 1960. С. 44.

[143] Чăваш АССР-ĕнче тухнă кĕнекесем. 1951—1960. Шупашкар, 1985. С. 15; К.Н. Яндушкин 14.02.1997 Севастопольтен (ул. Гоголя, 36—25; тел. 44-30-66) автор патне çырнинчен.

[144] Муркаш энциклопедийĕ, с. 163; ывăлĕ Яндушкин Андрей Захарович, 1968 çç., 3.12.2006 каланă тăрăх.

[145] Муркаш энциклопедийĕ, с. 46.

[146] Çавăнтах, с. 146.

[147] «Çĕнтерӳ ялавĕ» (Галина Сугутская çырнă тăрăх); «Хыпар», 25.06.1992, 15.10.1992, 17.12.1992 (Владимир Рыбкин журналист çырнă тăрăх); «Хресчен сасси», 12.04.1996.

[148] Ку сыпăкăн малтанхи варианчĕ «Хыпарта», 3.12.1996, пичетленĕ.

[149] Васин К.К. Творческое наследие С.М. Михайлова и марийская литература // С.М. Михайлов — первый чувашский этнограф, историк и писатель. Чебоксары, 1973. С. 84—85.

[150] Çавăнтах.

[151] Çавăнтах.

[152] Григорьев П.Г., с. 23, 54. Ку кĕнеке авторĕ (1897—1973) чăвашсен паллă историкĕ, 1940—1957 çç. Чăваш ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн директорĕ пулнă, Муркаш районĕнчи Кĕртекасси-Янасалта çуралса ӳснĕ, Шупашкарти Яндушкинсемпе туслă çыхăнура пулнă.

[153] УЗ ЧНИИ. Вып. IV. Чебоксары, 1950. С. 244.

[154] Кун пирки тата С.М. Яндушпа В.П. Громов ĕçлĕ çыхăнăвĕсем пирки чăваш чĕлхи кунçулĕн паллă тĕпчевçи, орфографи словарĕн авторĕ Андрей Алексеевич Алексеев (1934—2005, Муркаш районĕн Рикккасси-Эчкерентен) чылай çырнăччĕ (тĕслĕхрен, «Илем», 25.11.1993; «Хыпар», 24.03.1994, 6.05.1997, т. ыт. те).

[155] «Хыпар», 12.11.1996.

[156] Григорьев П.Г., с. 19.

[157] Труды. С. 349.

[158] Егоров Д.Е., с. 9.

[159] Труды. С. 352.

[160] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 1966, 148 №.

[161] Труды. С. 349, 351, 353.

[162] ГИА ЧР, ф. 81, оп. 1, д. 406, с. 29.

[163] Труды. С. 355.

[164] УЗ ЧНИИ. Вып. IV, с. 233, 234, 250.

[165] Труды. С. 355, 395.

[166] Çавăнтах, с. 396.

[167] Çавăнтах, с. 339.

[168] Çавăнтах, с. 343.

[169] Çавăнтах, с. 342.

[170] Çавăнтах, с. 344.

[171] Çавăнтах, с. 345.

[172] Çавăнтах, с. 342.

[173] Çавăнтах, с. 396.

[174] Çавăнтах, с. 343.
[175] УЗ ЧНИИ. Вып. IV, с. 233.
[176] Труды. С. 344—345.
[177] Çавăнтах, с. 339—345.
[178] Çавăнтах, с. 342.
[179] УЗ ЧНИИ. Вып. IV, с. 244.
[180] Труды. С. 396.
[181] Григорьев П.Г., с. 20.
[181a] Михайлов С.М. Собрание сочинений. Чебоксары, 2004. С. 502—503.
[182] Труды. С. 396.
[183] Çавăнтах, с. 395.
[184] «Советская Чувашия», 13.01.2004; «Хыпар», 1.07.2004.
[185] Малтанхи варианчĕ «Тăван Атăлта», 1986, 11 №, «Хыпарта», 5.12.1996, пичетленнĕ. С.М. Яндушăн çутĕç историйĕнчи пĕлтерĕшĕ пирки малтанхи сăмаха пултаруллă педагог Дмитрий Егорович Егоров доцент каланă.
[186] Егоров Д.Е., 28 с.; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 17.04.1969.
[187] «Хыпар», 12.11.1996; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 17.04.1969.
[188] Егоров Д.Е., 36 с.; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 1972, 5 №; «Советская Чувашия», 27.12.1981.
[189] Вишневский В.П. Письменная культура раннего просветительства. Чебоксары: Изд. ЧГУ, 2004. С. 19—37.
[190] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 17.04.1969 (РФ тата ЧР тава тивĕçлĕ учителĕ Михаил Яковлевич Гаврилов, Юнкăра 1924 ç.ç., çырнă тăрăх).
[191] Çавăнтах.
[192] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 1972, 5 №.
[193] Труды. С. 94—96.
[194] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 17.04.1969.
[195] Çавăнтах, 30.12.1986 (Л. Никольская çырнă тăрăх).
[196] Çавăнтах, 7.12.1996 (А. Чернова çырнă тăрăх). Кун пирки тата: «Çĕнтерӳ ялавĕ», 26.11.1996, 30.11.1996, 10.12.1996, 11.01.1997; «Хыпар», 30.11.1996, 4.12.1996, 14.12.1996; «Хресчен сасси», 6.12.1996; «Чăвашъен», 14.12.1996; «Тантăш», 20.12.1996. 17.01.1997.
[197] «Тантăш», 17.01.1997, «Хыпар», 30.11.1996 (О. Сюзюкина тата Л. Глухова çырнисем тăрăх).
[198] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 11.01.1997, «Чебоксарские новости», 19.12.1996 (О. Сафонова çырнă тăрăх); «Хыпар», 20.12.1996 (Л. Филиппова çырнă тăрăх).
[199] «Тантăш», 20.12.1996.
[200] Ку пирки «Коммунизм ялавĕ», 5.02.1985, те çырнăччĕ.
[201] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 6.11.2001 (конкурса Е.Е. Ерагин йĕркеленĕ).
[202] Мăн Хураçка шкул учительници Валентина Денисовна Матюкова 11.12.2006 каланă тăрăх.
[203] «Çĕнтерӳ ялавĕ», 16.11.1996, 27.10.2004; «Чăваш тĕнчи», 2004, декабрь.
[204] «Çамрăксен хаçачĕ», 12.11.2004; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 27.10.2004; «Чăваш тĕнчи», 6 №, 2.02.2006.
[205] Тĕслĕхрен: «Коммунизм ялавĕ», 5.02.10985; «Çĕнтерӳ ялавĕ», 7.12.1996, т. ыт. те.

Çавнашкалах Иосиф Михайлович Михайлов, 1914 ç.ç., 18.01.1985, 2.11.1987, 31.05.1999, Илларион Васильевич Васильев, 1920 ç.ç., 1.11.1986, Елена Терентьевна Яндушкина, 1926 ç.ç., 26.11.2006, Леонид Иванович Яндушкин, 1939 ç.ç., 14.10.1996, Куликова Мария Алексеевна, 1927 ç.ç., 26.11.2006, Яндушкин Василий Яковлевич, 1930 ç.ç., 26.11.2006 т. ыт. асăрхаттарăвĕсемпе усă курнă.

## ТУПМАЛЛИ

Юнкă тата Юнкăпоç ялĕ ........................................ 3
Юнкăпуçсем 1774 çулта ........................................ 22
Юнкăпоçсем 1941–1945 çулсенче ........................................ 25
Юнкăпоç колхоз. ........................................ 46
МСО ........................................ 67
Янтуш ăратти ........................................ 72
Юнкăпоç çыннисем ........................................ 90
Юнкăпоç ялне çĕкленĕ çын ........................................ 102
С.М.Яндуш тусĕсем, хунькассийĕ, сăнĕ ........................................ 109
Этнопедагогика никĕсне хывни ........................................ 118
Спиридон Яндуш пултарулăхĕн ахрăмĕ ........................................ 123
Асăрхаттарусем ........................................ 137

Библиотека Чувашской народной академии

Серия «Мастера чувашской культуры»

**Евгений Евстафьевич**
**ЕРАГИН**

# ЮНГАПОСИ И СПИРИДОН ЯНДУШ

На чувашском языке

Научный редактор *Матвеев Г.Б.*
Художественный редактор *Иванова И.Е.*
Технический редактор *Сорокин А.В.*
Корректор *Иванова Г.Ф.*
Верстка *Михайловой И.О.*

Оригинал-макет типографии «Новое время»

Подписано к печати 20.12.2006.
Формат 60х84/16. Бумага офсетная.
Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 9. Тираж 500 экз. Заказ № 167.

Отпечатано в типографии «Новое время».
428034, г.Чебоксары, ул.М.Павлова, 50/1. Тел.: (8352) 41-27-98.



Тевел I Петр патшапа Азов çарçӳревĕнче, 1696 ç.

Полтран пасарĕ, 28.05.2004



Юнкăпоççем С.М.Яндуш палăкне сăваплаççĕ, 03.12.2006. Алтăрпа А.М.Яндушкин тăрать

